Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

П. Коваленко.

# ПОЛИТКРАМОТА КĔНЕКИ

(КНИЖКА ПОЛИТГРАМОТЫ).

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

Ҫеркей Хĕветĕрĕ куҫарнă.

Хакĕ—ылтăнпа 20 пус.

Р. К. П. Тĕп Комиттеҫĕ ҫумĕнҫи Ҫăваш Ҫексийĕ кăларнă.
Мускав. 1923 ҫул.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

П. Коваленко.

# ПОЛИТКРАМОТА КӖНЕКИ.

(КНИЖКА ПОЛИТГРАМОТЫ).

**НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.**

Ҫеркей Хӗветӗрӗ куҫарнӑ.

Р. К. П. Тӗп Комиттеҫӗ ҫумӗнҫи Ҫӑваш Ҫексийӗ кӑларнӑ.
Мускав. 1923 ҫул.

## УМӐН КАЛАНИ.

Ҫак «Политкрамота Кӗнеки» хаҙхи опҭӗстввӑ пурӑнӑҫӗ ҫинҭен кӗскенӗн анҭах калаҭ.

Опҭӗстввӑ мӗнле пурӑннине пӗлес тийекен ӗҫ ҫыннин ҭи малтан ҫак кӗнекене вуласа тухмалла. Ҫак кӗнекене лайӑх ӑнланса вуласа тухакан, опҭӗстввӑ ҫинҭен ытти йӑвӑртарах кӗнекесем те вулама пултарӗ, вара хаҙхи саманара пулакан ӗҫсене пурне те лайӑх ӑнласа илӗ.

Опҭӗстввӑ пурӑнӑҫне пӗлсе тӑни пролеттарисене хӑват параҭ. Ҫавӑнпа Канаш Раҫҫейӗнҭе ӑна пӗлмен ҫын пӗрре те ан пултӑр.

П. Коваленко.

Мускав.
10/X—21 ҫул.

Главлит. № 4204. Тираж 5.000 экз.

„Мосполиграф"—20 типография „Красный Пролетарий", Пименовская, ул., д. 1/16.

# КАПИТАЛИСĂМ.

Пирĕн йăх-тĕп. Çынсем йалан хаҫхи пек пурăнман. Малтан вĕсем выҫăх кĕтĕвĕ пек пурăннă. Тырă акма та, выҫăх тытма та, пӳрт тума та пĕлмен. Тусем тăрăх, айлăмсен тăрăх хăйсем ваҫҫи çимелли шыраса çӳренĕ; вакрах кайăксене çисе, шултăрисенҫен тарса пурăннă.

Ун ҫухне çынсем пăхма упăте пекех пулнă. Пĕвĕсем тĕреклĕ: аллирисем вăрăм, хулăн, вăйлă; сăмсисем пĕҫĕккĕ, ансăр; йанах шăммисем шултăра; шăлĕсем хăватлă пулнă.

Вĕсене çын теме те йураман. Çын опҫестви те ун ҫухне пулман, çын йевĕрлĕ икĕ уралă кайăк кĕтĕвĕсем анҫах пулнă. Пĕҫҫен пурăнма хăраниппе, пĕҫҫен çимелли тупма пултарайманниппе, тата ĕрҫеме анҫах вĕсем пĕр-пĕриппе пĕрлешнĕ.

Çыннăн ытти выҫăхсенҫен уйрăмĕ пĕрре анҫах: вăл ĕç хатĕрĕсем тума пĕлет. Ĕç хатĕрĕсем тума пĕлекен выҫăха çын теççĕ.

Ҫăн малтан çын ĕç хатĕрне патакпа ҫул илсе тунă. Çавăнтан вара çынсем меллĕрен меллĕ хатĕрсем шухăшласа кăларса хăйсен пурнăçне çăммăллатнăçемĕн çăмăллатса пынă. Çавăнтан вара çыннăн историйĕ пуçланса кайнă.

Çынсен опҫестви хаҫхин пек пулиҫҫен хисепсĕр нумай пин çул иртсе кайнă. Хаҫхи опҫества капиталисăмлă йе пуршуаçилĕ опҫества теççĕ.

Капиталисăмлă опҫества мĕнле опҫества? Хапрăксем, савăтсем, çĕр, çĕр айĕнҫен тĕрлĕ йапала ҫавса кăларакан вырăнсем (рутниксем, шахтăсем, кописем), ҫукун çулсем, суту-илӳ ĕçĕсем, пысăк услам паракан çавăн пек ытти йапаласем пурте халăх аллинҫе мар, пуйансен аллинҫе пулсан; çав йапаласенҫе пуйансем ытти çынсене тара тытса ĕçлеттерсен; мĕн пур усламне хăйсен кăсйине ҫиксен;—çавăн пек йĕркелĕ опҫествăна капиталисамлă опҫествă теççĕ. Услам паракан çав йапаласене пăхса тăракан çынсене капиталиссем, пуршуйсем теççĕ.

Капиталисăм йепле пулса кайнă? Капиталисăм Х-мĕш ĕмĕрте пуçланса кайнă. Темиçе çĕр, темиçе пин тарçăлă хапрăксемпе савăтсем пулиҫҫен, малтан тĕрлĕ маçтăрскисем пулнă. Маçтăрски хуçи йе хăй пĕҫҫен ĕçленĕ, йе хăй патне вĕренме кĕнĕ аҫасемпе, тата хăйне пулăшакан маçтăрпа пĕрле ĕçленĕ. Таварне сахал тунă, ăна çывăхри пасара анҫах илсе тухса сутнă.

Тавар илекенсем ун ҫухне нумай пулман, нумайӗшӗ хӑйне мӗн кирлине килте туса пурӑннӑ. Ҫавӑнпа маҫтӑрсем ҫас ҫасах таварӗсене никама та сутайман. Ун пек ҫухне маҫтӑра пит хӗн килнӗ: мӗн пур пек укҫине вӑл тавара ҫикнӗ, таварне илекен пулман, вара выҫӑ ларнӑ, мӗншӗн тесен тавара ҫиейместӗн.

Ҫавӑн пек вӑхӑтра тавара айакка кайса сутсан анҫах ӗҫе майа йама пулать. Анҫах маҫтӑр хӑйӗн таварне айакка кайса сутса ҫӳреймест: сахал таварпа айакка кайса ҫӳресен унӑн расхуҫӗ сапланаймасть, вӑхӑт та нумай сайа кайать. Тавара айакка илсе кайаса сутакансем хӑйне пулмалла. Ҫапла вара суту-илӳ тӑвакансем пулса кайнӑ. Вӗсем маҫтӑрсенҫен тавар пуҫтарнӑ та ӑна айакка кайса сутнӑ. Анҫах вӑл ӗҫе вӗсем ахаҫ туман: ыттисенни пекех, вӗсен ҫиес те пулать, тумланас та пулать. Суту-илӳ ӗҫӗнҫен вӗсем услам илнӗ.

Вӑл услама вӗсем йепле илнӗ?

Маҫтӑр ҫӗҫҫе 12 сехет ӗҫлесе тунӑ пулчӑр. Суту-илӳ тӑвакан ҫав ҫӗҫҫе илнӗ ҫухне маҫтӑра 12 сехет ӗҫленӗшӗн тӳлемест, сӑмахран каласан, 10 сехет ӗҫленӗшӗн анҫах тӳлет, маҫтӑрӑн 2 сехет ӗҫне суту-илӳ тӑвакан ҫӗҫӗпе пӗрле хӑйне илет. Вӑл ҫӗҫҫе сутнӑ ҫухне суту-илӳ тӑвакан 12 сехет ӗҫленӗ хака пӗтӗмпех илет. Ҫапла вара маҫтӑрӑн 2 сехет ӗҫленӗ хакӗ суту-илӳ тӑвакан кӑсйине кӗрет, ҫавӑнтан унӑн услам йулать.

Ҫапла ӗнтӗ, суту-илӳ тӑвакан, маҫтӑртан тавар илнӗ ҫухне, маҫтӑр ӗҫленине пӗтӗмпе тӳлемест (урӑхла каласан, тавар хакне пӗтӗмпех тӳлемест), йӳнерех тӳлет, сутасса вӑл хаклӑраха сутать. Суту-илӳ тӑвакан усламӗ вӑл—маҫтӑр ӗҫин хакӗ, маҫтӑр тарӗ.

Суту-илӳ тӑвакан. маҫтӑрӑн ӗҫне хӑйне ахалех илсе, капиталис пулса тӑрать. Маҫтӑр хӑйӗн таварне айакка кайса сутайманнипе ирӗксӗрех суту-илӳ тӑвакана сутать. Суту-илӳ тӑвакан ӑна пусмӑрланӑҫемӗн пусмарласа пырать.

Суту-илӳ тӑвакан малтан маҫтӑра кивҫен укҫа парать, ӑна айакран тавар тумалли йапаласем, ӗҫ хатӗрӗсем илсе килсе парать. Пурӑна киле маҫтӑрӑн ӗҫне хутшӑнма тытӑнать: ӑна хӑйне кирлӗ таварсем тутарма тытӑнать. Ун ҫухне вара маҫтӑр хӑйне хуҫа пулмасть, суту-илӳ тӑвакан ҫапла хӑйне темӗн ҫухлӗ маҫтӑрсене пӑхӑнтарать, вӗсене пӗтӗмпех хӑй тарҫи пулса тӑратать, суту-илӳ тӑвакан аллине илет. Ҫавӑн пек хуҫайствӑна килти капиталисӑмлӑ хуҫайствӑ теҫҫӗ.

Тата малалла суту-илӳ тӑвакан, капиталис пулса кайнӑскер, хӑйне пӑхӑнтарнӑ маҫтӑрсене пурне те пӗр ҫӗре пухать те пысӑк маҫтӑрски уҫать. Маҫтӑрсем вара пӗтӗмпех унӑн тарҫисем пулса кайаҫҫӗ, суту-илӳ тӑвакан хушнине, йе унӑн правлейщи хушнине анҫах тӑваҫҫӗ

Маҫтӑрсене пӗр ҫӗре пухни капиталиссемшӗн пит усӑлӑ. Ун ҫухне, темиҫе пӳрт вырӑнне, пӗр пӳрт анҫах кирлӗ, пӗр пӳрте анҫах хутмалла, пӗр пӳрте анҫах ҫутатмалла пулать. Маҫтӑрсене пурне те пӗрле ӗҫлеттерсен ӗҫӗ те ӳсӗнет, мӗншӗн тесен ун ҫухне маҫтӑрсем харпӑр пӗр ӗҫ анҫах тӑваҫҫӗ; ӗҫ хатӗрӗсем те кӑшт та ахаҫ выртмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ун ҫухне капиталиссем пит нумай услам илеҫҫӗ.

Капитал пухӑнни. Маҫтӑрсене пӗр ҫӗре пухса ӗҫлеттерни—ӗҫе

капиталисӑмлӑ туни мар-ха. Ӗҫе капиталисӑмлӑ тӑвиҫҫен малтан капитал пухмалла. Капитал акӑ мӗнле пухӑннӑ.

Тавара капиталисӑмлӑ тӑвас тесен икӗ йапала кирлӗ: 1) хапрӑк-савӑтсем лартма, тавар тумалли йапаласем, ӗҫ хатӗрӗсем илме, ӗҫлеме ҫынсем тара тытма укҫа кирлӗ; 2) тара тытмашкӑн опҫествӑра хуҫайствӑсӑр пурӑнакан ҫынсем кирлӗ.

Ҫак икӗ йапала суту-илӳ капиталисмӗ вӑхӑтӗнҫе пула пуҫланӑ.

Укҫине—маҫтӑрсене, хресҫенсене пусмӑрласа пухнӑ; пуринҫ н ытла Америкри, Ахрикри, Аҫири тӗттӗм халӑхсене ҫаратса, йе вӗсене сутса нумай укҫа пухнӑ.

Хапрӑксемпе савӑтсене тара тытмалли ҫынсем—йухӑнса тухнӑ маҫтӑрсемпе хресҫенсенҫен пулнӑ.

Таварсене капиталисӑмлӑ тума укҫа пухӑннине, маҫтӑрсемпе хресҫенсенҫен тара тытмалли ҫынсем пулса кайнине капитал пухӑнни теҫҫӗ.

Ӗҫлекенсем. Капиталисӑмлӑ опҫествӑра нумайӗшин тавар тума хатӗрӗсем ҫук. Вӗсене ӗҫлекенсем тӗҫҫӗ. Вӗсен аллинҫен пуҫне, ӗҫлеме пӗлнинҫен пуҫне, урӑх нимӗн те ҫук. Выҫӑ вилесрен, вӗсем капиталиссем патне савӑта йе хапрӑка ӗҫлеме кӗрӗшеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫлемелли вӑйне сутаҫҫӗ.

Капиталис ӗҫлекенсене хапрӑкра йе савӑтра ӗҫлеме тытнӑ ҫухне, вӗсене выҫӑ ларнӑшӑн, тӗрлӗ асап курнӑшӑн хӗрхенсе тытмасӑ. Ун ҫинҫен вӑл шухӑшламасӑ те. Вӑл вӗсене хӑйшӗн нумайрах тупӑш тума, нумайрах услам илме тытаӑ.

Капиталис ӗҫлекенсене ҫас ҫасах „епӗ сирен аҫӑр“ тет. Анҫах вӑл ӗҫлекенсене ырӑ тӑвасшӑн тӑрӑшмасӑ, мӗнле те пулин вӗсене ытларах ӗҫлеттерсе вӗсенҫен нумайрах усӑ курма тӑрӑшаӑ.

Експлуататси. Капиталис ӗҫлекенсене тӑрантармасӑ, ӗҫлекенсем ӑна тӑрантараҫҫӗ

Вӑл мӗнле пулаӑ?

Ӗҫлекенсене тара тытсан, капиталис вӗсене укҫа тӳлет. Анҫах вӗсене нумай тӳлемест, выҫӑ вилесрен пурӑнмалӑх анҫах тӳлет.

Ӗҫлекен ӗҫлесе хӑйне тӳленӗ укҫава кӑна тавӑрмасӑ, унтан ытлашши тата капиталиса услам параӑ.

Сӑмахран, ӗҫлекене пӗр кун пурӑнма 50 пус кирлӗ пултӑр, ҫавӑнпа капиталис ӑна кунне 50 пус тӳлет. Ӗҫлекен кун тӑрӑшшине 10-12 сехет ӗҫлет. Хӑйне тӳленӗ 50 пус укҫана вал 5 сехет ӗҫлесех кӑлараӑ. Ытти 5—7 сехет вара вӑл капиталиса ахалех ӗҫлесе усӑ параӑ.

Ӗҫлекен хӑйне тӳленӗ укҫана тавӑрмалӑх 5 сехет анҫах ӗҫлесен, капиталис нимӗнле услам та илеймӗҫӗ, хӑйӗн хуҫайствине те тытаймӗҫӗ.

Анҫах капиталис хӑй ӗҫне пит лайӑх пӗлет. Вӑл ӗҫлекене 50 пус тытса, ҫав 50 пус та тавӑраӑ, унтан пуҫне тата ҫавӑн ҫухлӗ, йе ытларах та услам илет.

Ӗҫлекенсене ҫапла ытлашши ӗҫлеттернине, вӗсене ытлашши ӗҫлеттерсе тунӑ тавара капиталиссем ахалех хӑйсене илнине експлуататси теҫҫӗ Ҫав експлуататсирен ӗнтӗ капиталис услам илет.

Капиталисӑн ӗҫлекенсем пит нумай. Кашнинҫен вӑл услам илет. Пур ӗҫлекенсенҫен те унӑн калама та ҫук нумай услам пухӑнаӑ. Ҫа-

вăнпа капиталис ҫапла ҫуртсем лартаӗ, сивĕпе выҫҫа пĕлмесĕр, сарăлса савăнса пурăнаӗ.

Капиталис йепле алхасса пурăнсан та, пур усламне те пĕтереймест. Ытлашши йулнă усламĕпе вăл хăй ĕҫне тата сарса йараӗ. Ĕҫĕ, сарăлсан, тата нумайрах услам пара пуҫлаӗ.

Хапрăкпа савăтсене кирек мĕнле тусан та, весĕм хăйсем тĕллĕн ĕҫлеймеҫҫĕ. Вĕсем ҫынна тара тытса ĕҫлеттерсен, вĕсене хăйсене тӳленĕ укҫаран ытлашши ĕҫлеттерсен анҫах капиталиса услам пама пултараҫҫĕ.

Капиталис ĕҫлекенсене кун тăрăшшине мĕн ҫухлĕ нумай ĕҫлеттерет, мĕн ҫухлĕ вĕсене йӳн тӳлет, ҫавăн ҫухлĕ вăл усламне нумайрах илет. Ҫавăнпа ĕҫлекенсене усăли капиталиса сийен, капиталиса усăли ĕҫлекенсене сийен. Ĕҫлекенсемпе капиталиссен ҫулĕ нихăҫан та пĕр мăй пыма пултараймасӗ.

Хресҫенсем. Капиталисăм вăхăтĕнҫе хăйсен вăйĕпе пурăнакан хресҫенсене пит хĕн. Ҫĕр сахал, ҫитменнине тата наҫар; капиталисăмлă патшалăх куланай нумай пуҫтараӗ, хресҫен аҫисене салтака илсе капиталиссемшĕн вĕсене вăрҫа илсе кайаӗ.

Ĕҫпе пурăнакан хресҫенсен хуҫайстви пурăннăҫемĕн наҫарланса пыраӗ, кайран пĕтĕмпех пĕтсе лараӗ. Вара хресҫенсем ирĕксĕрех ҫĕр улпуҫĕ патне, йе хапрăка, йе савăта тарҫа кĕрĕшеҫҫĕ, йе хуҫайствине пăрахса хулана кайаҫҫĕ, асапланса пурăнакан ĕҫлекенсен ушкăнне тата ытла пысăклатаҫҫĕ.

Йĕркесĕрлĕх. Капиталлиссен харпăр хăй хуҫайствинҫе (савăтра, хапрăкра, тата ыттисенҫе те) йĕрке пур. Анҫах вĕсен хуҫайствисен хушшинҫе пĕр йĕрке те ҫук. Вĕсем пур те пĕрне пĕри пăхмасăр ĕҫлеҫҫĕ.

Пурте вĕсем сутма тавар тăваҫҫĕ. Анҫах таварĕ мĕн ҫухлĕ сутăнассине нихăҫан та пĕлмеҫҫĕ.

Конкуренси. Пурте нумайрах сутма тăрăшаҫҫĕ, пĕр пĕрипе тавар илекенсемшĕн тавлашаҫҫĕ; пур рынăксене [1]) те хăйсен аллине йарса илме тăрăшаҫҫĕ. Ҫапла капиталиссен хушшинҫе конкуренси (тав) пыраӗ.

Крисис. Услам нумай илесшĕн, капиталиссем пурте нумайрах тавар тума тăрăшаҫҫĕ. Ҫапла тавар туса тултарсан, хăш ҫухне вăл тавара илекен те пулмасӗ. Вара тавар ахалех ҫĕрсе выртаӗ, тавара ҫикнĕ укҫа та ахалех сайа кайаӗ, капиталиссем упыткă курма тытăнаҫҫĕ. Ун пек вăхăта крисис теҫҫĕ.

Крисис вăхăтĕнҫе вакрах савăтсемпе хапрăксем пĕтсех лараҫҫĕ, хăшĕ пĕр вăхăта тавар тума ҫарăнаҫҫĕ, хăшĕ таварне сахалтарах тума пуҫлаҫҫĕ. Вара ĕҫлекенсене хапрăксемпе савăтсенҫен хăваласа йараҫҫĕ.

Ун пек ĕҫлекенсем вара, ĕҫ тупайманнипе, асапланса пурăнаҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах тĕрлĕ склатсенҫе капиталиссен хисепсĕр нумай тавар ахалех ҫĕрсе выртаӗ.

[1]) Рынăк тесе тавар илекен ҫĕрсене калаҫҫĕ.

Крисис хăш ђухне пĕр тĕслĕ тавар тăвакан хапрăксемпе савăтсенђе анђах пулмаст̆. Усал ђир пек, вăл ытти хапрăк-савăтсене те йарса илет. Ун пек крисис вара темиҫе ҫула пырат̆.

Таварсене сахал тунипе, ĕлĕкхи таварсене сутса пĕтернипе, крисис лăпланат̆; савăтсемпе хапрăксем вара хупăнми пулаҫҫĕ. Тата кăшт тăрсан, крисис вăхăтĕнђе пĕтмесĕр йулнă хапрăксемпе савăтсем ĕҫлеме пуҫлаҫҫĕ. Ĕҫ тупаймасăр пурăнакан ĕҫ ҫыннисем татах хапрăксемпе савăтсене ĕҫлеме кĕреҫҫĕ. Анђах капиталиссем нумайрах тавар сутса пуйма тăрăшнипе, пурăнсан-пурăнсан татах крисис пуҫланат̆.

Капиталисăмлă опђествăра крисис нихăҫан та пĕтес ҫук. Вăл крисис тавара йĕркесĕр тунипе, капиталиссем нумайрах услам илесшĕн нумайрах тавар тума тăрăшнипе пулат̆.

Ĕҫсĕр йулнă ҫынсен ҫарри. Ĕҫленкенсен крисис вăхăтĕнђе анђах ĕҫсĕр тăрса йулмаҫҫĕ, ахаљ ђухне те вĕсем нумайĕшĕ ĕҫ тупаймасăр пурăнаҫҫĕ. Капиталисăмлă опђествăра ĕҫ тупаймасăр асапланса пурăнака ĕҫлекенсем йаланах пит нумай.

Капиталисăм вăхăтĕнђе маҫтăрсемпе хресђенсен хуҫайстви пĕр майах саланат̆. Капиталиссем тăвакан савăтсемпе хапрăксене вĕсем пурте нихăҫан та шăнăҫаймаҫҫĕ. Ҫав йухăнса тухнă маҫтăрсемпе хресђенсенђен ĕҫсĕр ҫарă пулса кайат̆. Вăл ҫарă нихăҫан та пĕтмест, ӳснĕҫемĕн ӳссе пырат̆.

Хале ĕҫре тăракан ҫынсен ‹ никам та йалан ĕҫре тăрăп тесе калаймаст̆. Ĕҫлекенсенђен кирек кам та выҫă пурăнакан ĕҫсĕр ҫарра лекме пултарат̆.

Капиталисăм вăхăтĕнђе ĕҫлекенсем нихăҫан та канлĕ пурăнаймĕҫ, вĕсен пурнăҫĕ нихăҫан та малалла кайаймĕ. Вăл — ҫил тăвăл пек килсе перĕнекен крисиссенђен, ĕҫсĕр ҫарăран пит паллă.

Ҫавăнпа ĕҫлекенсен пур ҫĕрте те капиталисăм йĕркине, харпăр уйрăм хуҫайствă тытас йеркене курайми пулђĕҫ; пур ҫĕрте те вĕсем вăл йĕркене пĕтерме тăрăшаҫҫĕ.

Капиталисăмлă хуҫайствăсем хутшăнни. Капиталиссем, пĕр-пĕринђен тавар илекенсене туртса илме тăрăшса, таварĕсене хăш ђухне йури йӳн хакпа сутма тытăнаҫҫĕ. Ун ђухне вара нађартарах капиталиссем, упытка ђăтаймасăр, пĕтсе лараҫҫĕ, тавар тума пăрахаҫҫĕ. Ҫавăнпа капиталиссем йалан сахалланса пыраҫҫĕ; йулнă капиталиссем хăйсен ĕҫĕсене ытла та ӳстерсе йараҫҫĕ, вара хисепĕ ҫук нумай услам илеҫҫĕ.

Хăш ђухне капиталиссем ĕҫе пĕрле хутшăнса тăваҫҫĕ. Вара вĕсем хăватлăланса хăйсен таварне тăвакан ытти капиталиссене пĕтĕмпе пĕтереҫҫĕ, пĕтĕм рынăка хăйсен аллине илеҫҫĕ; кайран хăйсен таварне мĕн хака сутас тенĕ, ҫав хакпа сутаҫҫĕ. Капиталиссен ҫавăн пек пĕрлехи хуҫайствине ҫинтикат, трест, тата аксионерни кампани теҫҫĕ.

Ҫинтикатпа трестăн уйрăмĕ ак ҫаккăнта. Ҫинтикат тусан, капиталиссен хуҫайствисем харпăр хăй аллинех йулаҫҫĕ. Анђах вĕсем кашнийĕ мĕн ђухлĕ тавар тумаллине, мĕн хака сутмаллине, кам ăҫта

сутмаллине кăна пĕрле сăмах пĕтереççĕ. Трестре ун пек уйрăм хуçайствăсем çук, пур хуçайствăсем те трест аллине куçаççĕ. Трестăн хуçайствине пăхма правлени суйлаççĕ.

Трестсене пĕр йышшĕ тавар тăвакан хуçайствăсем анҫах кĕмеççĕ, унта пĕр-пĕрине çыхăннă тĕрлĕ тĕслĕ тавар тăвакан хуçайствăсем те кĕреççĕ. («Хурçă трестне» ĕлĕк хурçă савăҫĕсем, тимĕр савăҫĕсем, тимĕр кăларакан, çĕр кăмрăкĕ кăларакан вырăнĕсем кĕнĕ).

Çинтикатсемпе трестсене хутшăннă хуçайствăсем теççĕ (урăхла ăна комбинированные хуçайствăсем теççĕ).

Хаҫхи вăхăтра конкуренсирен хăраман пысăк савăт, йе хапрăк, йе мĕнле те пулин урăх хуçайствă тăвас тесен, хисепсĕр нумай укçа кирлĕ. Уйрăм капиталиссен ун ҫухлĕ укçа тупма пит хĕн. Çавăнпа капиталиссем пĕрле пулса аксионерни кампани тăваççĕ. Çитмен укçипе вĕсем акси (пай) кăларса пуçтараççĕ. Акси вăл хаклă пулмасҭ, ăна тĕреклĕрех пурăнакан хресҫен те илме пултараҭ. Кампанийе кĕнĕ капиталиссем çавăн пек аксисем сутса пит нумай укçа пустараççĕ, вара ĕçе тытăнаççĕ. Аксийе илекен çав ĕçрен хăйне тивĕçлĕ услам курса пурăнаҭ.

Çапла капиталиссем, аксионерни кампани туса, халăх хушинҫи вак мулсене хăйсен аллине пуçтарса илеççĕ.

Кампани пуçласа йанă ĕçĕн вара уйрăм хуçи пулмасҭ, вăл пĕтĕм кампанийĕн ĕçĕ пулаҭ. Вăл ĕçе правлени пăхса тăраҭ.

Çавăн пек хутшăннă хуçайствăсем (трестсем, çинтикатсем, акс. кампанисем) пит хăватлă пулаççĕ. Пĕтĕм патшалăха вĕсем хăйсен аллинҫе тытса тăраççĕ. Вĕсемпе кĕрмешме пит хĕн. Вĕсемпе кĕрмешес тесен, ĕçлекенсенĕн хăйсен те пĕрлешес пулаҭ.

Капиталиссем кирек мĕнле хутшăнсан та конкуренсийе пĕтереймеççĕ. Уйрăм капиталиссен хушшинҫе, йе капиталиссен пĕрле хутшăнса пулнă хуçайствисен хушшинҫе йалан вăрçă пыраҭ.

Капиталиссем хăйсен патшалăхĕнҫи капиталиссемпе анҫах вăрçмаççĕ, йут патшалăхри капиталиссемпе те, тавар кайакан çĕрсене (рынoксене) йарса илесшĕн, вăрçаççĕ.

Капиталиссем çапла пĕр-пĕрипе конкуренси тунипе, усламшăн тăрăшса пĕрне пĕри пĕтернипе, хисепсĕр хăватлă капиталисăмлă хуçайствăсем пулса кайаççĕ; çапла ĕлĕк нумай алла саланнă капитал пĕр çĕрелле пухăнаҭ (ăна «капитал консентратсинелни» теççĕ). Ун пек пысăк хуçайствăсенҫе темиçе пиншер çын ĕçлет, вĕсем калама çук нумай услам параççĕ. Вакрах хуçайствăсем çав пăхаттирсемпе çапăçса пĕтнĕçемĕн пĕтсе пыраççĕ.

Капиталисăмлă пысăк хуçайствăсем тата капиталиссем пĕр-пĕрипе хутăшса ĕçе пĕрле тунипе те пулса кайаççĕ. Çапла трест ем, çинтикатсем, панкăсем пулса кайнă (ăна «капитал сентралисатсинелни» теççĕ).

Капитал консентратсинелнипе, сентралисатсинелнипе, вак хуçайствăсем-маçтăрсем, хресҫенсем пĕтсе лараççĕ, вара вĕсем капиталисăмлă хуçаствăсене ĕçлеме кайаççĕ, **п р о л е т т а р и** пулаççĕ (ăна «вак хуçайствăсем пролеттарисатсинелни теççĕ).

Çапла капиталисăмлă опществă икĕ пайа уйăрăлса тăрат: пĕр йенҫе капиталиссем; вĕсем хăйсем кăшт анҫах, çапах та вĕсен аллинҫе тĕнҫери мĕн пур пуйанлăх; тепĕр йенҫе темиçе мĕљйун пролеттарисем; весен, хăйсем нумайăн пулсан та, нимĕн те çук. Çав пĕҫĕкçеççĕ ушкăнпа хисепсĕр пысăк ушкăнăн уйрăмĕ ўснĕçемĕн ўссе пырат. Пĕҫекçеççĕ ушкăнĕ пысăк ушкăнне хăйшĕн ĕçлеттерсе, ăна таптаса пурăнат; пысăк ушкăнĕ пĕҫĕк ушкăнин аллинҫен мĕнле те пулин хăтăлма тăрăшат; вĕсем йалан пĕр-пĕрипне çапăçса, харкашса пурăнаççĕ; вăл вăрçă хăватлăланнăçемĕн хăватлăланса пырат. Ĕçлекенсем капиталисăм йĕркине пĕтерме тăрăшаççĕ, капиталиссем вăл йĕркене усрасшăн тăрăшаççĕ.

---

## КЛАССЕМ ÇАПĂÇНИ. ПАРТТИСЕМ.

Капиталисăмлă опществăра çынсем пĕр пек пурăнмаççĕ. Хăшĕ ĕмĕр ĕçлет, патшалăх йывăрлăхне пурне те тўсет, ырă кун нихăçан та кураймаст. Хăшĕ нимĕн те ĕçлемест, патшалăха нимĕн те памаст, хăй çапах йалан савăнса пурăнат. Урăхла каласан, патшалăхра тĕрлĕ клас пур.

Классем. Мĕн вăл клас?

Клас тесе хуçайствăра пĕр пек вырăнта тăракан çынсене, урăхла каласан, пурлăх тĕлешĕнҫен, ĕç хатĕрĕ тĕлĕшĕнҫен пĕр пекрех çынсене, калаççĕ.

Капиталиссем хăйне клас, мĕншĕн тесен вĕсем пурте пуйан, пурте хăйсемшĕн ытти çынсене ĕçлеттереççĕ, пурте услам илсе пурăнаççĕ (çын ĕçленине хăйсене илеççĕ), хăйсем нимĕн йапала та тумаççĕ.

Ĕçлекенсем хăйне клас, мĕншĕн тесен, вĕсен нихăшин те ĕç хатĕрĕсем çук, вĕсем хăйсен вăйне сутса (тара кĕрĕшсе), уншăн анҫах укçа илсе пурăнаççĕ. Капиталисăмлă опществăра пĕр вĕсем анҫах тавар тăваççĕ.

Капиталиссемпе ĕçлекенсен хушшинҫе тата вăтам клас, вак пуйансен класĕ пур. Вăл класа тата вак пуршуйсем теççĕ.

Вак пуршуйсен класне маçтĕрски тытакансем, хăй çĕрĕ пуррисем кĕреççĕ. Вак пуршуйсем теме-пуйантарах хресҫенсене, пĕҫĕк лавка тытакансене, тĕрле маçтăрски тытакансене йурат. Вĕсенҫен хăшĕ тарçă тытакансем те пур. Нумайĕшĕ тарçăсăрах. хăйсем ĕçлесе пурăнаççĕ.

Капиталисăм ўснĕçемĕн вак пуршуйсен класĕ пĕтсе пырат, вĕсем ĕçлекенсем, пролеттарисем пулса кайаççĕ.

Классем сапăçни. Классем пĕр-пĕрипе килĕштерсе пурăнма пултараймаççĕ. Капиталис ĕçлекенсене хытăрах, вăрахрах ĕçлеттерме, весене сахалтарах тўлеме, нумайтарах услам илме тăрăшат, мĕншĕн тесен, вăл çав усламшăн пурăнат, усламшăн анҫах хапрăксемпе савăтсем лартат.

Ĕçлекенсем ĕç кунне кĕскетме, ĕçе çăмăллатма, ĕçленĕшĕн çителĕклĕ хак илме тăрăшаççĕ. Апла тусан капиталиса услам сахалтарах лекет, çавăнна капиталис ĕçлекенсен ыйтнине тăвасшăн мар.

Çапла ĕнтĕ капиталиссемпе ĕçлекенсен интересĕсем пĕр пек мар, вĕсем пĕрне пĕри хирĕç. Çавăнтан ĕнтĕ капиталиссемпе ĕçлекенсен пĕр-пĕринпе тавлашса пурăнни, классем çапăçни тухаŤ.

Ĕçлекенсем хăш ђухне ĕçлеме пăрахаççĕ, сапастовкă тăваççĕ, çапла капиталиса услам илейми тăваççĕ; анђах ун пек ђухне ĕçлекенсем ĕç укçи илеймеççĕ. Сапастовкă нумай вăхăта пырсан, капиталис услам илейменнипе пĕтĕмпех йухăнса тухма пултараŤ, ĕçлекенсем выçă вилме пултараççĕ. Кам вăрахрах ђăтма пултараŤ, çав çĕнтерет. Капиталис ђăтаймасан, вăл вара ĕçлекенсем ыйтнине тăваŤ; ĕçлекенсен ђăтаймасан, вĕсем вара капиталиса пăхăнаççĕ.

Капиталиссемпе ĕçлекенсем хушшинђе нихăçан та килĕшӳ пулас çук, вĕсем йалан пĕр-пĕринпе çапăçса пурăнĕç, мĕншĕн тесен вĕсен интересĕсем хирĕç. Пĕр вăхăта вĕсем килĕштерсе пурăнсан та, вăл-тăвăл умĕн пулакан лăпкă çанталăк пек анђах: ун пек ђухне капиталиссем те, ĕçлекенсем те пĕр-пĕринпе çапăçма вăй пухса хатĕрленсе тăраççĕ.

Капиталисăм ӳссе, хăватлăланса пынăçемĕн, вак хусайствăсем пĕтсе пыраççĕ, пролеттари station класĕ те ӳссе пыраŤ.

Капиталиссемпе пролеттарисен уйрăмĕ те ӳснеçемĕн ӳссе пыраŤ, вĕсен хушшинђи вăрçă хăватлăланса пыраŤ.

Пĕр тĕлте сапастовкă тапрансан, вăл ђас ђасах пĕтĕм патшалăха сарăлаŤ, хăш ђухне классем пĕр-пĕринпе хĕç-пăшалпа та çапăçма тытăнаççĕ.

**Патшалăх.** Ăçта классем пур, ăçта классем çапăçаççĕ, унта пĕр клас пуçлăх пулса ытти классене пусмăрласа пурăнаŤ.

Ытти классене пусмăрласа пурăнма, пуç пулса тăракан клас патшалăха хăй аллине илет, хăйне майлă правитеђствă тăваŤ. Çапла ĕнтĕ, правитеђствă вăл—пуç пулса тăракан класăн комиттеђĕ. Çавăнпа кирек мĕнле правитеђствă та пуç пулса тăракан класшăн анђах тăрăшаŤ. Мĕнле те пулин клас патшалăх йĕркине улăштарас тесен, урăх саккунсем кăларас тесен, ăна правитеђствă мĕн пур вăйĕпе тулама тытăнаŤ, хăш ђухне ăна хĕç-пăшалпах хăйĕн саккунĕсене пăхăнтараŤ.

Капиталисăм вăхăтĕнђе капиталиссен класĕ, пуршуйсем пуç пулса тăраççĕ. Çавăнпа патшалăх йĕрки те капиталиссемшĕн анђах усăлă, правитеђствă та вĕсемшĕн анђах тăрăшаŤ. Капиталисăм вăхăтĕнђе правитеђствă та патшалăх йĕрки те ĕçлекенсене хĕстерекен машинă.

Ун пек ђухне ĕçлекенсен сăмахне, вĕсем вăйлă пулсан, çапăçма пултарсан анђах кăшт итлеççĕ.

Капиталисăмлă патшалăхра пур саккунсене те капиталиссен пурлăхĕсене сыхлама, ĕçлекенсемпе хăйсен ĕçĕпе пурăнакан хресђенсене пусмăрлама анђах кăлараççĕ.

Капиталиссен пурлăхне илме тытăннăшăн, капиталисăмлă патшалăхра тĕрмене те хупаççĕ, катăрка та йараççĕ, çакса йе персе те вĕлереççĕ.

Ĕçлекенсемпе хăйсен ĕçĕпе пурăнакан хресђенсене пăхăнтарса пурăнмашкăн, капиталисăмлă патшалăх пысак çарă, шантарсем, пĕлеђђейскисем, сыхласа çӳрекенсем, тытса паракансем тытаŤ, çаррине ĕçлекенсемпе хре-

сђенсен ађисенех пухса тăваť; вĕсем аппĕсене вĕлерме пултарђђăр тесе, вĕсене темиçе çулђђен касармăсенђе тытса пуçĕсене çавăрса пĕтереççĕ.

Ĕçлекенсемпе хресђенсем асапа ђăтаймасăр капиталиссене хирĕç тăрсан, пуршуйсем вĕсене урнă кашкăр пек тулама тытăнаççĕ: хĕнеççĕ, тĕрмене хупаççĕ, касаççĕ, çакаççĕ, персе вĕлереççĕ.

Ĕçлекенсемпе хресђенсем пĕр майлă ан пулђђăр тесе, капиталиссем вĕсене йури илĕртсе пĕр-пĕринпе çапăçтарма тăрăшаççĕ. Вĕсем хушшинђе хăйсен майлă тĕрлĕ ушкăнсем тăваççĕ, вĕсене укçа парса тăраççĕ. Вăл ушкăнсем вара ĕçлекенсемпе хресђенсене сыхласа пурăнаççĕ, вĕсене шантарсен аллине тытса параççĕ; ĕçлекенсем сапастовкă тусан, вĕсен вырăнне ĕслеме кайаççĕ.

Капиталиссем тата йури пĕр халăхшăн тăрăшарах парса, тепĕрне хĕссе, пĕрне ырăласа, тепĕрне хурласа, вĕсене пĕрне пĕри курайми тăваççĕ. Вара тĕрлĕ халăхри ĕçлекенсемпе хресђенсем, пĕрле пулса капиталиссене хирĕç тăрас вырăнне, пĕр-пĕринпе килĕштерееймесĕр пурăнаççĕ; хăйсен тăшманне капиталиссенђе шырамаççĕ, ытти халăхсенђе шыраççĕ.

Капиталиссем шкулсенђе, ђиркӳсенђе ĕçлекенсемпе хресђенсене хăйсене пăхăнса пурăнма, кирек мĕнле асапа ђăтса ирттерме, çĕр çинђи çинђен шухăшламасăр таçти пĕлĕт çинђи çинђен шухăшласа пурăнмă вĕрентеççĕ. Ăна вĕрентме капиталиссем тĕрлĕ кĕнекесем, хаçатсем, шурналсем кăлараççĕ. Çапла вĕсем ĕçлекенсемпе хресђенсен ăсне те кăмăлне те пăсса пĕтерсе вĕсенђен выђăх кĕтĕвĕ тума тăрăшаççĕ.

Çапла ĕçлекенсемпе хресђенсене пĕр-пĕринђен уйăрса, вĕсене ађаранах пăсса пĕтерсе, капиталиссем темиçе çĕр çул тăрăшшине вĕсене пусмăрласа, вĕсен тирне сӳсе пурăнаççĕ. Раççей Респупликкинђе ĕçлекенсемпе хресђенсем капиталиссене çĕнсе пăрахса хăйсем пуç пулса тăђĕç, анђах ытти патшалăхсенђе пур çĕрте те капиталиссемех пуç пулса пурăнаççĕ.

Политтиккăшăн çапăçни. Капиталиссемпе сапăçнă ђухне, ĕçлекенсенĕн правитеђствăпа та çапăçмалла пулаť, мĕншĕн тесен правитеђствă вăл—капиталиссен комиттеђĕ, ĕçлекенсене хĕсекен машини.

Çавăнпа классем çапăçни вăл—политтиккăшăн çапăçни.

Ĕçлекенсем хăйсен пурнăçне çăмăллатасшăн капиталиссемпе çапăсма тытăнсанах политтиккăшăн та çапăçа пуçланă, ирĕккĕн пухăнма, ушкăнсем тума, ĕçе çăмăллатасси çинђен саккун кăларма, çавăн пек тата ытти йапаласем те ыйтнă.

Пурăна киле хăватлăланса çитсен ĕçлекенсем капиталисăмлă патшалăх йĕркине те пĕтерме тăрăша пуçланă.

Ĕçлекенсем мĕншĕн капиталисăмлă патшалăх йеркине пĕтересшĕн çапăçаççĕ? Мĕншĕн тесен капиталисăмлă правитеђствă капиталиссемшĕн анђах тăрăшаť. Ĕçлекенсене мĕнле те пулин ырăлăх туни капиталиссене сийен. Çавăнпа капиталисăмлă патшалăх ĕçлекенсене ĕç хакне те ӳстересшĕн мар, ĕç кунне те ђакарасшăн мар, нимĕн ырăлăх та тăвасшăн мар. Ĕçлекенсем хăйсен пурнăçне çăмăллатма тытăнсан, капиталисăмлă патшалăх мĕн пур вăйĕпе вĕсене хирĕç тăраť.

Пролеттарисем капиталисăма пĕтерсе пĕтĕм тĕнђери хуçайствăна халăх аллине парасшăн, коммунисăм тăвасшăн.

Çавӑн пек йӗрке пулиҫҫен классем пӗр-пӗринпе çапӑçасси нихӑçан та пӗтес çук.

Партти. Ӗçлекенсен класне унӑн партийӗ йертсе пырать. Мӗн вӑл партти? Партти вӑл—класӑн ушкӑнӗ. Вӑл хӑйӗн класне йертсе пырать, патшалӑхри мӗн пур ирӗке хӑйӗн класне пама тӑрӑшать.

Парттипе клас пӗр мар. Партти вӑл—класӑн пайӗ анҫах. Парттийе класри ӑвланарах паракан, айаккарах куракан, çапӑçма хӑраман çынсем анҫах кӗреççӗ. Партти вӑл—класӑн пуçӗ, класӑн мимми.

Партти мӗн ҫухлӗ пысӑк, партире йӗрке мӗн ҫухлӗ нумайрах, партири çынсем пӗр-пӗриншӗн мӗн ҫухлӗ хытӑ тӑраççӗ, партти çавӑн ҫухлӗ хӑватлӑ.

Партти кашни класӑнах пур.

Коммуниссен парттийӗ. Ӗçлекенсене коммуниссен партийӗ йертсе пырать. Вӑл партийе наҫар пурӑнакан хресҫенсем те кӗреççӗ, мӗншӗн тесен ӗçлесе асапланса пурӑнакансемшӗн пӗр коммуниссен партийе анҫах тӑрӑшнине вӗсем пӗлеççӗ.

Коммуниссен парттийӗ—пӗтӗм тӗнҫери пуршуйсене пӗтерме, вӗсен савӑҫӗсене, хапрӑкӗсене, çӗрӗсене илсе ӗçпе пурӑнакансен аллине пама тӑрӑшать; вӑл—çынна çын пусмӑрласа пурӑнас йӗркене пӗтерме тӑрӑшать. Вӑл—пурте ӗслесе пӗр пек ырӑ курса пурӑнмалла тӑвасшӑн.

Халӗ коммуниссен партийӗ тӗнҫере пур çерте те пур. Ӗçлекенсене хӑтарма коммуниссен партийӗ анҫах тӑрӑшнине ӗçпе пурӑнакансем халӗ пур çӗрте те пӗлсе çитрӗç.

Коммуниссен партийӗ капиталиссене хирӗç тӑрса вӗсене çӗмӗрсе пӑрахма хушать. Çапла анҫах капиталиссенҫен хӑтӑлма пулать. Ӑна ӗçлекенсем пур çӗрте те пӗле пуçларӗç.

Капиталис аллинҫе пурӑнакан, тӳрӗпе пыма йуратакан ӗçлекен кирек хӑшӗ те коммунис. Анҫах вӑл ҫунӗпе анҫах коммунис, коммуниссен парттийӗ мӗн тума тӑрӑшнине ӗçлекен тата пуçӗпе ӑнласа илме тивӗç

Раççейре коммуниссен партийӗ пит нумай ӗç турӗ. Вӑл ҫасрах коммунисӑм тума çул тасатса хуҫӗ. Пирӗн патшалӑхра капиталиссем пуçлӑх мар, ӗçлекенсемпе хресҫенсем пуçлӑх. Пирӗн ӗнтӗ хӗç пӑшал тытса патшалӑхри ирӗке хамӑр алла туртса илесси çук: вӑл ӗçе коммуниссен партийӗ 1917 çулти йупа уйӑхӗнҫех туса пӗтерҫӗ. Пирӗн ӗнтӗ хуçайствӑна анҫах майа ӗамалла, йут патшалӑхри капиталиссем пире хирӗç килсен тата вӗсемпе çапӑçмалла.

Коммуниссен партинҫе тӑракан çынсем пурте партти каланине хӑвӑртрах, тӗплӗрех тума тӑрӑшаççӗ, пурте пӗр-пӗриншӗн хытӑ тӑрӑççӗ. Çавӑнпа коммуниссен партти пек вӑйлӑ партти çук.

Коммуниссен партийӗн пуçлӑхӗ-сйес. Сйес партийӗн прокраммине те уставне те улӑштарма пултарать Сйессен хушшинҫе партийе Тӗп Комиттет йертсе пырать. Тӗп Комиттет хушнине партире тӑракансем, сейес хушнине тунӑ пекех, пӗтӗмпе туса пыраççӗ.

Пуршуйсен партийӗсем. Пролеттарисемпе çапӑсма пуршуйсем те парттисем тӑваççӗ. 1905 çулти револютсирен кайран пирӗн пуршуйсен икӗ партти пулҫӗ: 1) конститутсионалис-темократсен партийӗ, вӑсене кӗс-

кенӗн «катетсем» теҫҫӗ, 2) йупа уйӑхин 17-мӗш кун партийӗ, ӑна вырӑсла кӗскенӗн «окђаприссем» теҫҫӗ.

Ҫав икӗ партти пӗр пекрех. Вӗсем иккӗшӗ те «сотсиалисӑм пулас ҫук, ӑна шухӑша та илмелле мар, пролеттарисем нихӑҫан та патшалӑха тытса тӑма, хапрӑк-савӑтсенђе хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеме пултарас ҫук, харпӑр хӑйӗн хуҫайствӑ пулсан анђах ҫынсен пурнӑҫӗ ырӑланӗ» теҫҫӗ.

Вӗсем ӗҫлекенсем пуршуйсемпе ҫапӑҫнине йуратмаҫҫӗ; вӗсем вӑрҫӑ кӑларса ытти халӑхсене ҫаратасшӑн. 1914—1917 ҫулти патша вӑрҫинђе вӗсем халӑха плӗртсе нимӗҫсене, австрисене, тӗрӗксене темӗн тӗрлӗ курайми тума тӑрӑшрӗҫ; Анклипе Хранси пуршуйӗсем пулӑшнипе вӗсем тӗрӗксен Тартанелне темӗн пек хӑйсен аллине плесшӗнђӗ, Керманипе Австрийе ҫаратасшӑнђӗ.

1917 ҫулти йупа уйӑхӗнђиревођутсире вӗсен пурлӑхне туртса илсе халӑха парсан, вӗсем пӗтсе ларђӗҫ; вӗсен йулашки, Канаш прӗкне ҫӗнейменнипе, йут патшалӑхсене тарса пӗтрӗҫ; халӗ ӗнтӗ вӗсӗм унта хӑйсем вађђи канлӗх шыраса ҫӳреҫҫӗ.

Пӗтес патне ҫитнӗ пулсан та вӗсем ӗлӗкхи кунсене тавӑрасса ӗмӗтленсе пурӑнаҫҫӗ, Канаш ирӗкне ӗҫе майа йама ђӑрмантарса тӑраҫҫӗ.

Пуршуйсемпе килӗштерсе пурӑнма тӑрӑшакан партисем. Пуршуйсемпе пролетарисен партийӗсенђен пуҫне тата партисем пур. Вӗсем-вак пуршуйсен партийӗсем.

Ун пек партисем ӗлӗк нумайђђӗ. Анђах вӗсенђен нумайӗшӗ пӗтрӗҫ. Вӑйӗсем сахал пирки, вӗсем нимӗнех те тӑваймарӗҫ.

Ун пек партисем халӗ икӗ парти йулнӑ: сотсиал-темократ меншевиксен (естексем, с.-т.), тата сотсиалис-ревођутсионерсен (есерсем, с.-р.). Вӗсем те ӗнтӗ халӗ ыран-пайан пӗтес пек анђах пурӑнаҫҫӗ.

Нарс уйӑхӗнђи ревођутсиђђен вӗсем те патшапа ҫапӑҫађђӗҫ; 1905 ҫулта хӗҫ-пӑшал тытса патшапа ҫапӑҫма та пулӑшрӗҫ. Вӗсем хӑйсем «сотсиалисӑмшӑн тӑрӑшатпӑр» теҫҫӗ. Анђах ӗҫлекенсем сотсиалисӑм тума тытӑнсан, вӗсем ӗҫлекенсем майлӑ пулма хӑрарӗҫ. Патшана вырӑнтан кӑларсан, ҫав партисем пуршуйсен партийӗсемпе ӗҫле пусларӗҫ, вӗсемпе пӗрле вӑхӑтлӑх правитеђствӑ (временное правительство) турӗҫ. Ҫав правитеђствӑна «окђаприссем» те, «есерсем» те, «меншевиксем» те кӗнӗђӗ.

Вӗсем пуршуйсене ӗҫлекенсемпе ҫапӑҫма пулӑшса тӑђӗҫ, хӑйсем те ӗҫлекенсене хирӗҫ ҫапӑҫрӗҫ. Вӗсем ӗҫлекенсемпе хресђенсене ирӗксӗр нимӗҫсемпе ҫапӑҫтарђӗҫ, итлеменнисене пере-пере вӗлерђӗҫ; 1917 ҫулти ҫӗртме уйӑхӗнђе вӗсем ӗҫлекенсемпе хресђенсене ирӗксӗр нимӗҫсене хирӗҫ илсе кайса темиҫе ҫӗр пин ҫынна йахӑн пӗтерђӗҫ.

1917 ҫулти йупа уйӑхӗнђе ӗҫлекенсемпе хресђенсем пуршуйсене ҫӗнтерсен, вӗсем пуршуйсемпе пӗрле Канаш ирӗкне пӗтерме тытӑнђӗҫ. Патшанӑн тӗрлӗ йӑнӑралӗсене Канаш ирӗкӗне ҫапӑҫма пулӑшрӗҫ. Ҫав йӑнӑралсем туртса илнӗ ҫӗрсенђе ӗҫлекенсемпе хресђенсене, йӑнӑралсене пӑхӑнманшӑн, темӗн тӗрлӗ асаплантарса пӗтерђӗҫ.

Ӗҫлекенсемпе хресђенсем хӑйсен тӑшманӗсене пӗтӗмпех ҫӗнтерсе сотсиалисӑм тума тытӑнсан, вӗсем пуршуйсемпе пӗрле йут патшалӑхсене тарђӗҫ, мӗншӗн тесен унта халӗ капиталиссем пуҫлӑх. Унта вӗсем тӗрлӗ патшалӑхсене Канаш ирӗкне хирӗҫ вӑрҫӑ тапратма хӗтӗртсе ҫӳреҫҫӗ. Ка-

наш ирӗкне хирӗҫ вӑрҫӑпа килекенсене, кирек кам пулсан та, темӗн тӗрлӗ пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ.

Камшӑн тӑрӑшаҫҫӗ ӗнтӗ ҫав есерсемпе меншевиксем?—Пуршуйсемшен, йал пуйанӗсемшӗн, лавка хуҫисемшӗн, спекуђантсемшӗн.

Вӗсем Уђретителни Сопрани (уђретилкӑ) тӑвасшӑн, унта вӗсем пролеттарисемпе пуршуйсене килӗштересшӗн, пурне те кӑмӑла кайакан йӗрке тӑвасшӑн. Анђах кашкӑрсемпе сурӑхсен нихӑҫан та килӗшӳ пулма пултараймасӗ. Пуршуйсемпе пролеттарисен те килӗшӳ пулас ҫук: вӗсен интересӗсем пӗрне-пӗри хирӗҫ.

Уђретилкӑ тусан, ирӗк пуршуйсен аллине лекет: вӑл ӗмӗрех ҫапла пулнӑ. Ҫавӑнпа пуршуйсем есерсемпе меншевиксене мӗнле те пулин уђретилкӑ тума пулӑшаҫҫӗ те, уђретилкӑ тусан пӗтӗм ирӗк хӑйсен аллине лекессе вӗсем пит лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

---

## ИМПЕРИАЛИСӐМ. СОТСИАЛИСӐМ РЕВОЂУТСИЙӖ.

Капиталисӑм хӑватлӑланса пынӑ майпа тӗрлӗ хапрӑксемпе савӑтсем пӗрле хутшӑнса трессем, ҫинтикатсем пулса кайни ҫинђен епир малтанах каланӑ-ђӗ. XIX ӗмӗр пӗтнӗ ђухне, тата XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнђе трессене, ҫинтикатсене кӗмен хапрӑксемпе савӑтсем ниҫта та йулман.

XIX ӗмӗр пӗтсе килнӗ ђухнех Америкра трессем акӑ мӗн ђухлӗ тавар тунӑ: нехтӗ 95%, хими йапалисем 81%, тимӗр йапалисем 80%, хурҫӑ йапалисем 70%, хут 60%, свинес 85%; пурне те пӗрле шутласан, трессем мӗн пур таварӑн 80% тунӑ.

Анклире 14—18 ҫулсенђе трессем тунӑ: семент 89%, електриђествӑ йапалисем 90%, тӑвар 90%, ҫавӑн пекех ытти таварсем те пит нумай тунӑ.

Керманире трессем-кӑмрӑк 54%, ђукун 45%, сахӑр 70%, хут 80%, хурҫӑ 45% тунӑ.

Вӑл тӗлӗшрен капиталисӑмлӑ Раҫҫей те кайа йулман. «Протамет» йатлӑ ҫинтикат 1912 ҫултах 83% листӑлӑ тимӗр, 95% палккӑ, 75% ређсӑ, 100% тӗнӗл тунӑ. «Протукӑђ» йатлӑ ҫинтикат Тонетски Паҫҫейнра мӗн пур кӑмрӑкран 95% хӑй кӑларнӑ. Сахӑр ҫинтикаттӗ мӗн пур сахӑра (100%) хӑй анђах тунӑ. Ытти ҫинтикатсемпе трессем тата акӑ мӗн ђухлӗ тавар тунӑ; «Кровђа»—70%, «Пӑхӑр»—95%, «Платина»—90%, «Протвакун»—97%, тапак тресӗ—70%, прупкӑ тресӗ—100%.

Ҫапла ӗнтӗ капиталисӑмлӑ опђествӑра трессемпе ҫинтикатсем ытла та хӑватлӑланса кайаҫҫӗ.

П а н к к ӑ с е м. Ҫав трессене, ҫинтикатсене тума панккӑсем пит нумай пулӑшнӑ. Панкӑ тесе укҫа пухӑнакан вырӑнсене калаҫҫӗ. Вӑл укҫана капиталиссем хураҫҫӗ. Панкӑ укҫа хуракансене пруђӑн тӳлесе тӑраӗ.

Пруђӑн тӳлесе тӑма панккӑ укҫа ӑҫтан илет?

Панкка хунӑ укҫана ахађ выртармаҫҫӗ, ӑна укҫасӑр аптӑранӑ капиталиссене кивҫен параҫҫӗ, уншӑн вӗсенђен пруђӑн илсе тӑраҫҫӗ. Панккӑ хӑй илекен пруђӑн, тӳлесе тӑракан пруђӑнран нумай ытла. Ҫав

ытлашшийĕ ĕнтĕ панккăн усламĕ, тивитенҫĕ пулаť. Панккă мĕн ҫухлĕ пысăкрах, мĕн ҫухлĕ нумай укҫа илсе ăна кивҫен парса тăраť, ҫавăн ҫухлĕ вăл усламне те нумай кураť.

Хинансă капиталĕ. Анҫах панккă хăй аллине пухăннă укҫаран кивҫен парса кăна услам илсе тăмасť, тата урăхла та нумай услам илет.

Панккă хăйĕнҫен хапрăк-савăт тума кивҫен илнĕ капиталиссене хăй аллине илет. Вĕсене вăл ĕҫе йепле тумаллине пĕтĕмпех кăтартса тăраť. Хăй сăмахне итлемесен, «укҫана кайалла илĕп» тесе хăратаť. Ҫапла панккă хапрăк-савăтăн хуҫи пек пулса тăраť.

Ҫапла панкă укҫи хапрăк-савăтсен укҫипе пĕрлешсе кайса хинансă капиталĕ пулса тăраť. Хаҫхи трессемпе ҫинтикатсем нумайĕшĕ хинансă капиталĕ аллинҫе.

Епир маларах тĕрлĕ вак хапрăк-савăтсем пĕтсе вĕсен вырăнне пысăк хапрăк-савăтсем пулса кайни ҫинҫен каланă-ҫĕ. Ҫавăн пекех вак панккăсем вырăнне шултăра панккăсем пулса кайаҫҫĕ. Панккăсем сахалланаҫҫĕ, ун вырăнне пысăк панккăсем пулса кайаҫҫĕ. Америкра халĕ мĕн пур хапрăк-савăтсем иккех панккă аллинҫе; Керманире ултă панккă аллинҫе, Анклире те ултă панккă аллинҫе.

Рынăксемшĕн ҫапăҫни. Тĕрлĕ хапрăк-савăтсем пысăкланнипе, вĕсем пĕр-пĕринпе хутшăннипе, тата тĕрлĕ машинăсем шухăшласа кăларнипе тавар нумайланнăҫемĕн нумайланса пыраť. Ҫав таварсене сутмашкăн хисепсĕр пысăк рынăк, хисепсĕр нумай илекенсем кирлĕ. Капиталиссем таварĕсене пурне те хăйсен патшалăхĕсенҫе сутса пĕтереймеҫҫĕ. Ҫавăнпа вĕсем тавар сахал тăвакан ҫĕрсем шыраҫҫĕ; тупсан, вĕсене хăйсен патшалăхне пăхăнтарса колони тăваҫҫĕ.

Тĕнҫене уйăрни. Ҫапла капиталисăмлă патшалăхсем XIX ĕмĕр пĕтнĕ ҫухнех пĕр-пĕринпе пĕтĕм тĕнҫене уйăрнă. Халĕ ĕнтĕ тĕнҫере ниҫта та никам йышăнман рынăк ҫук.

Капиталисăм ӳссе пынипе тавар та нумайланса пыраť. Ытлашши тавара сутма татах рынăк кирлĕ. Анҫах тĕнҫере никам йышăнман рынăк ниҫта та ҫук. Ҫавăнпа ĕнтĕ халĕ капиталисăмлă патшалăхсем тĕнҫене тепĕр хут уйăрасшăн. Анҫах вĕсем тĕнҫене, оптестбă ҫĕр уйăрнă пек, пĕр пĕринпе килĕштерсе уйăраймаҫҫĕ, мĕншĕн тесен никам та хăйĕн рынăкне ирĕклĕрен парасшăн мар.

Империалисăм. Ҫапла трессем, ҫинтикатсем, панккăсем хăватланнипе капиталисăм империалисăмлă пулса кайаť.

Империалисăмлă патшалăхсем пурте, ыттисене пăхăнтарса, пĕтĕм тĕнҫене хăй аллине йарса илесшĕн.

Патшалăхсем пурте нумайрах ҫарă тытма, нумайрах вăрҫă хатĕрĕсем тума тăрăшаҫҫĕ. Вăрҫă хатĕрĕсем тăвакан савăтсем пысăкланса пыраҫҫĕ. Вĕсем ҫынсене вĕлерме тĕрлĕ хатĕрсем нумайрах тума тăрăшаҫҫĕ. Вăл тĕлешрен кашни патшалăх ыттисенҫен кайа йуласшăн мар, пĕтĕм вăйĕпе ҫарă ваҫҫи укҫа нумайрах пĕтерме тăрăшаť.

Ҫарă расхуҫĕ йепле ӳссе пыни ак ҫакăнтан паллă.

1908 ҫултан пуҫласа 1914 ҫула ҫитиҫҫен ҫарă расхуҫĕ ӳснĕ: Раҫҫейере 470 мĕҫйунтан 975 мĕҫйун тенке ҫитиҫҫен; Керманире 405 мĕҫйун-

тан 943 мӗӆйун тенке ҫитиӆӆен; Анклире 280 мӗӆйунтан 804 мӗӆйун тенке ҫитиӆӆен; Хрансире 415 мӗӆйунтан 740 мӗӆйун тенке ҫитиӆӆен.

Тӑватӑ капиталисӑмлӑ патшалӑх: Раҫҫей, Кермани, Анкли, Хранси, пӗр 1914 ҫулта анӆах вӑрҫӑшӑн ылттӑн укҫапа шутла виҫӗ миллиарт та тӑват ҫӗр утмӑл икӗ мӗӆйун тенкӗ (3.462.000.000) пӗтернӗ.

Ытти ҫӗрсене йарса илсе унти халӑхсене пусмӑрламашкӑн хӑватлӑ ҫарӑ тума тӑрӑшнине империалисӑм теҫҫӗ.

Империалисӑмлӑ патшалӑхсем кашнийӗ пӗтӗм тӗнӆене йарса илме тӑрӑшнӑран ирӗксӗрех вӗсен хушшинӆе вӑрҫӑ пулаӗ.

Ҫавӑн пек вӑрҫӑ Анклипе Кермани хушшинӆе пуласси XX ӗмӗр пуҫлансанах паллӑ пула пуҫларӗ. Вӑл вӑрҫӑ ӆӑнах та 1914 ҫулта тапранӆӗ. Вӑл вӑрҫа вара ытти патшалӑхсем те хутшӑнӆӗҫ: хӑшӗ Анкли майлӑ, хӑшӗ Кермани майлӑ пулӆӗҫ. Ҫапла тӗнӆе вӑрҫи пулса кайрӗ. Вӑл виҫӗ ҫула пыӆӗ.

В ӑ р ҫ ӑ. Вӑрҫӑ хисепсӗр нумай сийен турӗ. Унӑн асаппе ӗҫлекенсемпе хресӆенсем курӆӗҫ.

Вӑрҫакан патшалӑхсен вӑйӗсем ик йенӆисен те пӗр пекрех-ӆӗ. Ҫавӑнпа вӑл вӑрҫӑ пит хӑватлӑ пулӆӗ. Етем йунӗ ҫырма пек йухрӗ; йалсене те хуласене те аманса пӗтнӗ йе ӆире йернӗ салтаксем тулӆӗҫ.

Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа 1917 ҫулти пушӑ уйӗхне ҫитиӆӆен анӆах Анкли майлӑ патшалӑхсенӆе 6.000.000 ҫын пӗтнӗ, Кермани майлӑ вӑрҫаканнисен 4.000.000 ҫын пӗтнӗ. Мӗн пурӗ вунӑ мӗӆйун ҫын хирӗлнӗ. Пӗр Раҫҫейре анӆах 1.500.000 ҫын вӗлернӗ, 4.000.000 ҫын амантса пӗтернӗ.

Вӑрҫӑра мӗнле те пулин сийен курнисем мӗн пурӗ 25.000.000 ҫынна йахӑн, вӑл Рассейре анӆах.

Укҫа патшисемшӗн ҫавӑн ӆухлӗ ӗнтӗ йун тӑкӑннӑ!

Вӑл вӑрҫӑра, ҫынран пуҫне, тата хисепӗ ҫук мул пӗтнӗ. 1918 ҫула ҫитиӆӆен мӗн пур вӑрҫакан патшалӑхсем пӗрле, ылттан укҫапа шутласа, 586 миллиарт тенкӗ пӗтернӗ. Вӑл мӗн ӆухлӗ пулнине никам та шухӑшласа илейес ҫук. Вӑрҫӑ пуҫлансан иккӗмӗш ҫултах патшалӑхсем йухӑнса туха пуҫларӗҫ. Хапрӑк-савӑтсем нумайӗшӗ, тавар тумалли йапаласем ҫуккипе, машинӑсем кивелнипе, кӑмакасене нимӗнпе хутма ҫуккипе. наӆар ӗҫле пуҫларӗҫ, йе пӗтӗмпех хупӑнса ларӆӗҫ. Вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан хапрӑксемпе савӑтсем анӆах хытӑ ӗҫлерӗҫ. Ҫав хапрӑксемпе савӑтсен хуҫисем хисепӗ ҫук нумай услам илӆӗҫ, вӑрҫӑ тӑсӑлнӑ майпа вӗсен усламӗ те ӳссе пыӆӗ.

Пирӗн Тулари пӑхӑр ӗҫлекен савӑтпа патрун тӑвакан савӑт 1913—14 ҫулта 2.830.000 тенкӗ услам илнӗ, 1914—15 ҫулта—8.390.000 тенкӗ, 1915—1916 ҫулта 15.510.000 тенкӗ услам илнӗ.

Тнепр шывӗ ҫинти металл ӗҫлекен ушкӑн 1913—14 ҫулта 9.640.000 тенкӗ, 1915—16 ҫулта 18.110.000 тенкӗ услам илнӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнӆе ҫавӑн пек хисепӗ ҫук нумай услам илнӗ савӑтсем пит нумай. Ҫавӑнпа ӗнтӗ пуршуйсем вӑл вӑрҫа тапратнӑ, ҫавӑнпа ӗнтӗ вӗсем, халӑха темӗн те пӗр каласа улталаса, вӑл вӑрҫа нимӗҫсене ҫӗниӆӆенех тӑсасшӑн-ӆӗ.

Пуршуйсем вӑл вӑрҫӑра ҫавӑн пек усламсем илсе выртнӑ вӑхӑтра ӗҫлекенсемпе хресӆенсен пурнӑҫӗ хӗсӗнсе пыӆӗ.

Капиталиссем ӗҫлекенсене укҫа сахал паҫҫӗҫ. Кирлӗ йапаласем хакланса пыҫҫӗҫ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҫе ӗҫ хакӗ 5 хут ӳсрӗ, кирлӗ йапаласен хакӗ 15 хут ӳсрӗ. Ҫавӑнпа ӗҫлекен, вӑрҫӑҫҫенхине пӑхсан, 3 хут наҫартарах пурӑна пуҫларӗ.

Хресҫен хуҫайстви те салана пуҫларӗ. Вӑрҫӑ тӑсӑлнӑҫемӗн хресҫен сахалтарах ака пуҫларӗ. 1915 ҫулта хресҫенсем ӗлӗкхинҫен мӗн пурӗ 1.975.437 теҫеттине сахал акнӑ, 1917 ҫулта ӗлӗкхин ҫуррине анҫах ака пуҫларӗҫ.

Вӑрҫӑ пирки пур патшалӑхсен те хуҫайствисем наҫарлана пуҫларӗҫ. Вӑрҫи ҫарӑна пӗлмерӗ, пӗтессӗн те туйӑнмас-ҫӗ.

Вара 1917 ҫулта халран кайса ҫитнӗ ӗҫлекенсемпе хресҫенсем вӑрҫӑ тӑсма тӑрӑшакансене хирӗҫ тӑрса, патшана ырӑнтан кӑларҫӗҫ, йупа уйӑхӗнҫе пуршуйсене ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, капиталиссемпӗн вӑрҫма пӑрахрӗҫ.

Ун хыҫҫӑн ҫасах Австрипе Керманире револютси пулҫӗ, вара сойуснисем вӗсене ҫӗнтерсе ҫаратма тытӑнҫӗҫ.

Анҫах вӑл вӑрҫӑ пӗтнипе вӑрҫӑн тымарӗ пӗтмерӗ, ҫавӑнпа вӑрҫӑсем татах пулма пултараҫҫӗ.

Капиталисӑм пӗтмесӗр вӑрҫӑ та пӗтес ҫук. Капиталисӑма сотсиалисмлӑ револютси анҫах пӗтерме пултарать.

Мӗн вӑл сотсиалисӑмлӑ револютси?

Пуҫ пулса тӑракан класпа хуҫайствӑ йӗрки хуҫайствӑна малалла хӑватлӑланса кайма ҫӑрмантара пуҫласан, ыттисене пӑхӑнса пурӑнакан классем хӑйсен пурнӑҫне малалла йараймн пулсан, вара пурнӑҫ йӗркине пӗтӗмпех улӑштарас вӑхӑт, патшалӑхри ирӗке урӑх клас аллине парас вӑхӑт ҫитет; урӑхла каласан револютси пуҫланать.

Ӗлӗк пуҫ пулса пурӑннӑ клас хӑй аллинҫи ирӗке нихӑҫан та хӑй кӑмӑлӗпе памасть. Вӑл ирӗке ун аллинҫен ирӗксӗр, вӑрҫӑпа анҫах илме пулать.

Ленин йулташ ҫапла калать: «Револютси вӑл-классем ҫапӑҫни. Ун ҫухне классем пӗр-пӗринпе пӗтиҫҫенех ҫапӑҫаҫҫӗ, ун пек хайар вӑрҫӑ та ҫук, тӗнҫере нихӑш пысӑк револютси те классем ҫапӑҫмасӑр пулман“ тет.

Пуршуаҫи револютсийӗ. Патшалӑхра ҫӗр улпуҫӗсем пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра мӗн пур ирӗк патша аллинҫе пулать. Ун пек йӗркене капиталиссем, пуршуйсем пӗтереҫҫӗ. Улпутсене ҫӗнсе, пур ирӗке те пуршуйсем хӑйсен аллине илеҫҫӗ.

Пур ирӗке те пуршуйсен аллине паракан револютсийе пуршуаҫи револютсийӗ теҫҫӗ.

Раҫҫейре пуршуаҫи револютсийӗ 1917 ҫулти нарс уйӑхӗнҫе пулҫӗ. Ӗҫлекенсемпе салтаксем хирӗҫ тӑрса патшана ырӑнтан кӑларсан, пур ирӗке те пуршуйсем илҫӗҫ, мӗншӗн тесен ӗҫлекенсем ун ҫухне вӑйсӑртарах-ҫӗ, ирӗке хӑйсен аллине илеймерӗҫ.

Сотсиалисӑм револютсийӗ. Капиталисӑм пӗтсен сотсиалисӑм пулать. Пролеттарисем пуршуйсене ҫӗнсе пӑрахаҫҫӗ те хӑйсен патшалахӗ (пролеттари тиктаттури) тӑваҫҫӗ. Ҫавна ӗнтӗ сотсиалисӑм револютсийӗ теҫҫӗ. Револютси вӑхӑтӗнҫе кирек хӑҫан та хуҫайствӑ наҫарланать. Сотсиалисм револютсийӗ вӑхӑтӗнҫе хуҫайствӑ пӗтӗмпех пӗтсе ларать.

Кирек мӗнле револютси те пӗр пуҫлансан пӗр-ик кунта пӗтместь.

Сотсиалисӑм револютсийӗ пуринҫен вӑраха пырать. Пролеттарисем хӑватлӑ пулсан та, пуршуйсене вӗсем ҫас ҫӗмӗрсе тӑксан та, сотсиалисӑм револютсийӗ нумай ҫула пырать. Анҫах пуршуйсем вӗсем пит хытӑ ҫапӑҫаҫҫӗ; хӑйсен вӑйӗ сахал пулсан, пролеттарисемпе ҫапӑҫма йут патшалӑхри пуршуйсене илсе килеҫҫӗ, пролеттарисене канлӗ пурӑнса пурнӑҫа малалла йама темӗнле майпа та ҫӑрмантараҫҫӗ: ӗҫлемеҫҫӗ, йури ӗҫе пӑсаҫҫӗ, вут тӗртеҫҫӗ, ҫаплӑрах пролеттарисене вӑрттӑн вӗлереҫҫӗ, тата ытти майпа та пролеттарисемпе ҫапӑҫаҫҫӗ.

Пуршуйсене пӗтӗмпех пӗтерсе пӑрахасси вӑл пӗр ҫула анҫах пымасть.

Хуҫайствӑна ҫӗклесе майа йарасси тата нумай ҫула пырать.

1917 ҫулти йупа уйӑхӗнҫе сотсиалисӑм револютсийӗ пуҫланҫӗ анҫах, вӑл пӗтесси халӗ пит инҫе.

Сотсиалисӑм револютсийӗ пӗтсен вара коммунисӑм пулать.

---

# КОММУНИСӐМ.

**Мӗн вӑл коммунисӑм?** Капиталисӑмлӑ опҫествӑра ҫынсем харпӑр хӑйне хуҫайствӑ тытаҫҫӗ, харпӑр хӑйне ӗҫ хатӗрӗсем туйанаҫҫӗ, пӗрне пӗри тара тытса ӗҫлеттереҫҫӗ. Коммунисӑм ҫухне пуринте пӗр хуҫайствӑ пулать, ӗҫ хатӗрӗсем ӗҫлекенсен аллинҫе пулаҫҫӗ.

Капиталисӑм пӗтсен унӑн мӗн пур сийенӗ те пӗтӗ. Классем пӗтӗҫ, вӗсем пӗр пӗринпе ҫапӑҫса пурӑнасси те пӗтӗ. Ҫынсем пӗрне пӗри пусмӑрласа пурӑнмӗҫ, пурте тан пулӗҫ.

Коммунисӑм вӑхӑтӗнҫе пуринҫен те хастарне кура илӗҫ, пурне те кирлӗ таран парӗҫ. Ун ҫухне пурте опҫествӑшӑн ҫунтан-вартан, халӗ хастарӗ ҫитнӗ таран ӗҫлӗҫ, илессе мӗн кирлине пурне те илӗҫ.

Анҫах пурне те мӗн кирлине парса тӑрас тесен, халӑх хуҫайстви хӑватлӑ пулмалла, мӗн кирлине пӗтӗмпе туса ҫитермелле.

**Коммунисӑм хӑҫан пулма пултарать.** Ҫавӑнпа хапрӑк-савӑтсем пысӑк, хӑватлӑ пулсан, пур ӗҫе те лайӑх машинӑсемпе тусан, тӗнҫери вӑй-хӑватсене ӗҫлеттерме тытӑнсан анҫах коммунисӑм пулма пултарать.

Вӗтӗнсе ҫитнӗ, наҫар хапрӑк-савӑтсемпе коммунисӑм пулаймасть, мӗншӗн тесен ун ҫухне, кайса ӳкиҫҫен ӗҫлесен те, халӑха мӗн кирлине пурне те туса ҫитерме майа килместь.

**Коммунисӑм вӑл-темиҫе мӗльйун ҫын пӗрлешсе пӗр опҫествӑ, пӗр товаришҫествӑ, пӗр ӗҫлекен ерттиль пулни. Ун ҫухне хуҫайствӑна малтанах шухӑшласа хунӑ пек илсе пыраҫҫӗ.**

Ун ҫухне вара, капиталисӑм ҫухнехи пек, йапаласене вӗҫне-хӗрне пӗлмесӗр тумӗҫ, мӗн ҫухлӗ кирлӗ, ҫавӑн ҫухлӗ анҫах тӑвӗҫ. Мӗнле йапала мӗн ҫухлӗ кирлине малтанах шутласа хурӗҫ. Хуҫайствӑра мӗн пуррине, ӗҫлекен ҫын миҫине, опҫества мӗнле йапала мӗн ҫухлӗ кирлине, хуҫайствӑри тата ытти йапаласене те пӗлсе тӑма хӑне кантур пекки тӑвӗҫ.

Хапрӑксемпе савӑтсем нумай йапала тунӑран, капиталисӑм ҫухнехи пек, криҫиссем пулмӗҫ, ӗҫлекенсенӗн криҫис пирки асап курасси пӗтӗ. Хапрӑксемпе савӑтсем хытӑ ӗҫлесен опҫествах ырӑ пулӗ, кирлӗ йапаласем тумашкӑн сахалтарах ӗҫлемелле пулӗ. Пушӑ вӑхӑта вара кам мӗнле ирттерес тет, ҫапла савӑнса ирттерӗ.

Коммунисӑм пуҫлансанах, хапрӑк-савӑтсем хытӑ ӗҫлесе мӗн кирлине пурне те туса ҫитерекен пулиҫҫен, коммунисӑма пурте ӑнласа ӑна йуратакан пулиҫҫен, капиталисӑмран йулнӑ сийенлӗ йапаласем пӗтиҫҫен, — патшалӑх та пулӗ.

Сотсиалисӑм. Коммунисӑмӑн ҫавӑн пек малтанхи вӑхӑтне сотсиалисм теҫҫӗ.

Коммунисӑма ҫынсем ӑнланса ҫитнӗ майпа, хапрӑк-савӑтсем хӑватлӑланса пынӑ майпа, ҫынсене ирӗксӗрлесси те пӗтсе пырӗ. Вара патшалӑхӑн оркӑнӗсем, нимӗн ӗҫ суккипе, хӑйсемех пӗтсе ларӗҫ.

Коммунисӑмӑн малтанхи вӑхӑтӗнҫе (сотсиалисӑм вӑхӑтӗнҫе) ҫынсене мӗн кирлине пӗтӗмпе парса тӑрасси пулайас ҫук. Вӑл вӑхӑтра пурин те мӗн пур халӗпе тӑрӑшса ӗҫлемелле. Унсӑрӑн коммунисӑм пулас ҫук.

Коммунисӑм сасартӑк пулма пултараймасҭ. Каҫхине капиталисӑмра выртса ирхине коммунисӑмра тӑрасси пулмӗ. Опҫествӑ пурнӑҫӗ ун пек ҫас улӑшӑнма пултараймасҭ. Коммунисӑм вӑл сотсиалисӑм револутси хыҫҫӑн, пролеттарисен тиктатури вӑхӑтӗнҫе йеррипе анҫах пулса пыма пултараҭ.

Ӗҫлекенсен класӗ капиталиссен пурлӑхӗсене туртса илсе халӑх аллине парсан, вӑл вара коммунисм йенне пӗрре йарса пусни пулаҭ. Канашлӑ Раҫҫей вӑл утӑма йарса пусрӗ ӗнтӗ. Ҫерет ытти патшалӑхсенҫи ӗҫлекенсене йулҫӗ.

Сотсиалисӑмран коммунисӑма куҫасси-хапрӑк савӑтсем хӑватлӑланнӑ майпа, ҫынсем коммунисӑма ӑнласа илнӗ майпа йеррипе пулса пыраҭ.

---

## МАЛТАНХИ ИНТЕРНАТСИОНАЛПА ПАРИШ КОММУНӖ.

Тӗнҫе вӑрҫи капиталисм усӑллӑхне пӗтӗмпех кӑтартрӗ, пролетарисен куҫне пит лайӑх уҫрӗ. Ҫавӑнтан вара пролетарисем капиталисмпа пур ҫӗрте те пит хытӑ ҫапӑҫа пусларӗҫ.

Пур ҫӗрти пролеттарисен те интересӗсем пӗрех. Ӗҫлекенсене пур ҫӗрте те нусмӑрлаҫҫӗ, капиталиссем пур ҫӗрте те вӗсен йунне ӗҫсе пуйаҫҫӗ, пур ҫӗрте те вӗсем хӑйсене пусмӑрлакансемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Капиталиссене ҫӗнесси ӗҫлекенсем пӗр-пӗриншӗн хытӑ тӑнинҫен килет.

Ҫавӑнпа ӗҫлекенсем тахҫанах пӗтӗм тӗнҫипе пӗрлешсе пӗр ушкӑн-Интернатсионал тӑвасшӑн пулнӑ.

Малтанхи Интернатсионал. Малтанхи интернатсионал 1864 ҫулта Лонтонра пуҫланнӑ. Ӑна «Пӗтӗм тӗнҫери Ӗҫлекенсен Йулташлӑхӗ» (Товаришҫествӑ) тенӗ.

Çав Интернатсионал пӗтӗм тӗнҫери ӗҫлекенсене хӑтарасшӑн, патшалӑхсенҫи ирӗке ӗҫлекенсен аллине парасшӑн, пӗтӗм тӗнҫери ӗҫлекенсене, вӗсен халӑхне те тӗнне те пӑхмасӑр, пӗр тан тӑвасшӑн пулнӑ.

Интернатсионал хӑйӗн пӗр конкресӗнҫе (пухӑвӗнҫе) пулас вӑрҫӑсем ҫинҫен те сӑмах пӗтерсе хунӑ. «Вӑрҫӑ тапранас пулсан, ӗҫлекенсем ӗҫӗсене пӑрахмалла, вӑрҫа хирӗҫ пырса сапастовкӑсем тумалла» тенӗ.

Анҫах малтанхи Интернатсионал нумайҫҫен пурӑнайман, вӑл Париш Коммунӗпе пӗрле пӗтнӗ (1871 ç.).

Париш Коммунӗ. Мӗн вӑл «Париш Коммунӗ?» Мӗншӗн вӑл пӗтсен Интернатсионал та пӗтнӗ?

«Париш Коммунӗ» вӑл—ӗҫлекенсенӗн ҫи ҫаплӑ ӗҫӗ.

1870—71 ҫулсенҫе Хрансипе Пруҫҫи (Кермани ҫӗрӗ) пӗр-пӗрипе вӑрҫнӑ. Вӑл вӑхӑтра Хрансире халӑх пӑлкана пуҫланӑ. Ӗҫлекенсем III Наполеон Понапарт патшана пит йуратман, револютси тапранасси паллах пулнӑ. Пруҫҫипе вӑрҫӑ пуҫланнипе анҫах револютси тапранман, мӗншӗн тесен пурин шухӑшӗ те вӑрҫӑ йенне кайса ӳкнӗ.

Нимӗҫсем хрансуссене йалан ҫӗнтерсе пынӑ, уйӑх ҫурӑ хушшинҫе вӗсен ҫаррине пӗтӗмпех салатса тӑкнӑ; 1870 ҫулти ҫенҫапрӗн 2 кунӗнҫе Ҫетан йатлӑ крепӑҫ патӗнҫе хрансуссен ҫаррине III Наполеон патшапа пӗрлех пӗтӗмпе тыткӑна ҫавӑрса илнӗ. Вара нимӗҫсем хрансуссен аслӑ хулине, Парише илме кайнӑ.

Çавна пӗлсен пӗтӗм Париш тапраннӑ, патшалӑха ҫӑлма «вӑхӑтлӑх правителство» суйланӑ. Ӗҫлекенсем пурте Парише ҫӑлма хатӗрлене пуҫланӑ. Хӑвӑртрах «халӑх квартийӗ» тунӑ, вӑл квартийе 600.000 (ултӑ ҫӗр пин) йахӑн ҫын кӗнӗ. Анҫах пуршуаҫилӗ правителствӑ, патшалӑха ҫӑлас вырӑнне, ӑна нимӗҫсене сутма тытӑннӑ. Вӑл вӑрҫа хатӗрленнӗ ӗҫлекенсенҫен хӑранӑ, нимӗҫсемпе килӗшсе ӗҫлекенсене пӗтӗмпе вӗсен аллине тытса пама шухӑшланӑ. Хрансус пуршуйӗсемшӗн Парише ҫӑлма хатӗрленнӗ ӗҫлекенсем Парише илме пыракан нимӗҫсенҫен хӑрушӑрах пулнӑ.

Çавӑнпа кӑрлаҫӑн 27 кунӗнҫе правителствӑ нимӗҫсемпе килешӳ тунӑ, анҫах ӗҫлекенсем килӗшесшӗн пулман. Вара Париш пуршуйӗсен пуҫлӑхӗ Тйер ӗҫлекенсен хӗҫ-пӑшалӗсене илме тытӑннӑ. Ӗҫлекенсем паман, Паришри халӑх Тйер правителствине хирӗҫ тӑнӑ. Вара Тйер хӑйӗн правителствипе пӗрле Паришрен 30 ҫухрӑмри хулана, Версале тарнӑ. Версалрен вӑл нимӗҫ ҫарӗсемпе пӗр майлӑ пулса Парише йулнӑ ӗҫлекенсемпе ҫапӑҫа пуҫланӑ.

Тйер правителстви кайсан, хулари ирӗк пӗтӗмпе халӑх квартийӗн Тӗп Комиттет аллине йулнӑ. Комиттет вара Паришре Коммунӑ тума тытӑннӑ, вӑл 1871 ҫулти пушӑ уйӑхин 18 кунӗнҫе пулнӑ.

Пушӑ уйӑхин 26 кунӗнҫе Коммунӑ суйланӑ. Унта 90 ҫын кӗнӗ, вӗсенҫен нумайӗшӗ револютсионерсемпе сотсиалиссем пулнӑ, револютсионерсемпе сотсиалиссенҫен 25 ӗҫлекенсем пулнӑ. Çав Коммунах тата Малтанхи Интернатсионал ҫленӗсенҫен 13-шне суйланӑ.

Коммуна пӗтӗм халӑхпа суйланӑ, тарса ӗлкӗреймен пуршуйсем те унта хӑйсен ҫыннисене йанӑ, анҫах вӗсем унтан ҫас тухнӑ.

Коммуна пит сахал пурӑннӑ. Çу уйӑхин 20 кунӗнҫе версалсем (револютсийе хирӗҫ пыракансем) ӗҫлекенсене ҫӗнтерсе Париш крепӑҫне илнӗ,

вара 21 пуçласа 28 ситиђђен, тискер кайăк пек, ĕслекенсене туласа пурăннă.

Çав ерне хушшинђе версалсем, арçынне, хĕр-арăмне, ађи-пăђине тиркемесĕр, 30 пин çынна йахăн персе, йе асаплантарса вĕлернĕ. Париш Коммунĕшĕн, ирĕке пролеттарисен аллине парасшăн, ĕслекенсем мĕн пурĕ 70 пин çынна йахăн пĕтнĕ.

Персе вĕлернинђен пуçне, пуршуйсем 7.500 çын катăрка йанă, 5.000 тĕрмене хупнă. Тĕрмене хупнисене тĕрлĕ майпа асаплантарса, мăшкăл туса пĕтернĕ.

Пуршуйсем Коммуна мĕншĕн çав тери курайман-ши?

Коммунă сахал пурăнса та, пĕр май вĕрсалсемпе çапăçса та, револђутси ĕçне нумай тунă. Вăл ĕçсенђен паллăраххисем ак çаксем: йалан çарă тытассине пĕтерсе халăха хĕç-пăшал валеçнĕ; пур тӳре-шарасене те, çартисене те, ахаллисене те, суйламалла тунă; ђиркĕве патшалăхран уйăрнă, ђиркӳ пурлăхне халăхăн тунă; шкулсене те ђиркӳрен уйăрнă; хуçисем пăрахса кайнă хапрăксене кооперативсене панă; ĕслекенсене çĕрле ĕçлеттерессине пăрахăç тунă; шалу никама та çулталăка 6.000 хранкран (2.400 тенкĕрен) ытла памалла мар тунă; коммунă ытти ырă ĕçсем те нумай тунă. Коммунă саккунсене кăларса анђах ларман, вĕсене вăл ĕçе те кӳртнĕ. Коммунă вăл-ĕçлекенсен ирĕкĕ, пролеттарисен тиктаттури пулнă.

Пуршуйсем çавăнпа ăна пит курайман, çавăнпа вăл пĕтсен савăнса ăсран кайнă, çавăнпа пуршуйсем ĕçлекенсене çĕнтерсен вĕсене, тискер кайăк пек, тула пуçланă.

Коммунăн йанăш ĕçĕсем те пулнă. Пуршуйсемпе вăл ытла çемçе хăтланнă. Пуршуйсем Паришре хăйсен килĕнђи пек пурăннă: урамсенђе халăха коммуна хирĕç пăлхатма тăрăшнă, хăйсен хаçатне кăларнă, Паришрен ирĕккĕн туха-туха кайнă, коммуна хирĕç ирĕккĕн вăй пухнă; вĕсене никам та ђарман. Коммунă тата версаљсен Париш панккисенђе выртакан укçисене те тимен. Вăл панккăсенђе 3 миллиарт хранка йахăн укçа выртнă. Коммунăн хăйĕн ђи кирлĕ ĕçсене тума та укçи пулман. Панккăсене илнĕ пулсан, вăл Коммунă хăватне ӳстернĕ пулĕ-ђĕ, версаљсен вăйне ђакарнă пулĕ-ђĕ.

Çавăнпа пуршуйсем коммуна ђас çĕмĕрсе пăрахнă. Ĕслекенсен класĕ ун ђухне вăйсăр пулнă. Паришри ĕçлекенсене пур йенђен те хупăрласа илсен, ытти хуласенђи ĕçлекенсем вĕсене пулăшма пултарайман. Коммунă хăвађĕ кунсерен ђакса пынă, версаљсен çарри ӳссе, тĕреклĕленсе пынă. Çапла 1871 çул çуралнă коммуна пуршуйсем пĕтерсе пăрахнă.

Коммунă пĕтсен вара Малтанхи Интернатсионал та пĕтнĕ, унăн йађĕ анђах йулнă. 1876 çулта çав Интернатсионалăн йађĕ те пĕтнĕ. Анђах вăл Интернатсионалăн патшалăхсенђи ирĕке çапăçса илсе пролетарисене парас шухăшĕ пĕтмен. Вăл шухăшсем ĕçлекенсен класĕнђе халиђђенех пурăнаççĕ, вăл шухăшсене ĕçлекенсем тăва та пуçларĕç.

# РАҪҪЕЙРЕ РЕВОЉУТСИШӖН ҪАПӐҪНИ.

Револ̧утсишӗн ҫапӑҫни тесе мӗне калаҫҫӗ? Револ̧утсишӗн ҫапӑҫни тесе капитализмлӑ опђестварӑ асапланса пурӑнакан ӗҫлекенсемпе хресђенсем хӑйсене пусмӑрлакан пуршуйсемпе, пуршуаҫилӗ патшалӑхпа ҫапӑҫнине калаҫҫӗ. Револ̧утсишӗн ҫапӑҫни вӑл—классем ҫапӑҫни. Вӑл ҫапӑҫу капитализмпа пӗрле пуҫланаҭ, унпа пӗрле пурӑнаҭ, унпа пӗрлех пӗтет.

Раҫҫейре револ̧утсишӗн ҫапӑҫу 1860—70 ҫулсенђе пуҫланнӑ. Малтан ҫип авӑрлакан Невски савӑтра ӗҫлекенсем сапастовкӑ тунӑ. Вара сапастовкӑ Мускава, Питӗре, Орехово-Суева, Ревеле, Киеве, ытти ҫӗре те сарӑлнӑ.

Ҫав пӑлхану 1870 ҫулта пуҫланса 1879 ҫулта тин ђарӑннӑ. Вара правител̧ствӑ ирӗксӗрех ађасене хытӑ ӗҫлеттересрен сыхласси ҫинђен, хапрӑксене инспектӑрсем лартасси ҫинђен саккун кӑларнӑ.

Хапрӑк-савӑтсем нумайланнӑ майпа сапастовкӑсем те ђас-ђасах пула пуҫланӑ, сапастовкӑсене нумайран нумай ӗҫлекенсем хутшӑна пуҫланӑ. 1872 ҫулта пӗр Лотҫ йатлӑ хулара анђах 30.000 ӗҫлекен сапастовкӑ тунӑ. 1896 ҫулта пир тӗртекен тӗрлӗ хапрӑксенђе ӗҫлекенсем пурте сапастовкӑ тунӑ. Вӑл сапастовкӑ 14 куна пынӑ, ӑна 30.000 ӗҫлекен хутшӑннӑ.

Ҫавӑнтан вара ӗҫлекенсене кунне 12—14 сехет ӗҫлеттерес вырӑнне, $11^1/_2$ сехет анђах ӗҫлеттере пуҫланӑ.

Вӑл ҫапӑҫу сарӑлса, хӑватлӑланса пынинђен пуҫне тата улӑшӑнса та пынӑ. Раҫҫейре капитализм пуҫланнӑ ҫулсенђе сапастовкӑ тунӑ ђухне ӗҫлекенсем хапрӑк ҫурђӗсене ҫӗмӗрнӗ; правлешисене, машиниссене вӗлернӗ; ҫавӑн пек ӗҫсем тата нумай тунӑ. 90 ҫулсенђе ӗҫлекенсем сапастовкӑсене лайӑхрах шухӑшласа, йӗркелӗ тӑва пуҫланӑ, хӑйсен пурнӑҫне ҫӑмӑллатма ыйта пуҫланӑ.

Анђах правител̧ствӑ ӗҫлекенсене хирӗҫ йалан пӗлеђђейскисене, салтаксене йанӑ. Ӗҫлекенсем хӑйсен пурнӑҫне ҫӑмӑллатасшӑн кӗрешме тытӑнсан кирек хӑҫан та вӗсен правител̧ствӑпа, тата унӑн тарҫисемпе ҫапӑҫмалла пулнӑ.

Ӗҫлекенсем правител̧ствӑпа тытӑнсах ҫапӑҫма 1899—1900 ҫулсенђе пуҫланӑ. Ҫавӑнтан вара ӗҫлекенсем сапастовкӑ вӑхӑтӗнђе митинксем анђах мар, хӗрлӗ йалавсем йӑтса правител̧ства хирӗҫ темонстратсисем те тунӑ.

Ҫав вӑхӑтра ӗҫлекенсем хушшинђе правител̧ствӑпа ҫапӑҫакан, револ̧утси тума тӑрӑшакан ушкӑнсем пула пуҫланӑ, вӗсем вара ӗҫлекенсене йертсе пынӑ.

1895 ҫулта Питӗрте «Ӗҫлекенсен класне хӑтарасшӑн ҫапӑҫакан ушкӑн» пулса кайнӑ, Иваново-Вознеҫенскӑра — Иваново-Вознеҫенскӑри ӗҫлекенсен ушкӑнӗ» пулнӑ. 1896 ҫулта Мускавра «Мускаври ӗҫлекенсен ушкӑнӗ» ӗҫле пуҫланӑ. 1897 ҫулта Кийеври «Ӗҫлекенсен класне хӑтарасшӑн ҫапӑҫакан ушкӑн» пулса кайнӑ. Ҫавӑн пек ушкӑнсем тата ытти ҫӗрте те пула пуҫланӑ.

Ӗҫлекенсен ушкӑнӗсем 70 ҫулсенђех пуҫланнӑ. Ун ђухне икӗ уш-

кӑн пулнӑ: Отессӑра—«Вырӑс ӗҫлекенсен кӑнтӑр йенӡи ушкӑнӗ», Питӗрте—«Вырӑҫ ӗҫлекенсен ҫур-ҫӗр йенӡи ушкӑнӗ» пулнӑ.

Анӡах вӑл ушкӑнсем пӗӡӗккӗ пулнӑ, нумай пурӑнайман, ӗҫлекенсем хушшинӡе нумайах ӗҫ тӑвайман, мӗншӗн тесен ӗҫлекенсем ун ӡухне тӗттӗм, хӑравҫӑ пулнӑ.

Ревоӆутсишӗн тӑрӑшакан ҫав ушкӑнсем пурте вӑрттӑн ӗҫленӗ. Правитеӆствӑ вӑл ушкӑнсене кӗрекенсене тытса кайнӑ, тӗрмере ҫӗртнӗ, айакри ҫӗрсене йанӑ.

Йаппуӆ вӑрҫинӡе (1904—1905 ҫулсенӡе) ӗҫлекенсем пӑртак лӑпканнӑ; вӑл вӑрҫӑ пӗтнӗ-пӗтменех вӗсем пит хытӑ пӑлхана пуҫланӑ, кайран мӗн пур Раҫҫейри ӗҫлекенсем сапастовкӑ тунӑ, хӗҫ-пӑшал тытса правитеӆства хирӗҫ тӑнӑ. 1905 ҫулта мӗн пурӗ 13.995 савӑт-хапрӑксем ӡарӑннӑ, вӗсенӡе ӗҫлекенсем пурте, виҫӗ мӗӆйун ҫынна йахӑн, сапастовкӑ тунӑ.

Й у н т ӑ к ӑ н н ӑ в ы р с а р н и к у н. Вӑл Ревоӆутси (ӗлӗкхи стиӆпе) кӑрлаӡӑн 9 кунӗнӡе пуҫланнӑ.

Кӑрлаӡӑн 1-мӗш кунӗнӡе Путтилӑх савӑтӗнӡен темиҫе ӗҫлекенсене кӑларса йанӑ. Ӗҫлекенсем вӗсене кайалла илме хушнӑ. Савӑт хуҫи вӗсене илмен. Вара, кӑрлаӡӑн 3-мӗш кунӗнӡе, ӗҫлекенсем пурте, сапастовкӑ тума пуҫланӑ. Ун хыҫҫӑн Питӗрти ытти савӑтсенӡе ӗҫлекенсем те сапастовкӑ тунӑ. 7-мӗш кун вӑл сапастовкӑ пӗтӗм Раҫҫейе сарӑлнӑ.

Вӑрҫӑ пирки халран кайса ҫитнӗ ӗҫлекенсем патша патне кайса унтан хӑйсен пурнӑҫне ҫӑмӑллатма ыйтма шухӑш тытнӑ.

Кӑрлаӡӑн 9 кунӗнӡе вӗсем пурте, ӡиркӳ йалавӗсем, турӑшсем йӑтса, «Ей ҫӳлти аттемӗр» йурласа хӗллехи творец патне кайнӑ. Вӗсене Каппон хушаматлӑ пуп йертсе пынӑ.

Анӡах вӗсене патша патне йаман, пӑшалпа пере пуҫланӑ, вара хисепсӗр нумай ҫынна вӗлерсе, суран туса пӗтернӗ.

Кӑрлаӡӑн ҫав 9-мӗш кунне ӗнтӗ «йун тӑкӑннӑ вырсарни кун» теҫҫӗ. Ҫав кун ӗҫлекенсем патшапа капиталҫӑсем хӑйсен тӑшманне лайӑх ӑнласа илнӗ. Вара ӗслекенсем пур ҫӗрте «патша кирлӗ мар» тесе сапастовкӑсем, темонстратсисем тӑва пуҫланӑ.

Ҫӗртме уйӑхин 14—15 кунӗнӡе Отессӑра «Поӡомкин» йатлӑ проненоҫес ҫинӡи маттруссем правитеӆства хирӗҫ тӑнӑ. Вӗсем правитеӆствӑпа 11 кун ҫапӑҫнӑ.

1905 ҫ у . Халӑх пӑлханӑвӗ хӑватлӑланса пынӑ. 1905 ҫулти йупа уйӑхӗнӡе митинксем тунӑ; темиҫешер пин ҫын темонстратсисем туса ҫӳренӗ.

Хуласенӡе нумайӗшӗнӡе халӑх касаксемпе, шантарсемпе ҫапӑҫа пуҫланӑ, урамсенӡе парикатӑсем туса ҫапӑҫнӑ.

Йупа уйӑхин 13 кунӗнӡе Питӗрти ӗҫлекенсем «Ӗҫлекенсен Канашӗ» туса хунӑ. Вӑл Канаш пуҫланса кайнӑ Ревоӆутсийе хӑй аллине илнӗ. Ун пек Канашсем ытти хуласенӡе те пула пуҫланӑ (Харккӑвра, Мускавра, Кийеврс, ыттисенӡе те).

Йупа уйӑхин 17 кунӗнӡе патша правитеӆствийӗ тӗрлӗ ирӗклӗх парасси ҫинӡеп, Патшалӑх Туми пухасси ҫинӡен манихвис кӑларнӑ.

Анӡах ӑна правитеӆствӑ ӗҫлекенсене улталасшӑн анӡах тунӑ. Ҫав

манихвисе кăларсан правитеђствă, вăй пухса, ĕçлекенсем çине хăй кĕре пуçланă. Мускаври, раштав уйăхĕнђе, хĕç-пăшалпа хирĕç тăнă ĕçлекенсене правитеђствă çĕмĕрсе пăрахнă, ун хыççăн ђасах мĕн пур Раççейри хура халăха çĕнтернĕ.

Вара реаксийĕн (кунта реакси тесе револютси ĕçĕ кайалла кайнине калана) тискер çулĕсем пуçланса кайнă. Патша йăнăралĕсем, патрунсемпе штыксене хĕрхенмесĕр, йĕрке кўме тытăннă. Пуршуйсем ĕçлекенсемпе хресђенсене, хăйсене хăратнăшăн, пит хытă тавăрнă.

Ĕçлекенсен ушкăнĕсене çĕмĕрсе тăкнă, ĕçлекенсене нумайĕшне персе, çакса вĕлернĕ, катăрка, Çипире йанă. Вăл ĕçре Столыпин министр пит ђапа тухнă, йна çавăншăн «çакакан» тенĕ.

Вара сапастовкă тађака пуçланă. 1905 çулта виçĕ мĕђйун ĕçлекен сапастовкă тунă, 1907 çулта—740.000, 1908 çулта—176.110, 1909 çулта—64.166, 1910 çулта—46.623 çын анђах сапастовкă тунă.

Çапла револютсишĕн çапăçасси 1912 çулђђен ђакса пынă, Йупа уйăхĕнђе ирĕксĕр панă ырăлăхсене правитеђствă кайалла илнĕ, Йупа уйăхин 17 кунĕнђе кăларнă манихвисрен хуђĕ анђах йулнă. Патшалăх Туми те нимĕн тума та пултарайман, ĕлĕк çапăçнине, малашне тепĕр хут çапăçма хатĕрленмеллине анђах астутарса тăнă. Револютси пĕтмен, вăл кайалла анђах ђакса пынă.

Ленă ĕçĕсем. 1912 çулта револютси ђакма ђаранна.

1912 çулти ака уйăхин 4 кунĕнђе (кивĕ стилђпе), Çипир вăрманĕ варринђе, Ленă шывĕ патĕнђе, ылттăн кăларакан çĕрте, ĕçлекенсене, хăйсен пурнăçне çăмаллатасшăн сапастовкă тунăшăн, нумайĕшне персе вĕлернĕ: 320 вĕлерсех пăрахнă, 150 амантса пĕтернĕ.

Капиталçăсене пуйтарасшăн, патша тарçисем ĕçлекенсен йунне тăкнă.

Çавăнтан вара ĕçлекенсем пĕтĕм Раççейре пит хытă пăлхана пуçланă. Çу уйăхин 1 кунĕнђе пит хăватлă темонстратси тунă. Çав кун пĕр Питĕрте анђах 200.000 ĕçлекен сапастовкă тунă. Пĕтĕм Раççейĕпе сапастовкă тăвакан ĕçлекенсем 500.000 çынран та ытла пулнă.

Çапла 1912 çулта ĕçлекенсем тĕрлĕ çĕрте 732 хут сапастовкă тунă.

Малалли çулсенђе вĕсем тата хытă пăлхана пуçланă.

1913 çулта 1.370 тĕлте сапастовкă пулнă, 1914 çулта, авкуст уйăхĕнђен анђах 3.534 сапастовкă пулнă, çав сапастовкăсене 1.337.500 çын хутшăннă. Сапастовкăсен тăватă пайĕнђен виçĕ пайĕнђе ĕçлекенсем правитеђствăна хирĕç пынă.

Вăрçă вăхăђĕ. Тĕнђе вăрçи пуçлансан ĕçлекенсем пăлханасси пĕте пуçланă. 1914 çулта авкустăн 1 кунĕнђен пуçласа çĕнĕ çула çитиђђен 41 сапастовкă кăна пулнă, унта 8.661 çын анђах хутшăннă.

Вăрçă ĕçлекенсен çаррине салатрĕ. Ун ђухне сапастовкă тăвакансене хирĕç пит хайар саккунсем кăларнăђĕ. Сапастовкă тунăшăн персе вĕлеређђĕç. Çитменнине тата ĕçлекенсен ушкăнĕсен хаçађĕсене нумай тĕлте хупса лартрĕç. Çавăнпа ĕçлекенсене ун ђухне çапăçма пит хĕн пулђĕ.

Унтан тата ватăрах, тĕреклĕрех, хăйулăрах ĕçлекенсене, хирĕç пыма хăраманнисене, хронта йарса пĕтерђĕç, вĕсен вырăнне тĕнђе йĕркине

пĕлсе çитеймен çамрăксене, хĕр-арăмсене, аҫа-пăҫасене илҫĕç. 1915 çулта ĕçлекекенсем хушшинҫе çĕр çынтан хĕрĕхĕшĕ аҫасемпе хĕр-арăмсем пулнă, вăрçă тăсăлнăçемĕн вĕсем нумайланса пынă.

Унтан пуçне тата ĕçлекенсем хушшине, хронта илсе кайасран хăранипе, тĕрлĕ лавка хуçисем, спекуҫантсем, йал пуйанĕсем пайтах кĕнĕ. Вĕсем правитеҫствăпа çапăçасси çинҫен шухăшламан та, хăйсене анҫах сыхă усрама тăрăшнă.

Пролеттарисем çапах та вичĕ çул вăрçă хушшинҫе хăватлăланса çитсе патшана çĕнтерсе пăрахрĕç.

Нарăс уйăхĕнҫи револютси. Вăрçă пирки халăх йухăнса çите пуçларĕ. Кирлĕ йапаласен хакĕ таçта çитех ÿссе кайрĕ. Çав вăхăтрах патша йыттисем халăха темĕн тĕрлĕ măшкăл туса пĕтерҫĕç. Çавăнпа ĕçпе пурăнакансем пурте правитеҫства курайми пулҫĕç. 1916 çул пĕтсе килнĕ çĕре халăх пăлханма тытăнҫĕ. 1917 çулти нарăс уйăхĕнҫе револютси пуçланса кайрĕ.

Нарăс уйăхин 21 кунĕнҫе Питĕр патĕнҫи Колпино йатла хулари ĕçлекенсем сапастовкă турĕç. 27-мĕшĕнҫе сапастовкă Питĕрти савăтсене сарăлҫĕ. Ĕçлекенсем хĕрлĕ йалавсем йăтса урама тухрĕç; пуш уйăхин 10 кунĕнҫе сапастовкă пур çĕре те сарăлҫĕ. Ĕçлекенсем урамсенҫе патша плеҫҫейскисемпе, шантарĕсемпе çапăça пуçларĕç.

Пуш уйăхин 12 кунĕнҫе ĕçлекенсем йенне салтаксем кайа пуçларĕç. Пĕлеҫҫейскисемпе шантарсене çĕнтерҫĕç. Патша правитеҫствине вырăнтан кăларҫĕç. Раман Микулайне, унăн ҫаплăрах çыннисене тытса хупрĕç, пĕтĕм ирĕк вара Патшалăх Тумин пĕр вăхăта тунă Кăмиттетне кучрĕ, пушă уйăхин 15 кунĕнҫе Кăмиттет аллинҫен вăхăтлăха тунă Правитеҫствăна куçрĕ. Вăл Правиҫства П. Миҫукох (пуршуйсен прохвессăрĕ), А. Куҫкох (Мускав купси), Терешҫенко (пысăк сахăр савăҫĕ хуçи), кнеç Лвох (çĕр улпуҫĕ) тата А. Керенски (ваккат, есер) кĕнĕ-ҫĕ.

Çапла ĕнтĕ ĕçлекенсемпе салтаксем патшаран туртса илнĕ ирĕк пуршуйсен аллине лекрĕ.

Вăл вăхăтра ĕçлекенсем вăйлах пулайман, вĕсен коммунислă партти те ун ҫухне вăйсăр пулнă; пуршуйсем вăйлă пулнă, вĕсен йертсе пыракан оркăн та пулнă, вăл оркăн—Патшалăх Туми пулнă. Çав Тумă ĕнтĕ Вăхăтлăх Правитеҫствă тунă.

Анҫах пуршуйсемшĕн тăрăшакан, вăрçа нимĕçсене çĕниҫҫенех тăсма тăрăшакан вăхăтлăх правитеҫствă тунипе револютси ҫарăнмарĕ, мĕншĕн тесен тапраннă халăх ăна йуратмарĕ.

Вара «Ĕçлекенсемпе Салтаксен Канашĕ» турĕç. Вăл ĕçпе пурăнакансене хăй тавра пухса вĕсене йертсе пыраç пуçларĕ. Коммуниссен Парттийĕ те хытă ĕçле пуçларĕ, хăй тавра револютсишĕн тăракан ĕçлекенсемпе салтаксене пухрĕ, вăрçа ҫарма, ирĕке Канашсене пама хуша пуçларĕ.

Пуршуйсем сакăр уйăх пуç пулса тăҫĕç. Çав вăхăтра тăвата хут хăйсен правитеҫствине улăштарҫĕç, унта есерсемпе меншевиксене те, хăйсен майлă пыраканскерсене, кÿртрĕç.

Вăхăтлă Правитеҫствă ирĕке Канашсене, ĕçлекенсене парасшăн мар пулса, темĕн те туса пăхрĕ. Ĕçлекенсен темонстратсисене тупăпа йе пă-

шалла персе салатат-ҫӗҫ. Канаш ирӗкӗ тӑвас тесе калаҫакансене тытса хупаҫҫӗҫ. Улпутсен ҫӗрӗсене илнӗшӗн хресҫенсене персе вӗлереҫҫӗҫ, ҫӗрӗсене кайалла туртса илсе улпутсене параҫҫӗҫ. Ӗҫлекенсемпе хресҫенсем Вӑхӑтлӑ Правитеҫства ҫавӑншӑн кураймн пулҫӗҫ. Вӑрҫа ҫарманшӑн ӑна салтаксем те йуратмарӗҫ.

Поҫшевиксем «Капиталиссен министрисем кирлӗ мар», «Капиталиссем ытти халӑхсене ҫаратасшӑн тапратнӑ вӑрҫа ҫармалла», «Канаш Ирӗкӗ сывӑ пултӑр», тенӗ сӑмахӗсем пур ӗҫлекенсене те, хресҫенсене те, салтаксене те нит кӑмӑллӑ пулҫӗҫ, вӑл сӑмахсем пӗтӗм Раҫҫейе сарӑлҫӗҫ.

Йупа уйӑхӗнҫи револютси. 1917 ҫулти йупа уйӑхӗнҫе (ҫӗнӗ стиҫпе ҫӳк уйӑхин 7 кунӗнҫе) Вӑхӑтлӑх Правитеҫства кӑларса пӑрахрӗҫ, вара Раҫҫей Канашлӑ пулса тӑҫӗ.

Вӑл ӗҫ поҫшевиксем тӑрӑшнипе пулҫӗ.

Коммуниссен Парттийӗ (поҫшевиксем) авӑн уйӑхӗнҫенех пуҫласа ӗҫлекенсене ирӗке илме хатӗрле пуҫларӗ. Ҫав ӗҫ ҫинҫен шухӑшлама ҫаплӑрах коммуниссем Питӗре темиҫе хут пухӑннӑ. Йупа уйӑхин 16 кунӗнҫе (кивӗ стиҫпе) Питӗрти Канаш Пленумӗ «Военно-Револютсионни Комиттет» тунӑ. Вӑл Комиттете поҫшевиксен ҫарӑсем хушшинҫе ӗҫлекен ушкӑнӗсенҫен, Питӗрти Канашӑн салтак пайӗнҫен, сулахайри еҫерсен ҫарӑсем хушшинҫе ӗҫлекен ушкӑнӗсенҫен ҫынсем кӗнӗ. Комиттет малтан хӑйӗн вӑйӗ мӗн ҫухлине шутласа пӑхнӑ. Питӗрти салтаксем пурте Канаш ирӗкӗшӗн пулнӑ, йункӑрсемпе хӗр-арӑм патаҫйунӗсем анҫах Вӑхӑтлӑх Правитеҫствӑшӑн тӑнӑ.

Йупа уйӑхин 24 кунӗнҫе Правитеҫствӑ пуҫлӑхӗ Керенски В.-Р. Комиттете тытса хупма хушнӑ. Вара Йупа уйӑхин 25 кунӗнҫе В.-Р. Комиттетӗн ҫаррисем, ҫапӑҫмасӑрах, Питӗрти ҫаплӑ уҫрептенисене (Патшалӑх панкине, Телекраха, ваксалсене) илнӗ, капиталиссен правитеҫствине Хӗллехи твореспа йӗри тавра хупӑрланӑ.

Йупа уйӑхин 25 кунӗнҫе каҫхине Хӗллехи твореса пӗтӗмпех илнӗ, правитеҫствӑра ларакансене пурне те тытса хупнӑ. Пӗр Керенски анҫах тарса хӑтӑлнӑ. Ҫав каҫах Канашсен иккӗмӗш сиесӗ уҫӑлнӑ. Вӑл сиесре пуринҫен ытла поҫшевиксем пулнӑ. Сиес мӗн пур ирӗке хӑй аллине илнӗ, тепӗр куннех ӗҫлекенсемпе хресҫенсен Правитеҫстви тунӑ, Правитеҫствӑ пуҫлӑхне Ленин йулташа лартнӑ.

Ҫав сиесех вӑрҫа пӗтерсе килӗшесси ҫинҫен, ҫасрах улпутсен ҫӗрне илсе хресҫенсене ахалех парасси ҫинҫен, тата урӑх ҫаплӑ саккунсем те кӑларнӑ.

Питӗртен кайран ӗҫлекенсемпе салтаксем Мускавра, Кийевре, тата ытти хуласенҫе те пуршуйсене ҫапӑҫса ҫӗнтерсе ирӗке хӑйсен аллине илнӗ.

Йупа уйӑхӗнҫен кайран пуршуйсем темиҫе хут та ӗҫлекенсемпе хресҫенсенҫен ирӗке кайалла туртса илме тытӑннӑ. Вӗсене ытти патшалӑхсенҫи пуршуйсем, еҫерсем, меншевиксем, тӗрлӗ вӑрӑ хурахсем пулӑшнӑ. Вӗсене пула Канаш ирӗкӗ темиҫе хут та пӗтес патне ҫитрӗ. Анҫах ӗҫлекенсемпе хресҫенсем вӗсене пурне те ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ.

Канаш ирӗкӗ хӑйӗн тӑшманӗсемпе ҫапӑҫса тата хытӑрах тӗреклӗленҫӗ. Ӗнтӗ ӑна нимӗнле вӑй-хӑват та ҫӗнес ҫук.

## Р. К. П. (поҫшевиксен) ИСТОРИЙЕ.

Партти пуҫланса кайни. Коммуниссен Парттийĕ пуҫланни пайтах пулаť. Вăл-Раҫҫейри ĕҫлекенсем хăйсен классне туйа пуҫласан, вĕсен хушшинҫе революцишĕн тăрăшакан ушкăнсем пулсан (1870 ҫулсенҫе) пуҫланнă. Анҫах ун ҫухнех ăна коммуниссен парттийĕ теме йураман. 1903 ҫулта, Раҫҫейри Сотсиал Темократсен 2-мĕш сйесĕнҫе, вăл вара коммуниссен парттийех пулса кайнă, унăн пуҫлăхĕ Ленин йулташ пулса тăнă (Ун ҫухне вăл парттийе коммуниссен парттийĕ темен-ха, поҫшевиксен парттийĕ тенĕ).

1898 ҫулти пуш уйăхĕнҫе Минскăра сотсиал-темократ ушкăнĕсен малтанхи сйесĕ пулнă. Вăл сйесе Питĕртен, Мускавран, Кийеврен, Йекатеринославран, йеврей ĕҫлекенĕсен ушкăнĕнҫен (Пунтран), тата ыттисем те пынă.

Вăл сйес ĕҫлекенсен тĕрлĕ ушкăнĕсене пĕрлештерсе Раҫҫейри Ĕҫлекенсен Сотсиал-Темократ Парттийĕ тунă, Парттийĕн уставне те ҫырнă, кайран манихвис кăларнă. Вăл манихвис ҫинҫе Партти ĕҫлекенсемшĕн ҫăн-малтан тĕрлĕ ирĕк туртса илме, сотсиалисăм тума тăрăшасси ҫинҫен ҫырнă.

Анҫах вăл Партти нумайах ĕҫ тăваймарĕ. Сйес пĕтсенех сйесе пухăннă ҫынсене, тата Тĕп Комиттете суйланисене пурне те тенĕпе пĕрех тытса хупнă. Вара сотсиал-темократсен ушкăнĕсем, ĕлĕкхи пекех, пĕрпĕринҫен уйрăм ĕҫленĕ. Пĕр манихвис анҫах вĕсене ҫул кăтартса тăнă, вĕсене йертсе пыракан Тĕп Комиттет пулман.

Ĕҫ ҫавăн пĕк Иккĕмĕш сйесҫен пынă. Вăл сйес Лонтонра 1903 ҫулта пулнă, унта 43 телекат пухăннă.

Иккĕмĕш сйесре Раҫҫейри сотсиал-темократсен пĕр-пĕринҫен уйрăм ĕҫлекен ушкăнĕсене пĕрлештерсе пĕр Партти тăвасшăн пулнă. Анҫах вăл ĕҫ тухман; сйес икке уйăрăлнă: хăш телекатсем пуршуйсемпе хытă ҫапăҫасшăн пулнă (поҫшевиксем), хăшĕ вĕсемпе килĕштерсе пурăнасшăн пулнă (меншевиксем).

Партти прокраммине пурте йышăннă. Прокраммă ҫинҫе «ĕҫлекенсен классне пĕтĕмпех хăтарас тесен, патшалăхри мĕн пур ирĕке илсе пролеттарисен тиктаттури тумалла, унсăрăн сотсиалисăм тума та майа килмесť» тесе хытă каланă.

Поҫшевиксемпе меншевиксем. Прокраммине ҫапла пурте йышăнсан, сйес мĕнле ĕҫлемелли ҫинҫен, пуршуйсемпе мĕнле пурăнмалли ҫинҫен калаҫа пуҫланă. Ун ҫухне вара телекатсем икĕ ушкăна уйăрăлнă.

Пысăкрах ушкăнĕ каланă: «Пуршуйсемпе нихăҫан та килĕшмелле мар, вĕсен усал ĕҫĕсем ҫинҫен куллен-кун ĕҫлекенсене каласа тăмалла» тенĕ. Пĕҫĕккĕрех ушкăнĕ каланă: «пуршуйсемпе ҫав терийех тăшман пулма йурамасť, вĕсемпе мĕнле те пулин килĕштерсе пурăнма та йураť» тенĕ.

Пысăкрах ушкăнне «поҫшевиксем» тенĕ, вĕсен пуҫлăхĕ Ленин пулнă. Пĕҫĕккĕрех ушкăнне «меншевиксем» тенĕ, вĕсен пуҫлăхĕ Мартăх пулнă.

Партти уставин малтанхи пай çинҫен, кама Партти ҫленӗ тесе шутласси çинҫен калаçнӑ ҫухне Ленин йулташ каланӑ: «Кам прокрамма йышӑнаҭ, ҫлен укçи тӳлет, тата парттийӗн мӗнле те пулин ушкӑнӗнҫе тӑрса Парттишӗн ӗçлет, çавна анҫах Партти ҫленӗ теме йураҭ» тенӗ.

Пуршуйсемпе килӗштерсе пурӑнас тийекенсем каланӑ: «Партп ҫленӗ пулма прокрамма йышӑнса ҫлен укçи тӳлесен те çитӗ, Партишӗн ӗçлемесен те йрує» тенӗ.

Партти ун ҫухне пытанса анҫах ӗçленӗ. Парттишӗн ӗçлеме пит хӑрушӑ пулнӑ, çавӑнпа Ленин йулташ каланӑ пек тусан, Парттийе револютсишӗн тӑрӑшакан, нимӗнрен те хӑраман çынсем анҫах кӗме пултарнӑ. Меншевиксем каланӑ пек тусан, Парттийе хӑравçӑ çынсем те, пуршуйсем те кӗме пултарнӑ; ун пек çынсенҫен правитеҫствӑпа хӗрсе çапӑçнӑ вӑхӑтра усси пулма пултараймасҭ. Çавӑнпа Ленин йулташ сӑмахӗ тӗрӗс пулнӑ. Çапахта кама Партти ҫленӗ теме йурасси çинҫен калаçнӑ ҫухне меншевиксем майлӑ телекатсем кӑшт ытларах пулнӑ.

Ытти ӗçсем çинҫен калаçнӑ ҫухне поҫшевиксем майлисем йалан нумайрах пулнӑ. Çавӑнпа Тӗп Комиттете те полшевиксене нумайрах кӳртмелле пулнӑ. Анҫах меншевиксем ун пек тӑвасшӑн пулман, вара Тӗп Комиттете хӑйсен çыннисене йаман.

Çавӑнтан вара поҫшевиксемпе меншевиксен уйрӑмӗ пысӑкланнӑçемӗн пысӑкланса, нумайланнӑçемӗн нумайланса пынӑ: поҫшевиксемпе меншевиксем пӗр Партти марри, вӗсем икӗ Партти иккенӗ паллӑ пулнӑ. Кайран темиçе хут та поҫшевиксемпе меншевиксене пӗрлештерсе пӗр Партти тума хӑтланнӑ, анҫах нимӗн те тухман. Поҫшевиксемпе меншевиксем йалан пӗр-пӗринҫен уйрӑм ӗçленӗ.

1905 çулти çу уйӑхӗнҫе, револютси пуçланас умӗн, Лонтонра III сиес пулнӑ. Унта телекатсем 29 тӗлтен пынӑ. Сиесре меншевиксем тӑххӑрӑн анҫах пулнӑ. Вӗсем вара сиесрен пӑрахса кайса Шеневӑра (Швейтсари хули) Пӗтӗм Раççейӗн Малтанхи Конхеренси тунӑ.

Çапла III сиес—поҫшевиксен сиесӗ пулнӑ. Сиесре—патша правитеҫствине хӗç-пашалпа хирӗç тӑрса çӗмӗрсе пӑрахасси çинҫен, револютсишӗн тӑрӑшакан правитеҫствӑ тӑвасси çинҫен, ӗçлекенсемпе хресҫенсен тиктаттури тӑвасси çинҫен калаçса сӑмах пӗтернӗ.

Çапла ӗнтӗ поҫшевиксем пуршуйсемпе нихӑçан та килӗшесшӗн пулман, ӗçлесе пурӑнакан хресҫенсене пролеттарисен тусӗ вырӑнне хурса вӗсем, патша правитеҫствипе çапӑçнӑ ҫухне, пулӑшасса шанса тӑнӑ. Меншевиксем хресҫенсем çине шанман, вак пуршуйсем çине шаннӑ.

1905 çулти револютси пуласса поҫшевиксем тахçантанпах пӗлсе, ӑна кӗтсе тӑнӑ. Вӑл револютси III сиес малтан каласа хунӑ пекех пулнӑ: малтан пӗтӗм Раççейри ӗçлекенсем сапастовкӑ тунӑ, вара хӗç-пӑшал тытса правитеҫства хирӗç тӑнӑ, вӗсене поҫшевиксем йертсе пынӑ; йалсенҫе хресҫенсем тапраннӑ.

Йупа уйӑхин 13 кунӗнҫе Питӗрте «Ӗçлекенсен Канашӗ» тунӑ. Çав Канаша тӑвасси çинҫен пуринҫен малтан, халӗ Канашсене хирӗç пыракан, меншевиксем калаçа пуçланӑ.

Анҫах вӗсем револютси ӗçне Канаш хӑй аллине илессе, вӑл пур ирӗке

те илме тăрăшасса кĕтмен. Вĕсем шухăшланă: «Канаш вак пуршуйсене тапратса йарĕ, вара революци правительства çĕнĕ» тенĕ.

Революци пĕте пуçласанах польшевиксемпе меньшевиксене пĕрлештерме Стокхольмра (Швеци хули) 4-мĕш сиес пуллнă. Унта 57 тĕлтен 111 делекат пынă, вĕсенчен 62 меньшевиксем, 46 польшевиксем пулнă. Меньшевиксем нумайрах пулнипе, сиес пур ĕçе те пуршуйсем майлăрах тунă: правительства хирĕç тăрассине те, прохсойуссем çинчен те, тата ыттисене те. Прохсойуссем парттисенчен пĕтĕмпех уйрăм тăмалла тенĕ.

Çавăнпа вырăнсенче ĕçе сиес калана пек туса пыман, польшевиксем каланă пек туса пынă; меньшевиксем суйланă Тĕп Комиттетне итлемен, польшевиксен Питĕрти Комиттетне итленĕ.

1907 çулта польшевиксемпе меньшевиксен пĕрлештерме тата Лонтонра сиес тунă. Унта 305 делекат пухăннă. Вĕсенчен 105 польшевиксем, 97 меньшевиксем, 57 пунтра (йеврейсен ĕçлекенĕсен ушкăнĕ) тăракансем пулнă. Çав сиесре IV сиесре тунă ĕçсене тепĕр хут пăхса тухнă. Прохсойуссене Парттипе пĕрле ĕçлемелле тунă. Партти прохсойуссене йертсе пымалла тенĕ.

Ликвитаттăрсем. 1905 çулта тапраннă революцийе правительства сĕмĕрсе пăрахрĕ. Партти комиттечĕсене нумайĕшне салатса пĕтерчĕç, парттире тăракан чаплăрах çынсене вĕлерсе, Çипире, катăрка йарса пĕтерчĕç. Вара меньшевиксем «Революци пĕтрĕ, пытанса ĕçлекен комиттетсене пĕтерес (ликвитировать тăвас), патша правительстви чарман таран анчах йеррипе ĕçлесе пурăнас» тийе пуçларĕç. Çавăнпа 1907—1914 çулсенче меньшевиксене ликвитаттăрсем тетчĕç.

Польшевиксем калатчĕç: «Революци пĕтмен, вăл пĕр вăхăта анчах лăпланчĕ; революци татах тапранĕ (мĕншĕн тесен патша правительстви ĕлĕкхи пекех тăрать), революци тапранас вăхăта хатĕрленсе тăмалла, вăл вăхăта часрах çитерме тăрăшмалла. Ăна мĕнле тумалла? Ăна вăрттăн ĕçлесен анчах тума пулать. Çавăнпа пытанса ĕçлекен орканисатсисене хăвармалла. Унтан тата пытанмасăр мĕн тума май килет, çавна та пурне те тумалла: Патшалăх Туминче, тĕрлĕ прохсойуссенче, клупсенче ĕçлесе те, тата ытти майпа та революци тапранас вăхăта хатĕрленес пулать» тетчĕç.

Çавăнпа польшевиксем, хăйсене тытса хупсан та, çаксан та, пероо вĕлерсен те, кирек мĕнле хĕн пулсан та пĕр май тăрăшса пытанса та пулин ĕçлерĕç.

Ун чухне ĕçе пысăк йарса илме майа килмес-чĕ. Польшевиксем хăйсем тавра сахалтарах çын пухса анчах ĕçлечĕç, вĕсене вĕрентсе куçĕсене уçатчĕç. Çапла польшевиксем çав çынсенчен хăватлă, чăтăмлă салтаксем турĕç, революци вăхăтĕнче малтан çĕмĕрсе пыракан кварти турĕç.

Ленă шывĕ çинче ĕçлекенсене темиçе çĕр çын вĕлерсе, амантса пăрахсан, ĕçлекенсем татах пур те пăлхана пуçларĕç (1912—1914 çулсенче): пур çĕрте те сапастовкăсем турĕç; вĕсене польшевиксем йертсе пычĕç.

Меньшевиксем сапастовка темĕн тĕрлĕ хирĕç пычĕç, патша правительствипе çапăçма хушмарĕç. «Сапастовкăран нимĕн усси те пулас çук» тесе ĕçлекенсене укĕтлетчĕç.

1914—1918 çулти вăрçăра меньшевиксем тата ытларах пуршуйсен

майне кайса ӳкрĕç. Нимĕçсемпе çапăçмалла (вăл—нимĕçсен ĕçлекенĕсемпе хресçенĕсене вĕлермелле тени пулаť), патшалăха çăлмалла (вăл—пуршуйсен патшалăхне çăлмалла тени пулаť) тетçĕç. Çапла вĕсем малтанхи Интернатсионал каланине пăхăнмарĕç.

Поçшевиксем пĕр иккĕленмесĕрех вăрçа хирĕç пыра пуçларĕç. «Вăрçа хирĕç вăрçă тапратмалла, пуршуйсемпĕн çапаçса вĕсене çăлма тăрăшмалла мар, пур патшалăхсенçе те вĕсене ĕçпе пурăнакансен ĕнси çинçен сирпĕтсе йамалла; хронта тухнă ĕçлекенсемпе хресçенсем пĕрне пĕри ала памалла» тетçĕç.

Правитеçствă хĕснĕ пирки, тата вăрçă пирки 10 çулççен сйес тума майа килмерĕ; вăл çулсенçе конхеренсисем анçах пулçĕç.

1917 çулта нарс уйăхĕнçе револютси пулсан анçах поçшевиксем Питĕрте VI-мĕш сйес турĕç. Унта 200.000 çленрен 157 телекат пынă-çĕ. Сйесне çурла уйăхĕнçе пытанкаласа анçах турĕç, мĕншĕн тесен ун çухне ирĕк пуршуйсенçе-çĕ, вĕсене меншевиксемпе есерсем сыхласа тăраççĕç.

Ирĕк пуршуйсен аллинçен ĕçлекенсен аллине куçассине поçшевиксем малтанах пĕлсе тăраççĕç. «Нарс уйăхĕнçи револютси вăл—сотсиалисмлă револютсийĕн пусми» тетçĕç. Çавăнпа сйесре поçшевиксем «правитеçствăпа малалла та хытă çапăçмалла, патшалăхри ирĕке ĕçлекенсен аллине пама хатĕрленмелле» тесе сăмах пĕтерçĕç. Пуршуйсен Вăхăтлăх Правитеçствине йепле çапăçмаллине те шухăшласа хуçĕç.

Правитеçствă пĕтесси паллах-çĕ. Ăна пĕтерсе пăрахма вăхăтне анçах кĕтсе тăмалла-çĕ.

Вăл вăхăт пушă уйăхĕнçе çитрĕ.

1918 çулти пушă уйăхĕнçе поçшевиксен VII сйесĕ пулçĕ. Вăл сйесçен поçшевиксен парттине вырăсла «Российская Социал-Демократическая Рабочая Партия (большевиков)» тетçĕç. Скопкă ăшне «большевиков» тесе револютсишĕн тăрăшакан поçшевиксен парттине пуршуйсемпе ĕçлекен меншивиксен парттинçен уйăрма лартнă. VII-мĕш сйесре Партти йатне улăштарса ăна вырăсла «Российская Коммунистическая Партия (большевиков)» тенĕ. Скопка хушшине «большевиков» тесе Партти ăçтан пуçланса кайнине, вăл пĕр май револютсишĕн тăрăшса пурăннине кăтартма лартнă.

Çав сйесрех Партти прокраммине улăштарма комиççи суйланă, мĕншĕн тесен ĕлĕкхи прокраммă кивелнĕ.

1903 çулта 2-мĕш сйесре йышăннă прокраммăра каланă «Патша правитеçствине пĕтермелле, Уçрет. Сопрани пухмалла, тĕрлĕ ирĕксем туртса илмелле» тенĕçĕ. Йупа уйăхĕнçен вара вĕсем пурте пулса çитнĕ, малашне урăх ĕçсем тумалла пулнă; кивĕ прокраммăра çав урăх ĕçсем çинçен нимĕн те каламан.

Çĕнĕ прокрамма 1919 çулти пуш уйăхĕнçе пулнă 8-мĕш сйесре йышăннă. Кивĕ прокраммăра правитеçствăран мĕн туртса илесси çинçен каланине пĕтĕмпе кăларса пăрахнă, мĕншĕн тесен ĕçлекенсемшĕн мĕн кирлине ĕнтĕ пурне те илнĕ. Ун вырăнне çĕнĕ прокраммăра мĕн тумалли çинçен каланă.

Çав сйес вăхăтĕнçе пире хирĕç йĕри тавра капиталиссем тăраннă-çĕ. Çавăнпа сйесре вăрçă çинçен, Хĕрлĕ Çарă йепле тумалли çинçен нумай каласрĕç.

8-мĕш сиесе 300.000 ҫленрен 301 телекат пухăннă-ҫĕ.

Ҫав сиес хыҫăнҫен Коммуниссен Партти пит хăвăрт ӳсе пуҫларĕ. Ĕҫпе пурăнакансем пурте ун хыҫҫăн кайа пуҫларĕҫ.

1920 ҫулти ака уйăхĕнҫе пулнă 9-мĕш сиесе 612.000 ҫлентен 554 телекат пухăннă-ҫĕ. 9-мĕш сиесре, тата 1921 ҫулти пушă уйăхĕнҫе пулнă 10-мĕш сиесре пуринҫен ытла хуҫайствăна майа йарассп ҫинҫен калаҫрĕҫ. 9-мĕш сиесре «хапрăк-савăтсене пăхса тăрас ĕҫе коллекисен вырăнне пĕр ҫын аллине памалла, хăй ĕҫне лайăх пĕлекен ҫынсене ĕҫ памалла, вĕсене йулташ пек курмалла» тесе сăмах пĕтернĕ.

10-мĕш сиес ҫĕнĕ екномп политтики кăларнă (расверскă вырăнне налуксем, коператсисем кăларнă, тата ытти ĕҫсем те тунă).

10-мĕш сиесре 705.245 ҫленрен 647 телекат пулнă.

Йупа уйăхĕнҫи револютсирен вара Коммуниссен Парттийĕ Республикка тытакан Партти пулса тăҫĕ. Вăл Канаш Ирĕкне йертсе, кăтартса пыраҫ. Ĕҫĕ калама та ҫук пысăк, ҫитменнине, пуршуйсем ҫăрмантарнипе, ĕҫне тума хисепсĕр йывăр пулҫĕ. Ҫапах та Коммунисен Парттийĕ Республиккă карапне лайăх сыхласа Коммунисăм патшалăхне илсе пыраҫ.

Коммуниссен Парттийĕ халĕ Правитеҫствă Парттийĕ пулса тăҫĕ. Ҫавăнпа вăл Парттийе йуйрăхсăр ҫынсем те кĕрме пултараҫҫĕ. Халĕ патша вăхăтĕнҫи мар; Коммуниссен Парттине кĕнĕшĕн тĕрмене хупмаҫҫĕ, Ҫипире йе катăрка йамаҫҫĕ, ҫакса йе персе вĕлермеҫҫĕ.

Йурăхсăр ҫынсем кĕрсе тулса Партти пăсăлса ан кайтăр тесе, ăна вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе тасатаҫҫĕ. 1921 ҫулта пĕтĕм Раҫҫей тăрăх Коммуниссен Парттине тасатрĕҫ. Ун ҫухне Парттийе лекнĕ йурăхсăр ҫынсене пит нумай кăларса пăрахрĕҫ.

---

## II-МĔШПЕ III-МĔШ ИНТЕРНАТСИОНАЛ.

2-мĕш интернатсионал. Париш коммунине ҫĕмĕрсе пăрахсан, пĕтĕм тĕнҫипе реакси пуҫланса кайнă. Коммунисмран хăранипе, пуршуаҫи пур ҫĕрте те ĕҫлекенсемпе пĕтĕм вăйĕпе ҫапăҫа пуҫланă. Вара пролеттарисем ура ҫине тăриҫҫен нумай ҫул иртнĕ.

Малтанхи Интернатсионал пĕтни 15 ҫул иртсен тин пĕтĕм тĕнҫери ĕҫлекенсен ушкăнĕ тума майа килнĕ.

2-мĕш Интернатсионалăн малтанхи конкресĕ (сиесĕ) 1889 ҫулта Парижре пулнă.

Пĕтĕм тĕнҫери ĕҫлекенсене пĕрлештерес йенĕпе 2-мĕш Интернатсионал 25 ҫул пурăнса пит нумай тунă. Вăл ĕҫе тума ҫу уйăхин малтанхи кунĕнҫе тĕнҫери пур ĕҫлекенсем те праҫник туни пит нумай пулăшнă. Вăл кун пур тĕнҫери ĕҫлекенсем хăйсем пĕр-пĕриншĕн тăнине кăтартнă, хăйсен вăйĕ мĕн ҫухлĕ пухăннине пĕлнĕ, хăйсемшĕн мĕн тунине, тата мĕн тума кирлине шута илнĕ.

Ҫу уйăхин пĕрремĕш кунĕ. Мĕншĕн Праҫник тума ҫу уйăхин пĕрремĕш кунне суйласа илнĕ-ши?

Мĕншĕн тесен Америкри ĕҫлекенсем, Америк правитеҫстви Ҫикахо

йатлă хулари ĕçлекенсене персе вĕлернине асăнса 1889 çулти çу уйăхин пĕрремĕш кунĕнҫе темонстратси тумалла тунă. Çавăнпа вара 2-мĕш Интернатсионал, ĕçлекенсем пĕр-пĕриншĕн хытă тăнине кăтартмашкăн, çав çу уйăхин пĕрремĕш кунĕнҫе пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем çулсерен праçник тумалла тунă.

Вăл кун ĕçлекенсем пур çĕрте те ĕçе пăрахса пухусем, темонстратсисем тунă, правитеҙствăсенҫен хăйсене кирлине ыйтнă.

2-мĕш интернатсионал вăрçа мĕнле пăхнă. 2-мĕш Интернатсионал капиталисмлă патшалăхсем кăларакан вăрçă хирĕç пынă. 2-мĕш Интернатсионала кĕрекен сотсиалиссем пур те милитарисма хирĕç пымалла, çарă тытас вырăнне халăха хĕç-пăшал валеçтерме тăрăшмалла пулнă, тата мĕн вăй çитнĕ таран патшалăхсене пĕр-пĕринпе вăрçă тапратасран ҫарма, ҫараймасан вăрçине ҫасрах пĕтерме, вăрçă пула капиталисм хăватне ҫасрах çĕмĕрме тăрăшмала пулнă.

Ҫăнах та 2-мĕш Интернатсионал пур çĕрте те «вăрçă тапратмалла мар, капиталисмлă патшалăхсене çарăсене хăватлăлантарма ҫармалла» тесе пит хытă тăрăшса вĕрентнĕ. Анҫах 1914—1918 çулсенҫе, калаçас вырăнне ĕçне тăвас ҫухне, хăй сăмахне пĕтĕмпех маннă. Вăрçа ҫарма тăрăшас вырăнне, ĕçлекенсене вăрçă тапратасшăн тăракан правитеҙствăсене хирĕç тăма хушас вырăнне, 2-мĕш Интернатсионал пуçлăхĕсем мĕн пур халĕпс пуршуйсемпе пĕр хронт тума тăрăшнă. Вара 2-мĕш Интернатсионалăн тĕрлĕ патшалахри Çексийĕсем (пайĕсем) хронтсенҫе хире-хирĕç тăрса пĕр-пĕринпе тăшмансем пек çапăçнă. Камшăн? Хăйсене таптакан, хăйсем курайман капиталисмлă патшалăхсемшĕн, пуршуйсене ытти халăхсене çаратса пуйтарасшăн!

2-мĕш интернатсионал пĕтни. Çапла 1914—1918 çулти вăрçă 2-мĕш Интернатсионала пĕтерҫĕ. Унăн йулашки пухăвĕ 1912 çулта Пасеҙре (Швейтсари хули) пулнă-ҫĕ.

Вăрçă ҫарăнсан хăшĕ çав 2-мĕш Интернатсинала татах ҫĕртесшĕн сĕессем пухаççĕ, тĕрлĕ сăмах пĕтереççĕ. Çавăн [пек малтанхи сĕес 1919 çулта Перпра пулҫĕ.

Анҫах вилнĕ йапалана ҫĕртеймĕн.

Иккĕмĕш Интернатсионал ĕмĕрлĕхе пĕтрĕ, ĕçлекенсен классне сутакансем ăна ҫĕртейес çук.

2-мĕш Интернатсионал пуринҫен ытла пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсене хăй аллине илсе пĕрлештерме тăрăшнă. Пур ирĕке те ĕçлекенсене парасси, пролеттарисен тиктаттури тăвасси, çинҫен вăл шухăша та илмен. Вăл канлĕ пурăнса ĕçлесшĕн пулнă. Çавăнпа вăл пуршуйсемпе тытăçма вăхăт çитсен, нимĕн те тăвайман, вăл вăхăт çитсе перĕннине те туйайман, ĕçлекенсен класĕ ĕçне сутса йанă.

Ĕçлекенсене сутнăшăн Иккĕмĕш Интернатсионала «сарă» интернатсионал теççĕ, тата «сарă» тесе ĕçлекенсем сапастовкă вăхăтĕнҫе хапрăк-савăт хуçисем патне ĕçлеме кĕрешекен çынсене, штрейкпрехĕрсене, çапла туса сапастовкă тума ҫăрмантаракан çынсене калаççĕ).

1914—1918 çулти вăрçăра 2-мĕш Интернатсионал пĕтрĕ. Унăн халĕ йаҫĕ анҫах йулҫĕ, вăл ĕнтĕ револютсишĕн тăрăшакан пролеттарисене пĕрлештерсе тăраймасť.

Халĕ ĕнтĕ вăл пуршуйсемпе килĕштерсе пурăнма тăрăшакансен интернатсионалĕ пулса кайрĕ. Вăл халĕ Коммуниссен Интернатсионалĕ пĕрлештерсе тăракан, револютсишĕн тăрăшакан ĕçлекенсемпе çапăçаť.

3-мĕш интернатсионал. Вăрçă вăраха кайнипе ĕçлекенсем татах капиталиссене хирĕç пăлхана пуçларĕç. Пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсем татах пĕрлешесшĕн пулҫĕç, хăйсене йертсе пыракан 3-мĕш Интернатсионал тăвасшăн пулҫĕç.

Империалисăмлă патшалăхсемпе çапăçма хатĕр тăракан, империалиссен вăрçине хирĕç пыракан ĕçлекенсене пĕрлештерме малтан 1915 çулта тытăнна-ҫĕ. Симмерваҫт йатлă Швейтсари хулинҫе пысăк мар кăна конхеренси пухнă-ҫĕ. Конхеренси пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсем хушшине «вăрçа ҫарса килĕшӳ тăвар» тесе мăнахвис салатнă-ҫĕ. 1916 çулта Кинтал йатлă Швейтсари хулинҫех тепĕр конхеренси пулҫĕ. Вăл малтанхи конхеренси тунă ĕçсене ырăларĕ.

Çав икĕ конхеренси, ĕçлекенсене пĕрлештерейместен те, сайа каймарĕç: вĕсен хыçĕнҫен ĕçлекенсене пĕрлештересси çинҫен тата хытă шухăшла пуçларĕç.

3-мĕш Интернатсионалăн малтанхи конкресĕ (сиесĕ) 1919 çулти пушă уйăхĕ пуçламăшĕнҫе Канашлă Мускаврa пулҫĕ.

Вăл сиес пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсене пĕрлештерсе капиталиссемпе пĕр ҫарăнмасăр, нихăçанта килĕшмесĕр çапăçма, пур çĕрте те пуршуйсенҫен ирĕке туртса илсе пролеттарисен тиктаттури туса хума сăмах пĕтерҫĕ.

Комуниссен Интернатсионалĕ ĕçлекенсен ушкăнĕсене пуршуйсемпе килĕштерсе пурăнма тăрăшакансенҫен тасатма, пĕтĕм тĕнҫере хăвăртрах сотсиалисăм револютсийĕ тума тăрăшаť. Ун çинҫен вăл пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсемшĕн кăларнă мăнахвис синҫе тĕплĕ каласа панă.

Виççĕмĕш Интернатсионала Коммуниссен Интернатсионалĕ теççĕ, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм тĕнҫери коммуниссене анҫах пĕрлештерсе тăраť, пуршуйсемпе килĕштерсе пурăнма тăрăшакансене хăй хушшине илмест.

Капитал пуç пулса тăракан патшалăхсенҫе пуринҫе те коммуниссен партийĕсем хăватлăланса пыраççĕ, ĕçлекенсем пур çĕрте те капиталиссене хирĕç хытăран хытă пăлханаççĕ; вăл кашни çул пулакан коммуниссен Интернатсионалин сиесĕсенҫен паллă. Коммуниссен партийĕ çук патшалăх халĕ тенҫере пĕрре те çук. 1921 çулта Коммуниссен Интернатсионалне 51 Коммуниссен Партийĕ кĕнĕ.

Малтанхи конресс тĕнҫере пур çĕрте те коммунисăм йалавне çĕкленĕ, пур çĕрте те ĕçе коммуниссен прокрамми тăрăх туса пыма хушнă; 1920 çулта çурла уйăхин 23 кунĕнҫен пуçласа авăн уйăхин 7 кунне çитиҫҫен Мускавра пулнă иккĕмĕш конкресс Коммуниссен Интернатсионалин орканисатсине майланă, çав Интернатсионала кĕрекен партисем хăшĕ мĕнле ĕçлемелли çинҫен сăмах пĕтернĕ.

Конкресре йышăннă Коминтерн уставĕнҫе каланă: „Коминтерна кĕрекен пур партисем те коммунисăм тума тăрăшакан пĕр пĕтĕм тĕнҫе партийĕ пулаççĕ, вăл партире çарти пек хăватлă тистиплинă пулмалла, партийĕн пуçлăхĕ Тĕп Комиттет (Исполком) пулмалла, тистиплина пăснăшăн, Конкресс каланине туманшăн Тĕп Комитетт кирек кама та, Партисене те, Коминтернтан кăларма пултараť“ тенĕ.

Коминтерна Коммунисăма курайман, револютсийе йуратман партисем йе ушкăнсем кĕме ан пултарайтăр тесе 21 услови тунă, çав условисене пурне те йышăнакансене анăах Коминтерна илмелле тунă.

Вăл условисем Коминтерна кĕрекенсене пытанса та ирĕкре те куллен Коммунисăм çинăен вĕрентме хушаççĕ; партийе хресăенсене, патраксене кўртме тăрăшма; прохсойуссенăе, кооперативсенăе коммуниссен йаăăейкки-сем туса вĕсене пурне те пуршуйсен майлă пыракан парттисенăен уйăрса илме, тата ытти ĕçсем тума та хушаççĕ. Вăл условисем тата конкресс каланине, Коминтерăн Тĕп Комиттеăĕ хушнине пăхăнма хушаççĕ.

1921 çулта виççĕмĕш конкресс пулăĕ.

Коминтерн хăваăĕ. Коммуниссен Партийĕсен, Коммуниссен Интернатсионалин хăваăĕ кашни çул ўссе пыраť: ĕçлекенсем пур çĕрте те коммунисăм йенне сулăннăçемĕн сулăнаççĕ. Çапахта халĕ коммунисман хĕрлĕ йалавĕ айне ĕçлекенсем нуммайĕшĕ тăрайман. Ĕçе пуршуйсемпе килĕштерсе пурăнма тăрăшакан партисем пит нумай пăсса тăраççĕ. Вĕсем, хăйсен пуршуаçилĕ патшалăхĕсем пулăшнипе, коммуниссене хăсĕрлеççĕ, ĕçлекенсене улталаса нумайĕшне хайсен хыççăн илсе кайаççе, вĕсене коммуниссен партине ан кĕрĕр тесе ўкĕтлеççĕ. Çапла пролеттарисене пĕрлештерме, капиталиссене хирĕç çапăçма ăăрмантарса вĕсем капитал пĕтес сехете ăасрах çывхарма памаççĕ.

Хăçан Коммуниссен Интернатсионалĕ револютси ĕçне сутакансенăен ĕçлекенсене çăлса илĕ, çавăн ăухне пĕтĕм тĕнăере сотсиалисм револютсийĕ пулĕ, капиталиссен ирĕкĕ пĕтĕ.

Вăл пуласси курăнсах тăраť, ăна нимĕнле вăй-хăват та ăараймĕ.

Капиталисăмлă тĕнăе халĕ сывлăшне кăларса йарас пек анăах тапаланса выртаť.

Вăрçă пирки капиталисмлă патшалăхсем хăшĕ ытла та хăватлăланса кайрĕç, хăшĕ пĕтсе ларăĕç. Патшалăхсем пĕрне пĕри çаратса килĕшў тунипе вăрçă тымарне пĕтереймерĕç.

Тĕнăене уйăрас пирки татах вăрçăсем пуласси паллах.

Револютси хумĕ тĕнăипе çĕкленнĕçемĕн çĕкленет. Классем хытăран хытă çапăçаççĕ. Пĕр тĕлте сапастовкă пулсан ăас ăасах пур тĕлте те сапастовкă тума тытăнаççĕ, сапастовкă тумассерен ĕçлекенсем алла хĕçпăшал тытса капиталиссемпе çапăçма тухаççĕ.

Ĕçлекенсем капиталисăм мĕн икенне лайăх ăнланса çитрĕç, ăна вĕсем малалла ăăтса тăрайас çук.

Коммуниссен Интернатсионалин йалавне йăтса ĕçлекенсем „ылттăн" патшалăхне, капиталиссен ирĕкне çĕмĕрсе пăрахĕçех!

---

## ПРОЛЕТТАРИ ТИКТАТТУРИПЕ Р. С. Ф. С. Р.

Тиктаттурă кирли. Сотсиалисăм револютсийĕнăе пуршуйсен патшалăхне пĕтерсе пăрахсан пролеттарисем хăйсен, ĕçлекенсен патшалăхĕ, пролеттарисен тиктаттури тăваççĕ, урăхла каласан, пур ирĕке те хăйсен аллине илсе ытти классене пурне те пăхăнтарса тăраççĕ.

Кирек мĕнле патшалăх та пĕр клас ытти классене пăхăнтарса тăмали оркăн. Ĕçлекенсен патшалăхĕ те çавăн пекех. Пуршуйсен патшалăхĕ ĕçлекенсемпе хресҫенсене пусмăрласа пурăнаҫҫĕ. Ĕçлекенсен патшалăхĕ пуршуйсене, тата вĕсен майлă пыракансене пăхăнтарса тăрат, вĕсене ĕçлекенсем каланине, ĕçлекенсене кирлине тутарса тăрат. Ĕçлекенсен класĕнҫен хăшĕ те пулин пĕтĕм класа сийен тусан (ӳркенсен, ĕç вăхăтĕнҫе ахаҫ çӳресен, ĕçе вăхăтра туса памасан), ĕçлекенсен патшалăхĕ вĕсене те хытă тыткалат.

Патшалăха хăйсен аллине илсен, пролеттарисем хăйсен пысăк ĕçне тытăнаççĕ „експропприаторсене експропрнатси“ тăваççĕ; урăхла каласан, пролеттарисен патшалăхĕ капиталиссен мĕн пур пурлăхне патшалăх аллине илет (апла тунине тата „натсионалисатси“ теççĕ). Капиталиссем ĕлĕк хапрăк-савăтсенҫе ĕçлекенсене пусмăрласа вĕсен ĕçне йышăнса тăраҫҫĕç; пролеттарисен тиктаттури вăхăтĕнҫе çав хапрăк-савăтсемех ĕçлекенсен патшалăхне хăватлăлатма, ĕçлекенсене асапран хăтарма, çĕнĕ пурнăç, пуриншĕн те ырă пурнăç тума пулăшаççĕ.

Анҫах пролеттарисен патшалăхне пĕр вăхăта анҫах тăваççĕ. Пуршуйсене пĕтĕмпех пĕтерсен, вĕсене пролеттарисене хирĕç тăрайми тусан, классем пĕтсен, вĕсем пĕр пĕринпе çапăçасси те пĕтсен, пролеттарисен патшалăхĕ те пĕтĕ; мĕншĕн тесен, никама хĕсĕрлеме çуккипе, вăл кирлĕ мар пулса кайат. Вара коммунисăм, классăр опҫестă пулса кайĕ.

Канаш Ирĕкĕ. 1917 çулти йупа уйăхĕнҫи револютсирен вара пирĕн Раççейре пролеттари тиктаттури, Канашсен ирĕкĕ пырат.

Çавăнтан вара пирĕн патшалăха «Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисмпа Канаш Респупликки» теççĕ, вырăсла «Российская Социалистическая Федеративная Советская Республика» теççĕ (кĕскенĕн Р.С.Ф.С.Р. теççĕ).

Мĕншĕн?

Пирĕн патшалăха Раççей теççĕ, вырăс патшалăхĕ темеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн патшалăхра хăйсен вăйĕпе ĕçлесе пурăнакансем (вырăссем те, тутарсем те, ҫăвашсем те, мăкшăсем те, нимĕçсем те, хрансуссем те, тата ыттисем те), кирек мĕнле тĕнпе пурăнсан та, йе тĕнсĕр пурăнсан та, саккун умĕнҫе пурте пĕр тан; вырăссем те ыттисем те пурте Канашсене кайма та вĕсене суйлама та пултараççĕ.

Анҫах пуршуйсене, спекулантсене, пупсене, манахсене, ĕлĕк плеҫҫейскире йе шантарта тăнă çынсене, ĕçлекенсемпе хресҫенсене хирĕç пыракан çавăн пек ытти çынсене те Канашсене суйлама, йе Канашсенĕн ҫленĕ пулма ирĕк паман.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсен арăмĕсене те, правă тĕлĕшĕнҫен, упăшкисемпе танлаштарнă, мĕншĕн тесен револютси вĕсене те капиттал аллинҫен хăтарҫĕ.

Пирĕн патшалăха сотсиалисмлă тесе акă мĕншĕн каланă: ҫукун çулсене, пăрахутсене, хапрăксене, савăтсене, çĕрсене, çавăн пек пысăк услам паракан йапаласене пурне те капиталиссенҫен илсе патшалăхăн, канаш ирĕкийĕн тунă, урăхла каласан ĕçлесе пурăнакансен аллине панă. Вĕсене пурне те Канаш ирĕкĕ хăй аллинҫе тытса тăрат, вĕсемпе ĕçлекенсене, хресҫенсене нумайрах усă тума тăрăшат; хăш хапрăксемпе савăтсене

патшалăх хăй хута йарать, хăшне ĕçлекенсемпе хресченсен эрттеллисене, кооперативсене парать, хăшне тата тара парса тăрать.

Вьçĕ çул хушшинче капиталиссенчен мĕн пурĕ 10.000 хапрăксемпе савăтсем илнĕ, улпутсенчен 30 мĕлйун теçеттине ытла çĕр илнĕ, унтан тата капиталиссен черисене—панккăсене илнĕ.

Çапла ĕнтĕ Канаш ирĕкĕ пĕр хăрамасăр пуршуйсен пурлăхне туртса илсе сотсиализм йенелле пĕр утăм йарса пусрĕ. Вăл ĕнтĕ пĕр пуçланă ĕçе пĕтерсе сотсиализмпа коммунизм тума тăрăшать.

Пирĕн патшалăха тата хветератсилĕ теççĕ. Хветератси тени çыхă, йе пĕрлешни тени пулать. Мĕншĕн тесен пирĕн патшалăхра темиçе канашлă патшалăх, вĕсем пурте пĕрлешсе пĕр патшалăх, Раççей, пулса тăраççĕ. Пĕр-пĕрнипе вĕсем килĕшсе, çыру туса пĕрлешнĕ. Хăйсен ăшĕнчи ĕçе вĕсем хăйсемех туса тăраççĕ. Пĕтĕм Раççейе тивекен ĕç тĕлĕшĕнчен анчах вĕсем Тĕпри пĕр оркăна пăхăнса тăраççĕ (чукун çулсен ĕçĕпе, ытти патшалăхсемпе мĕн те пулин тăвас ĕçпе, вăрçă кăларассипе килĕшес ĕçпе, çавăн пек тата ытти ĕçсемпе те).

Пирĕн патшалăха тата канашлă теççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн патшалăхра мĕн пур ирĕк ĕçлекенсем, хĕрлĕ çарта тăракансем, хресченсем суйланă канашсенче.

Патшалăх пуçлăхĕ-пĕтĕм Раççейри канашсен сйесĕ. Вăл сйес çулталăкра иккĕрен кайа пухăнмасть.

Сйессем хушшинче патшалăх пуçлăхĕ-Пĕтĕм Раççейĕн Ĕç Тăвакан Тĕп Комиттечĕ пулса тăрать. Вырăсла ăна «Всероссийский Центральный Исполнительный Комитет» (В.Ц.И.К.) теççĕ. Респупликкари пысăкрах ĕçсене туса тăма В.Ц.И.К. Халăх Комиссарĕсен Канашĕ (Совет Народных Комиссаров) суйлать, вăл тĕрлĕ текретсем, постановленисем, инструксисем кăларать. Совнарком тунă ĕçсене В.Ц.И.К. кайалла тума пултарать. Респупликкă хуçайиствине Халăх Хуçайиствин Канашĕ (Совет Народного Хозяйства, Совнархоз, С.Н.Х.) пăхса тăрать. Унта прохвессионачни сойуссем, В.Ц.И.К., Совнарком йанă çынсем кĕреççĕ.

Респупликкăри мĕн пур хуçайства пăхса тăракан чăн аслă пуçлăх—ĕçе майа йарса тăракан, тата патшалăха сыхлакан Канаш, вырăсла ăна «Совет Труда и Обороны» (СТО) теççĕ.

Пирĕн патшалăх монархисем пек мар. Унта мĕн пур ирĕк патша аллинче. Патша вилсен ирĕк унăн ачине куçать, халăх суйланă çын аллине куçмасть. Пирĕн патшалăхра Канаш ирĕкне суйлаççĕ. Çавăнпа пирĕн патшалăха Респупликкă теççĕ.

Çапла ĕнтĕ хамăр патшалăха Р.С.Ф.С.Р. тесе эпир пирĕн мĕнле йĕрке иккенне кăтартатпăр.

Пирĕн Респупликкăри йĕркене пĕтемпех Пĕтĕм Раççĕйри Канашсен Пиллĕкмĕш Сйесĕ ĕçе кўртнĕ.

Хăçанччен çапăçмалла. Пуршуйсен правительствине çĕмĕрсе пăрахнипе çапăçу пĕтмест. Ĕлĕкхи йĕрке вырăнне часах çĕнĕ йĕрке пулса тăраймасть. Мĕн пурне те ипсе пĕтерме, ĕçлекенсемпе хресч-

ҫенсене виле кўписемпе йун ҫырмисем анҫах хăварма пуршуйсем пĕтĕм вăйĕпе тăрăшаҫҫĕ.

Пуршуйсем ĕҫлекенсен патшалăхне, Канаш ирĕкне темĕн тĕрлĕ кураймасăр тăраҫҫĕ. Мĕншĕн тесен йупа уйăхĕнҫи револютсиҫҫен пуршуй хăй хуҫаҫĕ, патшалăх пуҫлăхĕҫĕ; халĕ унăн йут патшалăхсем тăрăх тарса ҫӳремелле, йе Канаш ирĕкĕшĕн тара кĕрĕшсе ĕҫлемелле, йе Канаш ирĕкĕнҫен мĕн те пулин тара илсе анҫах усă курмалла пулҫĕ. Тара илсе ĕҫлесен те вăл Канаш ирĕкнех, ĕҫлекенсен патшалăхнех тĕреклĕленме пулăшать.

Сыхланма кирли. Канаш ирĕкĕ вăрҫă тапратасшăн мар. Анҫах унăн ĕлĕкхи йĕркесене ҫавăрма тăрăшакан, револютсийе хирĕҫ пыракан тăшманĕсем пит нумай. Канаш ирĕкин ирĕксĕрех ун пек тăшмансенҫен сыхланас пулать.

Раҫҫейре ĕлĕкхин пек пуршуйсен йĕрки ан пултăр тесен, хапрăксене, савăтсене, ҫĕрсене пуршуйсем кайалла ан илҫҫĕр тесен, Канаш ирĕкин ирĕксĕрех сыхă тăрас пулать, хăйне хирĕҫ килекенсемпе ҫапăҫас пулать.

Ҫавăнпа ĕнтĕ Канаш ирĕкĕ Хĕрлĕ Ҫарă тытать, Хĕрлĕ Ҫарă ăна тăшмансенҫен сыхлать.

Халхи вăрҫă 1914 – 1918 ҫулти империалиссен вăрҫи пек мар. Ун ҫухне империализм вăрҫи пулнă, урăхла каласан патшалăхсем пĕрне-пĕри пăхăнтарса пусмăрласа пурăнасшăн пулнă.

Халĕ канашлă Раҫҫейри ĕҫлекенсемпе хресҫенсем пуршуйсемпе ҫапăҫаҫҫĕ; хаљхи вăрҫă — классен вăрҫи, патшалăхсен вăрҫи мар.

Ăҫта пуршуйсем, шурă ҫарăсем, пĕр вăхăта та пулин, Канаш ирĕкне ҫĕнтереҫҫĕ, унта ĕлĕкхи пуршуйсен йĕрки туса хураҫҫĕ: хапрăксене, савăтсене, ҫĕрсене ĕлĕкхи хуҫисене параҫҫĕ. Хĕрлĕ Ҫарă шуррисене хăваласа йарсан, ĕҫпе пурăнакансен ирĕкĕ пулса тăрать: хапрăксене те, савăтсене те, ҫĕрсене те пĕтĕмпех ĕҫлекенсемпе хресҫенсен Канашĕсене параҫҫĕ.

Пирĕн патшалăхри пуршуйсем, ытти патшалăхсенҫи пуршуйсем пулăшнипе, канашлă Раҫҫейе хирĕҫ ҫарăпа кăна мар урăх майпа та пире сийен тума тăрăшаҫҫĕ: вут тĕртеҫҫĕ, хапрăк савăтсене, ытти тĕрлĕ пурлăхсене ҫĕмĕреҫҫĕ, вăрттăн вĕлереҫҫĕ тата ытти усал йапала та тăваҫҫĕ.

Пуршуйсем ун пек ĕҫсем тăвасран Патшалăхри Политиҫески Управлени (Государственное Политическое Управление, Госполитуправление, ГПУ) сыхласа тăрать.

Хăҫан вăрҫă пĕтĕ. Пуршуйсемпе ҫапăҫасси хăҫан пĕтĕ?

Хăҫан пуршуйсем ĕҫлекенсен аллинҫен ирĕке кайалла туртса илсе ĕлĕкхин пек пуҫ пулса пурăнасшăн тăрăшма пăрахĕҫ, ҫавăн ҫухне вăрҫă пĕтĕ унсăрăн пĕтес ҫук. Классен вăрҫи пĕри ҫĕнмесĕр нихăҫан та пĕтмест.

Пуршуйсем ĕҫлекенсемпе хрĕсҫенсене канлĕ пурăнса пурнăҫа майа йама памаҫҫĕ. Ĕҫĕ хисепĕ ҫук нумай. Канаш ирĕкĕ аллине ишĕлнĕ хуҫайствă анҫах лекрĕ. Ĕҫе тӳрлетсе хапрăк савăтсене хута йарас тесен, йурăхлă ҫĕре пĕтĕмпе акас тесен, калама та ҫук хытă тăрăшса ĕҫлес пулать.

Ăна пире никам та туса памĕ, ĕслекенсемпе хресҫенсем хăйсем анҫах тăвĕç.

Çавăнпа ĕнтĕ арçынни те хĕр—арамĕ те пур те вăйа хĕрхемесĕр тăрăпшмала, пурин те патшалăх ĕçне хăйĕн ĕçĕ пек курмалла, хăйĕн ĕçĕ пек тумалла, ăна урăххи тăвĕ теме йурамасť.

Пурте ҫунтан-вартан, мĕн пур вăйĕнҫен ĕçлесен, вăрçă хронтĕнҫе те ĕç хронтĕнҫе те пурте вăй çитнĕ таран тăрăшса ĕçлесен анҫах Канаш Раççейĕ çĕнĕ, лайăх, коммунисм пурнăçĕ курĕ.

---

# ПРОХСОЙУССЕМПЕ ВЕ́СЕН ЁÇЕСЕМ.

## I. КАПИТАЛИСМЛĂ ОПҪЕСТВĂРА.

Капиталисмлă опҫествăра ĕçлекенсем выçăлă-тутăлă анҫах пурăнаççĕ, хăйсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Хăш ҫухне тата ĕçĕ те пулмасť, ĕçĕ тупăнсан та хуçасем кирек хăçанта вырăнтан кăларса йама пултараççĕ. Çавăнпа ĕçлекенсем капиталпа çапăçма хăйсен класĕнҫе тĕрлĕ ушкăнсем тума тытăннă.

Çавăн пек ушкăнсенҫен пĕрне Прохвессионаҫни сойус (прохсойус) теççĕ.

Ҫăн малтан прохсойус Анклире 1797 çулта пуçланнă, ăна акăлҫансем трет-йунион тенĕ. Раççейре прохсойуссем 1900 çулсенҫе пула пуçланă. Вăл сойуссем пĕҫĕккĕ пулнă, вăрттăн ĕçленĕ, мĕншĕн тесен патша правитеҫстви ĕçлекенсене сойуссем тума хушман, сойуссем тунăшăн тĕрмене хупнă. 1905 çулти йупа уйăхĕнҫе сапастовкă тунăранпа анҫах прохсойуссем, правитеҫствă ҫарнине пăхмасăрах, пит нумай пула пуçланă.

Економи тĕлĕшĕнҫен çапăçни. Прохсойуссем малтан капиталисма çĕмĕресси çинҫен, çынна çын пусмăрлассине пĕтерессипçинҫен шухăшламан, мĕншĕн тесен ĕçлекенсем ун ҫухне вăл ĕçе пĕлмен. Вĕсем економи тĕлĕшĕнҫен, хăйсен пурнăçне кăшт та пулин çăмăллатасшăн, кунне сахалтарах ĕçлесшĕн, ĕç хакне ўстересшĕн анҫах çапăçнă.

Политтиккă тĕлĕшĕнҫен çапăçни. Капиталисмлă опҫествăра економи тĕлĕшĕнҫен çапăçма тытăнсан ирĕксĕрех политтиккă тĕлĕшĕнҫен те çапăçмалла пулаť. Пуршуйсен патшалăхĕ капиталиссемшĕм тăрăшса, йалан ĕçлекенсене хирĕç пыраť: сапастовкă тусан вĕсене хирĕç плеҫҫейскисене, шантарсене, салтаксене йараť; вĕсене хирĕç тĕрлĕ саккунсем кăлараť.

Çавăнпа вара прохсойуссем пуршуйсемпе анҫах мар, патшалăхпа та çапăçаççĕ; економиккă тĕлĕшĕнҫен анҫах мар, политтиккă тĕлĕшĕнҫен те çапăçма тытăнаççĕ, правитеҫствă ĕçе çăмаллатасси çунҫен, аҫасемпе хĕр-арăмсене çĕрле ĕçлеттерме йураманни çинҫен саккун кăларма хушаççĕ, правитеҫствăран тĕрлĕ ирĕксем, тата ытти йапаласем те ыйтаççĕ.

Хутшăнманни (нейтраҫносť). Ĕçлекенсен класĕн парттийĕ-Комму-

ниссен парттийĕ. Вăл ĕçлекенсен ушкăнĕсене пĕрлештерсе, вĕсене капитализмпа çапăçас ĕçре йертсе пырать, çавăнпа прохсойуссем те, политтикă тĕлĕшĕпе çапăçа пуçласан, Коммуниссен партине хутшăнмасăр унтан уйрăм тăма (нейтраљни пулма) пултараймаççĕ. Коммуниссен партийĕ кăтартса пырсан анђах прохсойуссем капиталиссемпе çапăçса усă курма пултараççĕ. Прохсойуссем мĕн ђухлĕ Коммуниссен партийĕпе хытăрах çыхăнаççĕ, прохсойуссенђе коммуниссем мĕн ђухлĕ нумай пулаççĕ, капиталиссемпе çапăçас ĕç те çавăн ђухлĕ лайăхрах кайĕ, çавăн ђухлĕ капиталиссене ђасрах çĕнĕç.

Ĕçлекенсен класĕн тăшманĕсем, пуршуйсемшĕн тăрăшакан пирĕн ухмах еçерсемпе меншевиксем пеккисем, ĕçлекенсен класне вăйсăрлатас тесе, „прохсойуссем парттисен ĕçне хутшăнмалла мар, вĕсенђен уйрăм тăмалла (нейтраљни пулмалла)“ теççĕ. Партисене хутшăнман, вĕсенђен уйрăм тăракан сойуссем, капиталиссемпе хытă тытăçнă вăхăтра, ĕçлекенсене сутма пултараççĕ; ĕçлекенсем сапастовкă тусан, вĕсен вырăнне капиталиссем патне ĕçлеме кĕреççĕ (штрейкпрехĕр пулаççĕ).

Раççейри прохсойуссем нумайĕшĕ штрейкпрехĕрсен çулĕпе каймарĕç, вĕсем коммуниссен партийĕпе çыхăнса унпа пĕрле ĕçлеççĕ; унпа пĕрле капиталиссемпе çапăçаççĕ; коммуниссенђен уйрăм тăраканнисем пит сахал.

Ўсни. Раççейри прохсойуссем пит çамрăк, 20 çултан та иртеймен. Анђах вĕсем револјутси вăхăтĕнђе (1905, 1917 çулсенђе) ўссе пыђĕç. Çавăнпа, çамрăк пулсан та, вĕсем пит хăватлăланса кайрĕç.

1917 çулта пĕтĕм Раççейри прохсойуссен 3-мĕш конхеренсинђе телекатсем 1.475.400 ђлентен пухăннă; 1918 çулта малтанхи пĕтĕм Раççей сиесĕнђе 2.638.812 ђлентен телекатсем пухăннă; 1919 çулти 2-мĕш сиесе—3.422.000 ђлентен, 1920 ç. 3-мĕш сиесе—4,328.400 ђлентен пухăннă, 1921 çулти прохсойуссенђе мĕн пурĕ 6.970.000 ђлен пулнă.

Çапла Раççейре прохсойуссем ĕçлекенсене пурне те пĕрлештерсе тăраççĕ.

Канашсемшĕн. 1917 çулта нарс уйăхĕнђен пуçласа йупа уйăхне çитиђђен прохсойуссем пурте Коммуниссен партийĕ майлă тăрса Вăхăтлă Правителјства хирĕç пыђĕç. Хĕрлĕ Çарра та вĕсем пит нумай çынсем пађĕç. Йупа уйăхин 25 кунĕнђе вĕсем, Коммуниссен партийĕ хыçĕнђен, Вăхăтлăх Правителјства çĕмĕрме кайрĕç. Пирĕн прохсойуссем пурте „мĕн пур ирĕк канашсенђе пултăр“ теççĕ.

## II. ПРОЛЕТТАРИСЕН ТИКТАТТУРИ ВĂХĂТĔНЂЕ.

Йупа уйăхĕнђи револјутси ĕçлекенсен класне пуç туса хуђĕ. Пуршуйсем ирĕкне те пурлăхĕсене те çухатрĕç. Ĕçлекенсем хăватлăланса кайрĕç, пуршуйсем пĕтсе ларђĕç. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ прохсойуссем капиталиссемпе çапăçас вырăнне патшалăха пулăшакан оркăнсем пулса тăђĕç; вĕсен халĕ хуçайствăна майа йама тăрăшмалла.

Çĕнĕ ĕçсем. Ĕçлекенсен Канашĕсемпе пĕрле прохсойуссем халĕ: халăх хуçайстви канашĕсем, патшалăх аллине панă тĕрлĕ савăтсене пăхакан комиттетсĕм, çавăн пек тата ытти оркăнсем те тăваççĕ.

Прохсойуссем патшалăх оркăнĕ пулса кайни. Çапла прохсойуссем йеррипе патшалăх оркăнĕсемпе хутăшса кайаççĕ. Ăна прохсойуссем патшалăх оркăнĕ пулни(огосударствление) теççĕ.

Вăл ĕç револ̧утси хыççăн тепĕр куннех пулаймасĭ, ăна текрет йе постановлени кăларса тума йурамасĭ. Вăл ĕç пролеттариат тиктатури вăхăтĕнҫе капиталисмран коммунисма куçнă майпа, ĕçлекенсем ăна кĕрсе патшалăха тытма, хуçайства пăхма вĕренсе çитнĕ майпа хăй тĕллĕн йеррипе анҫах пулса пырать.

Çав çĕнĕ ĕçе тумашкăн, мĕн пур хуçайства хăйсен аллине илмешкĕн, прохсойуссем патшалăх орканĕсемпе пĕрле хусайства майа йамалли плансем, прокраммăсем шухăшласа кăлараççĕ, вĕсене ĕçе кўртеççĕ; тĕрлĕ хуçайствă оркăнĕсем тăваççĕ, хисепе илнин», вĕсене ĕçе вырнаçтарнине тишкĕрсе пыраççĕ, ĕçрен тараканссене сыхлаççĕ, çавăн пек тата ытти ĕçсем те нумай тăваççĕ.

Çапла прохсойуссем халĕ хуçайствă тытма вĕренсе пыраççĕ, çавăнпа хаҫхи прохсойуссене коммунисм школĕ теççĕ.

Стаҫкăсем. Капиталисмлă опҫествăра стаҫкă пит кирлĕ йапала: ĕçлекенсем стаҫкă туса капиталиссемпе çапăçаҫҫĕç. Пролеттарисен тиктартури вăхăтĕнҫе стаҫкăсем кирлĕ мар; вĕсем патшалăх хуçайствине сийен кўреççĕ, пролеттарисен патшалăхне вăйсăрлатаççĕ. Çавăнпа пролеттатисен тиктатури вăхăтĕнҫе стаҫкă туни—револ̧утсийе хирĕç пыни пулать. Ĕçлекенсен патшалăхĕнҫе ĕçлекенсем стаҫкă туни—ĕçлекенсем хăйсене хăйсем хирĕç пыни пулать.

Халĕ ĕçлекенсем хăйсен пурнăçне стаҫкă туса çăмăллатаймĕç, пур ĕçе те вăй çитнĕ таран тăрăшса тусан патшалăх ĕçĕсене майа йама тăрăшсан анҫах вĕсем ырă кунсем курма пултарĕç.

Стаҫкă тума халĕ хуçасен аллине йулнă хапрăк-савăтсенҫе, йе патшалăх капиталиссене тара парса тăракан хапрăк-савăтсенҫе анҫах йурать. Ун пек стаҫкăсем пролеттарисен патшалăхне сийен тумаççĕ; çавăн пек хапрăк-савăтсенҫе стаҫкă тăвакансене пролеттарисен патшалăхĕ кирек хăçан та хуçисене çĕнме пулăшĕ.

Хуçайствă тăрăх хутшăнни. Ĕлĕк çĕвĕçĕсем-çĕвĕçĕсен сойусне, тимĕрçĕсем-тимĕрçĕсен сойусне, уҫитĕл̧сем-уҫитĕл̧сен сойусне кĕреҫҫĕç; кашни сойуса пĕр тĕслĕ ĕç туса пурăнакансем кĕрет-ҫĕç: ĕçлекенсем ĕçе кура хутшăнать-ҫĕç. Халĕ прохсойуссен хуçайствăна майа йамалла: патшалăх аллине панă хапрăк-савăтсене ура çине тăратмалла. Çавăнпа халĕ ĕçлекенсем ĕçĕсене кура мар, хуçайствăсем тăрăх хутшăнса сойуссем тăваççĕ. Пĕр хуçайствăра (савăтра, хапрăкра, шахтăра тата ытти хуçайствăсенҫе те) ĕçлекенсем: тимĕрçи те, слесарĕ те, стол̧арĕ те, иншенерĕ те, ыттисем те, пурте пĕр сойуса кĕреççĕ, пурте пĕр сойуса хутшăнса хăйсен хуçайствине çĕклесе йама тăрăшаççĕ.

Çапла пĕр ĕç туса пурăнакансем тĕрлĕ сойуса лекме пултараççĕ. Ĕçлекенсем çапла хутшăнса сойуссем тунипе хуçайствăна майа йама, ăна хăйсен аллине илме, коммуниссен партийĕ кăтартнипе коммунисм тума пултараççĕ.

# КАНАШ РАҪҪЕЙĔН ЕККОНОМИККĂ ПОЛИТТИККИ.

Еккономиккă политтикки мĕн вăл?

Хуҫайствă тĕлĕшĕпе патшалăх мĕн тăваҭ, йе мĕн тума шухăшлаҭ, ҫавна пурне те еккономиккă политтикки теҫҫĕ.

Канаш ирĕкĕ коммунисм тума тăрăшаҭ. Коммунисмшăн 1917 ҫулти йупа уйăхĕнҫе революци тунă, коммунисмшăн тĕрлĕ хуҫасен хапрăк-савăҫĕсене илсе патшалăха панă, коммунисмшăн Хĕрлĕ Ҫарă тĕрлĕ хронтсенҫе капиталиссен ҫаррисемпе ҫапаҫрĕ, коммунисмшăн мĕнле те пулин хуҫайствăна майа йама тăрăшаҫҫĕ.

Коммунисм тума пуринҫен ытла пирĕн промышленнăҫпе (промышленнăҫ тесе тĕрлĕ тавар тăвас ĕҫе калаҫҫĕ) ҫĕр ĕҫĕ ытла та наҫар пыни, тата вăрҫă вăхăтĕнҫе хуҫайства салатса пĕтерни пит хытă ҫăрмантарса тăраҭ.

Ҫавăнпа Коммуниссен Парттийĕпе Канаш ирĕкĕ пуринҫен ытла хуҫайствăна майа йама, пурне те тутă тытма, пурне те тумлантарма тăрăшаҫҫĕ.

Канаш ирĕкин еккономиккă политтикки пĕтĕмпех ҫав ĕҫ йенелле сулăннă.

Еккономиккă политтикки йалан пĕр пек пымасҭ, вăл вăхăтне кура улăшăнаҭ: 1918 ҫулта тума йурани 1921 ҫулта тума йурамасҭ, мĕншĕн тесен 1918 ҫулта канаш Раҫҫейне йĕри тавра тăшмансем сырса илнĕ-ҫĕ, 1921 ҫулта Канаш Раҫҫейне хирĕҫ вăрҫăпа килекен пулмарĕ. Халĕ тума йурани те ӳлĕмрен тума йурамĕ, мĕншĕн тесен ӳлĕмрен пĕтĕм тĕнҫипе пуршуйсене ҫĕнтерсе пăрахĕҫ, пур ҫĕрте те пролеттарисен класĕ пуҫ пулса тăрĕ, самана пĕтĕмпех улшăнса кайĕ. Тĕрлĕ вăхăтра еккономиккă политтикки тĕрлĕ пулаҭ.

Канашлă Раҫҫейре еккономиккă политтикки мĕнле-ши?

## I. ПРОМЫШЛЕННĂҪ ТĔЛĔШĔНҪЕН.

Промышленнăҫ тĕлĕшĕнҫен еккономиккă политтикки ҫăн малтан патшалăх аллинҫи шултăра промышленнăҫе (нумай тавар тума пултаракан пысăк хапрăк-савăтсене, пысăк шахтăсене, ҫукун ҫулсене, ҫавăн пек шултăра хуҫайствăсене) тĕреклĕлентерсе ҫĕклесе йамалла.

Шултăра промышленнăҫ вăл ĕҫлекенсене пĕр ҫĕре пухса вĕсене пĕрле пурăнма, пĕрле ĕҫ тума вĕрентет; ҫапла пролеттарисен тиктаттурине тĕреклĕлентерет, коммунисм тума никĕс хураҭ.

Шултăра промышленнăҫ пулмасан, ăна майа йамасан, коммунисм та пулма пултараймасҭ, ăна йалан асра тытса тăрас пулаҭ.

1917 ҫулти йупа уйăхĕнҫе рĕволюци пулсан Канаш ирĕкĕ капиталиссен хапрăк-савăҫĕсене пурне те патшалăх аллине илҫĕ. Анҫах патшалăх ҫав мĕн пур хапрăк-савăтсене хута йараймарĕ; хута йанă хапрăк-савăтсем те, хутмалли ҫуккипе, йе тавар нимĕнрен тума ҫуккипе, йе ĕҫле-

кенсем сахаллипе, ӗлӗкхин пек ӗçлеймерӗç, наҫар ӗçлерӗç. Çапах та капиталиссенҫен хапрӑк-савӑтсене илни аван пулҫӗ: вӑл пуршуйсене пӗтерсе пӑрахрӗ; вӗсем вара ӗçлекенсене пусмӑрлайми пулҫӗç.

Теникинсем, Колҫаксем, Йутеницсем, револютсийе хирӗç пыракан çавӑн пек ытти çынсем те пире хирӗç вӑрçӑпа килсе пирӗн хуçайства пит нумай сийен турӗç.

Тон кӑмрӑкне те, Çипирпе Украйна тыррине те, Урал тимӗрне те, Туркестан мамӑкне те пӗтӗмпех пиртен туртса илнӗ-ҫӗ. Пирӗн шултӑра промышленнӑç ӗлӗкрен йулнӑ йапаласенҫен анҫах тавар тукаласа пурӑнҫӗ. Çитменнине тата хапрӑк-савӑтсене нумайӗшне вӑрçӑшӑн ӗçлеттермелле пулҫӗ. Пур савӑт-хапрӑксенҫен те ӗçлекенсене нумайӗшне вӑрçа илсе каймалла пулҫӗ. Çавӑнпа халӑха кирлӗ йапаласем (тумтир, атӑ-пушмак тата ыттисем те) пит сахал тумалла пулҫӗ.

Вӑл вӑхӑтра вӑрçӑ пирки хуçайства нийепле те майа йамапулмарӗ: Канаш ирӗкӗ мӗн пур хӑватне тӑшмансене хирӗç йаҫӗ.

Çавӑнпа вӑл вӑхӑтра пирӗн економикӑ политтикки мӗн алла йулнине сыхлама, вӑраха пытарма тӑрӑшрӗ. Патшалӑх мӗн пур йапалана (тырра та, вутта та, кӑраççина та, тавара та, кӑмрӑка та, тата ытти йапаласене те) хисепе илҫӗ, вӑл йапаласене пӗҫӗккӗн анҫах валеçсе тӑҫӗ.

1921 çулта самана улшӑнҫӗ: ӗçлекенсемпе хресҫенсем револютсийе хирӗç пыракансене пур çӗрте те çӗмӗрсе пӑрахрӗç, Канаш ирӗкне тӑшмансенҫен çӑлҫӗç.

Çӗнӗ политтиккӑ. Çавӑнтан вара ӗнтӗ ӗлӗкрен йулнипе пурӑнаç вырӑнне, çӗнӗрен тума тӑрӑшмалла, коммунисм никӗсне, шултӑра промышленнӑçе, ура çине тӑратса çӗклесе йамалла пулҫӗ.

Шултӑра промышленнӑçе çӗклесе йарас тесен, ҫӑн малтан пурӑнма мӗн кирлӗ (çимелли, тумтир, тата ытти йапаласем те), çавна тӑвас пулаҭ: унсӑрӑн ӗçлекенсем ӗçлеме пултараймаççӗ, шултӑра промышленнӑçе те йӑтасси пулмаҭ.

Анҫах Канаш ирӗкин аллинҫе халӗ пурӑнма кирлӗ йапаласем пит сахал, унпа хуçайствӑна çӗклейес çук.

Çав йапаласене мӗнле майпа ҫасрах тума пулаҭ? Ӑна тума виçӗ май пур. Вӑл майсем: 1) тара пани, 2) консеççи, 3) вак промышленнӑç.

Тара пани. Канаш ирӗкин аллинҫе капиталисенҫен туртса илнӗ хапрӑк-савӑтсем пит нумай. Вӗсене пурне те Канаш ирӗкӗ нийепле те хута йараймаҭ, пӑхса тӑраймаҭ. Çавӑнпа Канаш ирӗкӗ хӑй аллине лайӑхрах, пысӑкрах, патшалӑха кирлӗрех хапрӑк-савӑтсене, тата ҫукун çулсене, пӑрахутсене анҫах хӑвараҭ. Вӗсене Канаш ирӗкӗ пурне те мӗн кирлине патшалӑхран парса тӑраҭ, вӗсем-Канаш ирӗкин никӗсӗ, вӗсене пула Канаш ирӗкӗ патшалӑхра пуç пулса тӑраҭ.

Мӗншӗн те пулин (хутма, çиме çуккипе, йе кивелнипе) хута йама майа килмен хапрӑк-савӑтсене Канаш ирӗкӗ йе ӗçлекенсемпе хресҫенсен ушкӑнӗсене, йе хуçасене тара параҭ.

Тара пани вӑл-пӗр вӑхӑта пани анҫах. Тара панӑ йапала патшалӑхӑнах йулаҭ. Тара панӑ йапаланӑн

хуçи—тара илекен мар, Канаш ирĕкĕ. Тара илекен, йапаларан усă курнăшăн. патшалăха укçа тӳлесе тăраť, усламăн мĕн ђухлĕ те пулин туђђине парса тăраť, патшалăхшăн тата урăх йапала та тăваť. Ун çинђ͏ н пурин çинђен те малтанах калаçса çыру туса хураççĕ. Çитменнине тата тара илекен, тара илнĕ вăхăђĕ тухсан, тара илнĕ йапалана патшалăха йурăхлă халлĕнех памалла.

Тара панийĕн усси. Тара панийĕн усси курăнсах тăраť. Тара панă хапрăк-савăта тӳрлетеççĕ; тара панă вăхăђĕ иртсен, ăна Канаш ирĕкĕ хута йама пултараť. Унтан тата хресђ͏нсене, ĕçлекенсене, Хĕрлĕ çарра кирлĕ йапаласем те нумайрах тума пулаť.

Анђах тара илекене вăл кирлĕ мар, ăна услам анђах кирлĕ. Çавăнпа тара илекене, хапрăк-савăтсене тӳрлетнĕшĕн пирĕн ирĕксĕрех услам парас пулаť.

Консеççисем. Канаш ирĕкин çĕрĕнђе кăмрăк та, ылттăн та, кĕмĕл те, нехтĕ те, вăрман та, çавăн пек ытти хаклă йапаласем те хисепсĕр нумай. Анђах ђавса çывăх та-çыртма йурамасť. Кăмрăк çинђе, вăрман хушшинђе пурăнатпăр-хамăрăн хутмалли çук.

Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пирĕн ĕçлемелли машинăсем сахал, вĕсем те пулин йе ытла нађар, йе кивелсе çитрĕç.

*Хамăрăн* ахаљ выртакан пуйанлăхăмăртан мĕн ђухлĕ те пулин усă курас тесен, шултăра промышленнăçе ура çине тăратса çĕклесе йарас тесен, пирĕн йут патшалăхсенђи капиталиссене консеççи парас пулаť.

Консеççи вăл—тара панийех. Консеççи тесе нумай вăхăта, пит хăватлă капиталиссене, йе вĕсен ушкăнĕсене тара панине калаççĕ.

Консеççи илекенĕн, услам курас тесен, илнĕ çĕрĕ çине машинăсем илсе килсе лартас пулаť, мĕншĕн тесен пирĕн машинăсем çук.

Консеççи илекен усламăн пĕр пайне Канаш ирĕкне параť, тепĕр пайне хăйне илсе пуйса кайаť.

Консеççи вăхăђĕ иртсен, консеççи илекен мĕн тунă, мĕнле машинăсем лартнă, çавă пурте патшалăх аллине йулаť.

Консеççи усси. Çапла ĕнтĕ Канаш ирĕкĕ йут патшалăхсенђи хăватлă капиталиссене консеççи парса патшалăха кирлĕ йапаласем нумайрах тăваť; унтан пуçне тата, консеççи вăхăђĕ иртсен, патшалăх аллине пĕтĕмпе туса çитернĕ, хута йанă хапрăк-савăтсем, шахтăсем, йулаççĕ, вĕсем вара Канаш Респупликкине анђах уса парса тăраççĕ.

Тара парса, консеççи парса, Канаш ирĕкĕ капиталиссене хăйшĕн ĕçлеттерет, вĕсем ĕç тума иĕлнинђен усă илет; çавăн пекех Канаш ирĕкĕ пуршуаçи майлă пыракан иншенерсене те, уђитĕљсене те, ахвитсерсене те патшалăхшăн ĕçлеттерет.

Унта хăрушши нимĕн те çук. Анђах ĕçе пĕлсе тумалла; капиталиссенђен усă курма хăтланса вĕсене мăй çине утланса ларма памалла мар, ĕçпе пурăнакансен пурин те çавăнтан хытă сыхланмалла.

Тара илекен, йе консеççи илекен капиталис хăй тунă йапаласен пĕр туђђине Канаш Респупликкине параť, тепĕр туђђине хăне хăварса пасара кăларса сутаť.

Суту-илӳ тума ирĕк пани. Çавăнпа ĕнтĕ пасарсене уçмалла пулђĕ, суту-илӳ тума ирĕк памалла пулђĕ. Суту-илӳ тума ирĕк пулмасан,

капиталис Канаш ирěкěнҫен тара йе консеҫҫи илсе нимěн усă та курайман пулě ҫě. Капиталиса услам анҫах кирлě, Канаш хуҫайствине ҫěклесшěн вăл кăшт та тăрăшасшăн мар. Вăл Канаш хуҫайстви пěтнине хавас.

Ҫапах та тара илнě ҫěрěнҫен услам илсе (услама вăл пит йуратаť), капиталис ирěксěрех пирěн Канаш патшалăхне тěреклěлентерет, ăна хăватлăланса кайма пулăшаť. Канаш патшалăхě, хăватлăланса ҫитсен, капиталиссемсěрех, хăй вăйěпěх хăй хуҫайствине ҫěклесе йама пултарě.

Канаш Раҫҫейне капиталиссен ҫаррисем сырса илнě вăхăтра тара парассипе консеҫҫи парасси ҫинҫен калаҫасси те ҫук-ҫě. Халě ěнтě вăл ҫарăсене ěҫлекенсемпе хресҫенсем пěтěмпех ҫěмěрсе пăрахрěҫ. Ҫавăнпа капиталиссенҫен усă илсе Канаш ирěкне тěреклěлентерниңе халě нимěн хăруши те ҫук.

Пуршуйсенҫен усă илни-вěсемпе килěшни пулмасť, вěсене Канаш ирěкěшěн ěҫлеттерни анҫах пулаť.

Халě, 1921 ҫултанпа, тара парассипе консеҫҫи парасси пире пит кирлě йапала. Капиталисмлă пысăкрах патшалăхсенҫе ěҫлекенсем пуршуйсене ҫěнтерсе пăрахсан вăл ěҫ кирлě пулмě вара.

Ҫапла, самана улăшăнсан, пирěн економи политтикки те улăшăнаť. Анҫах кирек хăҫан та пирěн економи политикки коммунисм тума тăрăшаť.

Вак промышленнăҫ. Капиталисмлă Раҫҫейре шултăра промышленнăҫ йалан кайа йулса пыҫě, мěншěн тесен Раҫҫейре вак промышленнăҫ пит тěреклě тăҫě, шултăра промышленнăҫ ҫěкленсе кайса вăй илсен те пěте пěлмерě. Вăрҫă пуҫланиҫҫен пирěн мěн пур таварăн виҫҫěмěш пайне вак промышленнăҫ тăват-ҫě.

Вак промышленнăҫ кирли. Шултăра промышленнăҫ патшалăха мěн кирлине пурне те туса ҫитерекен пулиҫҫен, вак промышленнăҫ нихăҫан та пěтмě, вăл пěтменни аван та. Вак промышленнăҫ шултăра промышленнăҫ тăвайманнине туса ҫитерет, патшалăх тума панă йапаласем тăваť, пысăк савăтсемпе хапрăксене кирлě йапаласем кăлараť, ҫапла туса шултăра промышленнăҫе ура ҫине тăрса хăватлăланса кайма пулăшаť. Пуринҫен ытла вак промышленнăҫ ерттилсем, копперативсем тусан нумай усă параť.

Ҫавăнпа Канаш ирěкě вак промышленнăҫе тěрлě майпа пулăшса тăраť, пуринҫен ытла ерттилсемпе копперативсене пулăшаť.

Патшалăх аллинҫи шултăра промышленнăҫ хăватлăланса ҫитсен, вак промышленнăҫ кирлě пулмě, вара пěтсе ларě.

## II. ҪЕР ĚҪĚ ТĚЛĚШĚНҪЕН.

Ҫěр ěҫě тěлěшěнҫен пуринҫен ытла пысăк, хăватлă патшалăх (Канаш) хуҫайствисем тума тăрăшас пулаť.

Раҫҫейре пуринҫен ытла ҫěр ěҫлеҫҫě. Мěн пур ҫынсенҫен 80% йалта пěҫěк хуҫайстă тытса пурăнаť.

Йалсенҫи пӗҫӗк хуҫайствӑсем, промышленнӑҫри вак хуаҫйствӑсем пекех, коммунисӑм тума пит хытӑ ҫӑрмантарса тӑраҫҫӗ. Вак хуҫайствӑлӑ хресҫенсем ӗҫе пӗрле туса пурӑнма пӗлмеҫҫӗ те тӑрӑшмаҫҫӗ те. Кашни вак хуҫа хӑй хуҫайствишӗн анҫах тӑрӑшаҭ Рынӑка тухсан вӗсем пурте, хӑйсен тыррине ҭхаклӑраха сутма тӑрӑшса, пӗрне пӗри тӑшман пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫӗр хуҫайствин криҫисӗ. Хресҫен хуҫайстви вӑрҫӑ пуҫланиҫҫенех пит йывӑр криҫисе лекнӗ-ҫӗ. Ҫӗр сахалҫҫӗ, вӑл та пулин наҫарланса ҫитнӗ-ҫӗ, тырӑ наҫартан наҫар пулса пырат-ҫӗ. Вӑрҫӑсем хыҫҫӑн вӑл криҫис тата ытларах хӑватлӑланҫӗ, хресҫенсем тырӑ ӗлӗкхинҫен нумай сахал ака пуҫларӗҫ.

Йупа уйӑхӗнҫи революци хыҫҫӑн хресҫенсем 30 мӗлйун теҫеттине ытла улпут ҫӗрӗсене илҫӗҫ. Анҫах унпа ҫӗр хуҫайствин криҫисӗ пӗтмерӗ, ҫулсерен тырӑ сахалтарах пуҫтара пуҫларӗҫ, пӗтӗм патшалӑхра ҫимелли ытла та хӗсӗнсе ҫитрӗ.

Ҫӗр хуҫайстви криҫисне ҫӑмӑллатас тесе, ҫӗр хуҫайствине ҫӗклесе йарас тесе, йупа уйӑхӗнҫи революци хыҫҫӑн ҫӗр коммунӗсем, ҫӗр эрттелӗсем, Канаш хуҫайствисем тӑва пуҫларӗҫ.

Шултӑра промышленнӑҫпе (хапрӑксемпе, савӑтсемпе) пӗрле ҫав ҫӗр хуҫайствисем коммунисӑм никӗсӗ пулса тӑраҫҫӗ?

Коммунӑ тесе, Канаш хуҫайстви тесе мӗне калаҫҫӗ?

Коммунӑ хуҫайствисем. Коммунӑ тесе хӑйсен ӗҫӗпе пурӑнакансен ушкӑнне калаҫҫӗ. Вӑл ушкӑна кӗрекен ҫынсем пӗр хуҫайствӑ тытаҫҫӗ, пӗрле пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пурте пӗрле пӗр пек ӗҫлеҫҫӗ. хуҫайствӑран мӗн кирлине пурне те илеҫҫӗ. Мӗн пур хуҫайствӑ, хуҫайствӑра тӑвакан мӗн пур йапаласем пӗр ҫыннӑн мар, коммунӑна кӗрекенсен пуринӗн те. 1921 ҫулҫен мӗн пур коммунӑсемпе эрттелсем 15.000 шутланаҭ-ҫӗ, вӗсен аллинҫе 2 мӗлйун теҫеттине ҫӗрҫҫӗ.

Ҫӗр ӗҫлекен Канаш хуҫайствисем пур те патшалӑх аллинҫе. Вӑл хуҫайствӑсенҫе ӗҫе хапрӑксемпе савӑтсенҫи пек илсе пыраҫҫӗ. Вӑл хуҫайствӑсенҫе ӗҫ тунн пурте патшалӑхӑн. Вӗсем—тырӑ хапрӑкӗсем. Канаш хуҫайствисен аллинҫе мӗн пурӗ 3 мӗлйун теҫеттине.

Ҫав шултӑра хуҫайствӑсенҫе, коммунӑпа Канаш хуҫайствисенҫе, хресҫенсен вак хуҫайствисенҫен ӗҫ нумай авантарах пыраҭ. Вӑл хуҫайствӑсенҫе тырӑ та лайӑхрах пулаҭ, ӗҫлеме те ҫӑмӑлтарах.

Ҫапахта коммунӑсемпе Канаш хуҫайствисем пирӗн пит наҫар ӗрҫесе пыраҫҫӗ. Ӗмӗр хӑй ҫӗрне тӑрмаласа пурӑннӑ хресҫен хӑйне хуҫайствӑ тытма вӗреннӗ. Хӑй хуҫайствине пӑрахса ыттисемпе пӗр хуҫайствӑ тума уншӑн питӗ хӗн. Вӑл—уншӑн халиҫҫен курман-илтмен ӗҫ, ҫавӑнпа вӑл ӗҫе тытӑнма хресҫен хӑраса тараҭ.

Коммунӑсемпе Канаш хуҫайствисем тума тата вӑрҫӑ пит нумай ҫӑрмантарса тӑҫӗ.

Тунӑ коммунӑсемпе Канаш хуҫайствисем те вӑрҫӑ пирки наҫар ӗҫлерӗҫ.

Пысӑк ҫӗр хуҫайствисем шултӑра промышленнӑҫсӑр хӑватлӑланса кайма пултараймаҫҫӗ. Шултӑра промышлен-

нăç çĕр ĕçлемелли тĕрлĕ машинăсем, çĕре çĕнетмелли тĕрлĕ йапаласем тăваҭ Шултăра промышленнăç çĕкленсе каймасăр пирĕн йалсенҫе ĕмĕрех вак хуçайствăсем нумайрах пулĕ, тырă та пуринҫен ытла вак хуçайствăсенҫен килĕ; коммунăсемпе Канаш хуçайствисем çĕр ĕçне йепле тумаллине кăтартса тăракан вырăнсем анҫах пулĕç.

Шултăра хапрăксемпе савăтсен промышленнăçĕ мĕн ҫухлĕ ҫасрах çĕкленсе кайĕ, çĕр ĕçне тăвакан шултăра хуçайствăсем те çавăн ҫухлĕ ҫасрах çĕкленсе кайĕç.

Унҫҫен пирĕн хресҫен хуçайствине çĕклеме тăрăшас пулаҭ, унăн кризисне çăмăллатса патшалăх ваҫҫи çимелли нумайрах хатĕрлеме тăрăшас пулаҭ.

Вăрçă вăхăтĕнҫе Канаш ирĕкĕ хресҫен хуçайствишĕн тăрăшма пултараймарĕ. Ун ҫухне пуринҫен ытла тăшмансемпе çапăçмалла пулҫĕ. Канаш ирĕкне çăлмалла пулҫĕ. Çавăнта Канаш ирĕкĕ хăватлă Хĕрлĕ Çарă турĕ, темиçе пин хресҫенсемпе ĕçлекенсене патшалăхшăн çапăçма илсе кайрĕ. Вĕсене пурне те тăрантарса пурăнмалла пулҫĕ.

Хĕрлĕ Çарра мĕн кирлĕ, çавна пурне те Канаш ирĕкĕ шута илҫĕ, салатса пĕтерме памарĕ.

Çапла хресҫенсен хушшинҫе расверскă пулса кайрĕ.

Çав расверскă пирки хресҫенсене пурăнмалăх мĕн ҫухлĕ кирлĕ, çавăн ҫухлĕ анҫах хăвараҫҫĕç; унтан ытлашшине пĕтĕмпех патшалăха илетҫĕç.

Вăрçă пирки пĕр вăхăта кăларнă расверскă хресҫен хуçайствие çĕкленме памарĕ. „Ытлашшине пурĕ пĕр илĕç“ тесе хресҫен нумайрах тырă тума тăрăшмарĕ, сахалтан сахал ақа пуçларĕ. Расверскă мĕншĕн кирлине пĕлмесĕр хресҫенсем нумайĕшĕ Канаш ирĕкне ӳпкеле пуçларĕç; хапрăксемпе савăтсенҫе ĕçлекенсене хирĕç те калаçа пуçларĕç. Улпутсемпе капиталиссене хирĕç çапăçнă ҫухне ĕçлекенсемпе хресҫенсем пĕр майлă-ҫĕ; капиталиссене çĕнтерсе пăрахсан, расверскă пирки, вĕсем пĕр пĕринҫен уйăрăла пуçларĕç.

Çимĕç куланайĕ Тăшмансене пурне те çĕмĕрсе пăрахсан, вăрçа пĕтрĕ. Вара расверскăна пĕтерме те майа килҫĕ, ун вырăнне çимĕç куланайĕ кăлармалла пулҫĕ.

Çимĕç куланайĕ тăрăх хресҫене пурăнма кирлинҫен ытлашшине пурне те илмеççĕ, ытлашши тырă-пулă хресҫен аллине те йулаҭ. Хресҫен хăйне кирлинҫен ытлашши мĕн ҫухлĕ тырă-пулă тăваҭ, куланай та унтан çавăн ҫухлĕ ытларах илеççĕ.

Çимĕç куланайĕ расверскăран нумай кайа. 1920 çулта пĕтĕм Республикка тăрăх (Украйнăпа Туркестанран пуçне) расверскăпа 423 мĕҫйун пăт тырă пухнă, 1921 çулта куланай тăрăх 240 мĕҫйун пат анҫах тырă илмелле тунă.

Çапла çимĕç куланайĕ хресҫен пурнăçне пайтах çăмăллатрĕ. Хресҫен хуçайствине çĕклеме те тăрăша пуçларĕ, мĕншĕн тесен куланайран ытлашшийĕ пĕтĕмпех унăн хăй аллине йулаҭ, ăна сутса вăл хăйне мĕн кирлине илме пултараҭ.

Çимĕç куланайĕ хăçанҫен пырĕ. Шултăра хапрăк-савăт-

сем çӗкленсе пынӑ майпа çимӗç куланайӗ те ҫакса пырӗ, кайран пӗтсех ларӗ. Ун ҫухне мӗн кирлӗ тырӑ-пулла Канаш хуçайствисенҫен илӗç, тата хресҫенсенҫен таварпа улӑштарса илӗç.

Анҫах халӗ ун пек тума йурамасҭ, мӗншӗн тесен патшалӑха çителӗклӗ тырӑ тумалӑх Канаш хуçайствисем те çук, тырӑ улӑштарса илме таварсем те сахал. Тырӑ-пулӑ патшалӑха Хӗрлӗ Çарра тӑрантарма та, хапрӑксемпе савӑтсенҫе, тӗрлӗ уҫрештенисенҫе ӗçлекенсене тӑрантарма та кирлӗ. Ӑна ӑçтан илмелле? Çавӑнпа ирӗксӗрех халӗ пӗр вӑхӑта хресҫенсенҫен çимӗç куланайӗ пуçтармалла тунӑ. Шултӑра савӑтсемпе хапрӑксем лайӑх ӗçле пуçласан, вӑл куланай пӗтӗ. Ун ҫухне тавар нумай пулӗ, вара патшалӑх хресҫенсенҫен тырӑ таварпа улӑштарса илӗ: хресҫен патшалӑхран хӑйне мӗн кирлине илӗ, ун вырӑнне патшалӑха ытлашши тыррине парӗ. Ун ҫухне пасар та кирлӗ пулмӗ, пасарпа пӗрле спекуҷатси те пӗтсе ларӗ.

## ОГЛАВЛЕНИЕ.


*Стр.*

1) Капиталисăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2) Классем çапăçни. Парттисем . . . . . . . . . . . . . . 9
3) Империалисмпа сотсиалисм революутсийĕ . . . . . . . . 14
4) Коммунисăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
5) Мăлтавхи Интернатсионал . . . . . . . . . . . . . . . 19
6) Раççейре революутсишĕн çапăçни . . . . . . . . . . . 22
7) Р. К. П. (полушевиксен) историйĕ . . . . . . . . . . 27
8) II-мĕшпе III мĕш Интернатсионал . . . . . . . . . . . 31
9) Пролеттариат тиктаттурипе Р. С. Ф. С. Р. . . . . . . 34
10) Прохсойуссемпе вĕсен ĕçĕсем . . . . . . . . . . . . 38
11) Канаш Раççейин екkономиккă политтикки . . . . . . . 41